ЮРИЙ ЯКОВЛЕВ

# ЕВА ЛИСИНА

## ПУЛТАРУ ТĔНЧИ

Шупашкар
2012

ББК
УДК

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн*
*Ăслăлăх канашĕ йышăннипе пичетленет*

Ăслăлăх редакторĕ
**В.В. Никифорова**

Рецензент
**О.Н. Терентьева**

**Яковлев Ю.В.**
**Ева Лисина: пултару тĕнчи.** — Шупашкар, 2012. — 80 с.: ил.

Ева Лисина витĕр курăнакан стильпе çырать. Унăн илемлĕ тĕнчи çиелтен пăхма ансат. Ансат япалана ăнланасси нуша тесе ахаль каламан. Тĕпчев ĕçĕ Лисина ансатлăхĕн вăртăнне, илемлĕ техĕмне вулакан патне çитерме ăнтăлать, çул-йĕр шырать.

Кĕнеке хальхи литературăпа кăсăкланакансемшĕн усăллă пулĕ.

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2012

*Автор пурнăçа чăн-чăн ăста художник куçĕпе сăнлать. ...Автор сăнлакан тĕнчери кашни япалана пурнăçри пек туятăн, шăрша сисетĕн, çутта куратăн, сасса илтетĕн. Произведени малтан пуçласа вĕçне çитиех çĕнĕлле те хăйне евĕрлĕ сăнлăхсемпе пуян. Вĕсем вулакана чăн-чăн чĕрĕ пурнăçа çавăтса кĕреççĕ.*

***Юрий Скворцов***

*Автор, юмахри асамçă пек, кирек мĕн çинчен çырсан та ăна чĕрĕлĕх шывĕ сĕрнĕ евĕр чĕртсе тăратать. Тепĕр чухне самантлăха çеç вĕлтлетсе иртет çын (лаша е тата мĕн те пулин), вăл та чĕрĕ! Автор искусствăн тĕп законне лайăх пĕлет: каласа памасть, тăршшĕпех кăтартать, кăтартать. ...Кĕнекене тытатăн та, пĕрремĕш йĕркеренех сана уçă сывлăш вăркăшĕ пырса çапать.*

***Хветĕр Уяр***



**Портрет Евы Лисиной.**
**А. Зверев.**

# ÇЫРАВÇĂ ШĂПИ

## ШАНЧĂК ПУРРИСЕМ – ТЕЛЕЙЛĔ

Хĕрарăм çыравçă... Йывăр та тивлетлĕ унăн шăпи. Ева Николаевна Лисина (1939 ç.ç.) – 7 кĕнеке авторĕ. Унăн кашни кĕнекинчех тĕпре – ача сăнарĕ, кашни хайлавĕнче тенĕ пекех – чун ыратăвĕ. Чăваш литературинче хĕрача чунне Лисина пек витĕр куракан, ун черченне витĕмлĕ палăртакан сайра. Черченлĕхпе пĕрлех унăн сăнарĕсем чун туйăмĕпе вăйлă. Тĕнче синкерне, вĕçĕмсĕр ыратăвне тасалăхпа, çынлăхлă пултарупа тавăрать çыравçă. Унăн «Хĕле кĕрес умĕн» кĕнеки ку тĕлĕшĕнчен чи пĕлтерĕшли. Вăл чăннипех те чăвашшăн ĕмĕрсем валли.

Лисина çырнисене тĕпчевшĕн мар, ытларах хамшăн вулатăп. Унăн илем тĕнчи – уйрăмах калавсенчи – ман чуна кĕрсе вырнаçнă, ман туйăм-сисĕме пуянлатнă, эп хам сĕмленекен хăш-пĕр япаласене ячĕсемпе каланă. Çеçкисенчен çаралса юлнă çĕмĕрт туратти-и, хир варринчи пĕччен йывăç-и, пĕчĕк хĕрача-и – вĕсем кĕтмен çĕртенех Лисина хайлавĕсене аса илтереççĕ. Чăн искусствăн тĕллевĕ, тепĕр тесен, çакă пулмалла та ĕнтĕ – тĕнче умне тухасси мар...

«Шанчăк пуррисем – телейлĕ», – тенĕ Çеçпĕл Мишши[1]. «Хурăç шанчăк» тупма, чăнласа ĕненме, ĕмĕте виличчен савма мĕн тери йывăр пулнине поэт хăйĕн пултарулăхĕпе те, шăпипе те кăтартса панă. Çавăнпа вăл каланинче темле анлăрах пĕлтерĕш, ыттисемшĕн те тĕрĕс чăнлăх куратăн.

«Шанчăк пуррисем – телейлĕ», «Вăхăт çитĕ, вăхăт çитĕ!» – пĕрре çеç мар çĕклентернĕ пулĕ Ева Лисина чунне те çак сă-

махсем. Пысăк виçепе виçмелли çичĕ кĕнеке кăларма сахал мар чăтăмлăх та, тăрăшулăх та кирлĕ. Уйрăмах эс çырнине çине тăрсах асăрхаманçи тăваççĕ пулсан. Ак «Хĕле кĕрес умĕн» кĕнеке 1974 çулта тухнă, анчах ун пирки 90-мĕш çулсемчченех темшĕн хурласа та, ырласа та никам пĕр сăмах çырман. Арçын çыравçăшăн ку, тен, темех мар пулĕ, анчах хĕрарăмшăн – кăмăла хуçакан япала. Енчен те хĕрарăм хĕрарăмах пулсан, «Арçын Хĕветурана» тухман пулсан, вăл хăйĕн çине пăхтарасшăн. Ку тĕлĕшĕнчен вăл ача-пăчапа пĕр пекрех. Ева Лисина кун пирки ак çапла каланăччĕ: «Эп – тӳсĕмлĕ этем, çапах та хăш чухне çав «Хĕле кĕрес умĕн» кĕнекене пачах та асăрхаманни тĕлĕнтеретчĕ (мана хама ним те кирлĕ мар, анчах литературăна кирлĕ мар-и ара?)».

Кӳренни ун пурпĕрех çук. Кĕнекесене кăларма пулăшнă, хăй вăхăтĕнче ыр сăмахпа хавхалантарнă çынсене асрах тытать вăл: «Ют редактор аллине лекнĕ пулсан ман пĕр кĕнеке те тухмастчĕ – ман Геннадий Юмарта, Олимпиада Таллерована, Аристарх Дмитриева тав тумалла»; «Хама Илпек, Уяр, Артемьев, Таллеров пиччемсем мĕн каланине чĕре тĕпĕнчех усратăп. Вĕсен сăмахĕсем маншăн – чăн-чăн чăвашлăх (ырă сунни, ăшă кăмăлпа, çемçен каласа ăс пани, пулăшма-хӳтĕлеме тăрăшни). Эп ун пеккине нихçан та манмастăп».

Шанчăк пуррисем – телейлĕ. ...Шанма пĕлекен Ева Лисинăшăн та телей алăкĕ уçăлчĕ темелле: вăл Европăна, тĕнчене тухрĕ. «Нимĕç хумĕ» радиостанци ирттерекен конкурсра 1990–1991 çулсемшĕн паракан премие илме тивĕçлĕ пулчĕ: 1680 хайлав хушшинче унăн «Çăкăр чĕлли» калавĕ мала тухнă. Çав конкурса хутшăннă ытти чи лайăх произведенисемпе пĕрле «Çăкăр чĕлли» нимĕçле пичетленсе тухнă, кĕнекен ятне те çав калав ячĕпех панă. «Çăкăр чĕлли» тăрăх çырнă радиопьеса «Нимĕç хумĕпе» кăна мар, Хĕвеланăç Германири радиопа та эфира тухнă, пĕтĕм тĕнчери нимĕçле радио итлекенсемшĕн темиçе хут янăранă. Çак пьесăна Европăри ытти радиостанцисем те туяннă.

Е. Лисина пурнăçĕнче çутă, ăнăçлă тапхăр 1987 çулта пуçланнăччĕ. Ун чухне вăл ачасем валли кăларнă чи лайăх кĕнекесен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш конкурсĕнче «Хупах хăлха Илюк» повеçшĕн премии илме тивĕçлĕ пулнă. Халĕ нимĕçсем Лисинăна хăйсем патне пурăнма чĕнеççĕ, ун хайлавĕсем тăрăх радиопьесăсем, киносценарисем хатĕрлеççĕ. Ева Николаевна çырнисене вуншар ют чĕлхепе пичетлесе кăларасшăн.

Кăвак хуппи уçăлчĕ тейĕн Лисинăшăн: чикĕ леш енче кăна мар, Раççейре те, Чăвашра та унăн ячĕ чапа туха пуçларĕ. «Çăкăр чĕлли» калав вырăс халăх шăпишĕн чунтан пăшăрханакан «Литературная Россия» хаçатра кун çути курнă. Калавĕ «Юлашки вăхăтри чи лайăх материал» текен хисеп хăми çинче çакăнса тăнă (редакци коридорĕнче). Унта пыра-пыра темĕн чухлĕ çын алă пуснă. «Вĕçекен кӳлĕ» калавшăн вара Лисина 1992 çулта хаçат премине тивĕçнĕ.

Паян Лисина çинчен Чăвашра та сахал мар пичетлеççĕ, унтан интервью илеççĕ, унпа канашлаççĕ.

Çапах Ева Лисина вăхăчĕ çитрĕ теме иртерех-ха. Ăнланасса ăнланма пуçларăмăр, анчах хальлĕхе пĕтĕмпех мар. Ак хамах илем, 1989 çултанпа тĕпчетĕп ун пултарăвне, çаплипех унăн пĕрре пăхма ансат илемне ăсласа илейместĕп.

## КАМ-ШИ ВĂЛ – ТĔНЧЕ ХУÇИ?..

Хĕрарăм ăсталанă хайлавсем арçын çырнисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ши? Çак ыйту пĕрре мар хускатнă ман ăса. Анна Ахматова, Марина Цветаева, Юнна Мориц... Нумай-ха вĕсем, эпĕ чĕрене хунă ятсем.

Тем тĕрлĕ намăс пуль, анчах çакна та каламаллах: малтан, шкул тата вуз вĕрентекенĕсен ирĕкне пĕлсе чун мулне пуçтарнă чух, чăваш хĕрарăм çыравçăсен пĕр ячĕ те асăннă ятсен яхăнне çывхарман.

Вăл малтан пулнă-ха, халĕ те чăвашăн сăпай илемĕ сахал уçăлнă-и маншăн? Апла пулсан та тăван литература кĕрекинче хĕрарăмсем валли те вырăн пурри пирки пĕртте иккĕленместĕп. Чăвашăн мăнаçлăхĕ малалла та хальхи пекех ӳссе пырсан, эпир хамăра хамăр ытти халăхсенчен нимпе те катăк маррине астуса тăрсан, Трубина Мархви, Ираида Петрова, Ева Лисина, Любовь Мартьянова тата ытти хĕрарăм çыравçăпоэтсем нумай-нумай вулакана туртĕç-ха хăйсем патне, чăваш сăнне çухатма пуçланисене те, тен, чăваш амăшĕн чун ăшшине, унăн савăнăçĕпе асапне  аса илтерсе çавăрĕç кил енне. Хĕрарăмсен чунтан-вартан каланă сăмахне итленĕ хыççăн канăçсăр пултăрччĕ вулакана, вĕсен сăмахĕ вăй патăрччĕ мăкалма пуçланă чуна туптама, ют çын ыратăвне те хăвăн пек йышăнма. Хĕрарăм мар пулсан, кам-ха вĕрентĕ пире этеме, мĕнпур чĕрĕ чуна тата çут çанталăка шеллеме?..

Ева Лисинăн «Хĕле кĕрес умĕн» ятлă çӳхе кĕнекине эпĕ 1989 çулта илсе вуланăччĕ. Ун чухне эпĕ, Чăваш патшалăх университечĕн филологи факультетне нумай пулмасть пĕтернĕскер, тĕнче классикинчен çулсерен çĕршер кĕнеке «çăтнине» пула илемлĕ литература вуласа тĕлĕнессине манма та пуçланăччĕ ĕнтĕ. Ку кĕнеке вара тĕлĕнтерчĕ çеç мар, вăл мана тыткăна илчĕ. Астумастăп унтанпа ăна миçе хут вуланине те. Анчах кашни вуламассерен унăн кăсăкĕ маншăн ӳссе те ӳссе пырать.

Кĕнекери калавсем сăвă пек вуланаççĕ. Ултă калав – сăвăсен ярăмĕ. Пĕр çĕре кăшăлласа тăраканни – хĕрарăм çыравçă чунĕ.

Хĕрарăма ытларах антăхтарса яракан, чĕрене çуракан туйăмсем çывăх. Чи хитри, ялтăркки, курнăççи тăрăнать унăн куçне. Арçыншăн тен, çакă ниме тăман вак-тĕвек çеç, аса-илӳ çăмхине сӳтсе ямалли япаласем, хĕрарăмшăн вара – чĕре рехечĕ.

Пур «ăпăр-тапăршăн» çунни пурнăçра, аптăратса та çитерĕ, анчах ӳнер ĕçĕнче вăл питĕ вырăнлă. Е. Лисина çак çут çанталăк панă майпа ӳнер йĕркине (саккунне) пĕлсе усă курать. Ытлашши пайрăмсем, вулакан шухăшне сирсе яраканнисем, унăн хайлавĕсенче çук. Усă куракан илемлĕх мелĕсем пурте килĕшӳллĕ те пĕр тĕллевлĕ. Пысăк та нумай пĕлтерĕшлĕ пайрăмсем калавсенче çăтă-çăтă вырнаçнă пулсан та, вуласа тухмасăр унăн кĕнекине алăран ямастăн. Вулакана илĕртсе пыраканни, шухăш çăралăхне саплаштараканни кунта – туйăм. Ку ĕнтĕ каллех аслă çут çанталăк парни. Хĕрарăм ăса мар, ытларах кăмăл-туйăма пăхăнса пурăнать. Çавăнпа ку пуянлăха хута ярасси хĕрарăмшăн ним те мар. Хĕрарăмшăн мĕн ал çемми, арçын çыравçăшăн çавă тертлĕ пулма пултарать: туйăмсен хĕрӳлĕхĕпе хĕрарăмăнне çитме унăн тирĕнчен тухасла карăнса, туртăнса çырма тивет. Юри вуласа пăхăр-ха Б. Чиндыковăн туйăм çине пусăмласа çырнине. Калăпăр, «Элчел» ятлă «шухăшсен авăрнех». Хайлавăн кĕвви-çемми пур, туйăмĕ те пур темелле, анчах пурпĕрех de naturel мар: ытлашши «çĕпрелентерсе» янă.

Е. Лисина калавĕсене вуласа тухнă хыççăн нумайччен пайрăмсен вăрттăн пĕлтерĕшĕ пирки шутласа çӳретĕн. Мĕншĕн «Элекçей» калаври Елиспа чунне кашни хĕрарăм хыççăн яракан Элекçей пӳлĕмсен чиккинче тĕл пулаççĕ-ха? Мĕншĕн вĕсем

тăтăшах вăрманта çӳреççĕ? Мĕне пĕлтерет-ши Елис çиекен çырласен пĕр енĕ хĕрлĕ, тепĕр енĕ шурă пулни? (Çаплалла майлă маншăн Андрей Тарковский киноӳкерчĕкĕсем. Мĕншĕн-ха, калăпăр, «Сталкерти» пысăк хура йытта çиме аш мар, сĕт параççĕ?..)

Кĕнекийĕ 1974 çултах тухнă, анчах критиксен куçĕ тĕлне пулман. Куççăр çын хăй умĕнчи чашăкĕ патне те çулне тупаймасть тенешкел, критика лавне туртакансем те ун чухне «суккăр» пулнă-ши?.. Ева Лисина пирки çеç мар, Юрий Скворцов, Ваçлей Игнатьев çинчен çырнисем те курăнсах кайман.

«Хĕле кĕрес умĕн» кĕнеке чуна канăç паракан йышши мар. Тем пек йывăр çырлахма телейсĕр шăпапа, тавăрми çухату курнă çынна тата та йывăртарах.

Шурăмпуç килет шуралса,
Санăн сăну çук-çке.
Чĕкеç килĕ чĕвĕлтетсе,
Санăн чĕлхӳ çук-çке.
Ир тăрсан та, каç выртсан та
Сан вырăну пушă-çке[2].

Вилнĕ çынна асăнса çапла юрланă халăхăмăрта. Ева Лисина калавĕсем çавăн пек хурлăхлă. Акă Павăл – сăнарсенчен пĕри – чирлĕ амăшĕн чунĕ тухнине сиссе кăмăлĕпе епле хуçăлать:

...Тăнлавĕсене икĕ аллипе хĕстерсе пушă та шурă хирте пĕр çын макăрать.

"Ан кай, ан кай, хĕвел..."

Хĕвел – анать. Анать вăл – аслă уяв вĕçĕ пек чуна ыраттарса.

"Хĕвелĕм, ан кай..."

Пурнăç пĕтмĕ-ха...

Анчах та чуна кĕрсе юлнă хĕвел сăнарĕ хăвна ĕмĕрлĕхех тăлăх туйтарса вăратĕ те тунсăха, яланах, яланах самантлăха та пулин курас килĕ çутă хĕвеле...

"Аслă хĕвел! Сар хĕвел! Сансăр мĕнле пурăнас пулĕ?.."[3]

Чунтан юратнă çыннăмăрăн çăлтăрĕ аннă самантра çапла тилмĕрмест-ши пирĕнтен кашни?.. Чун сисет тетпĕр, вăл хуйхăрать, йĕрет, ыратать... Тен тата, чун... курать те? Тен, Павăл чунĕ хĕвел анса ларнине мар, амăшĕн чунĕ çут тĕнчерен уйрăлса леш тĕнчене куçнине курса тăрать?..

«Юратнă çын çĕр çинче çук пулсан, таврари илем ырату кӳрет». Çапла вăл савнине вăрçăра çухатнă Хĕветурашăн та, кашни чĕрĕ чуншăн та... Ун чух тĕнче те пушшăн туйăнать. Çын вилсен кăна-и вара пушăлăх? Улталаса пăрахса кайсан та чун тапранас пек ыратмалла. Пысăккин кăна мар, пĕчĕкçеç ачан та... «Çăлтăрсем курăнман каç» калаври виçĕ çулхи Катьăн пек:

«Катя хăйăлтатса ярать.

— Пăрахса кайнă вăл! Пăрахса кайнă вăл!

Пăр çапса хăварнă сенкер чечек пек, куçне аллипе хупласа вĕриленсе кайнă пуçне кукамăш чĕрçи ăшне пырса чикет.

— Куками... Куками... Пăрахса кайнă вăл...»[4]

Пуç çине ӳкнĕ хуйхă хыççăн пулăн-ши эсĕ хăçан та пулсан унчченхи пек, хăвна телейлĕ туйнă чухнехи пек? Е хуйхă чĕрӳне ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçĕ-ши?.. Темле пулсан та тĕнчене сан çав ырату, çав нихçан пирченми чĕре суранĕ витĕрех курмалла. Пĕчĕк чух Катя аллине тăсса чăн тӳпери çăлтăра: «Кил кунта!» — теетчĕ, ашшĕ пăрахса кайнă хыççăн вара çăлтăрсене те, çут çанталăка та хурлăх сăнĕ çапнă:

«Каç усă. Тротуара тасатса тимĕр кĕреçепе хăйăрттарни илтĕнет. Хунарсен айĕнче туратсем ялтăртатаççĕ. Чĕлтĕрти пăра çĕмĕрсе шыв шăнкăртатать. Йăм кăвак тӳпере çăлтăрсем чăлтăртатаççĕ...»[5]

«Çĕр çинчех тамăкпа çăтмах». Мĕншĕн-ха пурнăç тепришĕн вĕçĕмсĕр асаплану, çăтмахĕ вара, ăнсăртран пулнăскер, пĕр самантлăха? «Арçын Хĕветурара» икĕ савнă чун ыран уйрăлмалла тенĕ каç пĕрлешеççĕ. Анчах савăшу хĕр ĕмĕрне татмасть — Элекçейĕн ыранах вăрçа тухса каймалла. Юлатчĕ те-и, тен, «асăнмалăх чуна ирĕлтерекен ытам, кĕленче пек таса ӳте, çивĕтсен ялтравне тӳрре кăларакан ытам»? Юлатчĕ пуль, юрату çепĕç те илемлĕ, савнине телей сунни çеç пулман пулсан...

«Сивĕ ир» калаври Анюкпа Мишшашăн телей тăршшĕ — пĕр каç, аçа-çиçĕмлĕ çумăр пĕрлехи телее кĕскетнĕ каç:

— Пĕлетĕн-и, аннӳ чĕнмесен те эпир паян пĕрех тĕл пулаттăмăр, — терĕ Мишша мана çупăрласа. — Эсĕ... Эсĕ манăн Анюк пулăн-ши?

Пите алăсемпе хупларăм: мĕнешкел телей иккен хĕр пулни! Мишша хăй сăмахĕсенчен хăй хăраса кайрĕ.

— Çук, çук, халь мар, хăçан та пулин... — терĕ вăл ачаш та айăплă сасăпа, унтан пуçран шуса аннă пурçăн тутăра салтса çыхтарчĕ[6].

Вилĕм куçа курăнса килмест, анчах пуçа мĕн çырнине чун кăшт та пулин туятех. Шăпаран иртеймĕн. Апла пулсан та юратнă çын телейĕшĕн чĕрепе ӳт-пӳ ыйтнине пусарма пулать. «Савăш куркине» Элексей те, Мишша та тĕппипе ĕçсе яманнинче – этеме тивĕçлĕ мăнаçлăх.

«Тĕнче хуçи – сехмет». Турри пуçа ыррине çырмасан ирĕксĕрех çапла шутлăн.

«Хĕветура йынăшса ячĕ, хăйсен кил картине чупса кĕчĕ, лупас хыçĕнчи утă çине тӳнчĕ те шалтан хăрушшăн капланса килекен сасса путарасшăн çăварне утă персе чикрĕ...»[7] Пурнан пурнăç çынна çав таран асаплантарать пулсан, кам-ши вăл – тĕнче хуçи?..

Тен, пурнăçăн ырри те, усалĕ те пур? «Масар çумĕпе» калавра чĕвĕл чĕлхеллĕ хĕрачи патне васкакан хĕрарăма усал аллине памасть-çке Турă. Ăна мăшкăллама тăнă икĕ шуйттан чуринчен пĕри усала пуçĕпех парăнман иккен. Хĕрарăм хăйĕн пĕчĕк хĕрĕ çинчен асăнни, хăй те пĕчĕкçеççĕ хĕрача пек пулăшу ыйтса йăлăнни çавăн чунне çемçетет, хăйĕн «юлташĕпе» хаяр, иккĕшĕнчен пĕрин вилĕмĕпе татăлмалли кĕрешĕве кĕме вăй парать.

Ача-пăча, черченскер, этемлĕхĕн ачаш чунĕ пулмалли çинчен сĕмленнĕ мĕн ĕмĕрех ăсчахсем. Хĕрарăм та чунĕпе хĕрача пекех, çавăнпа ку шухăш вĕсемшĕн те тĕрĕс. Ачапа хĕрарăм çепĕçлĕхĕпе черченлĕхĕ, тен, чăнах та, «Масар çумĕпе» калаври усал хыççăн кайнă çынна çех мар, пĕтĕм этемлĕхе Турă енне çавăрма пулăшĕ?

Ф.М. Достоевский Соня Мармеладова сăнарне чунĕ ыйтнă пек калăплас шутпа час-часах «вăл ача пек» тет. Аслă çыравçă мĕн каланине (Достоевский каласа хăварнипе çырлахать, ача тасалăхне кăтартса пама унăн чун мехелĕ çитеймен теççĕ) илем-сăнарлă ӳкернине эпĕ ытти ăстасенче кăлăхах шырарăм. Хама тивĕçтермелле ӳкернĕ черченлĕхе ăнлама Ева Лисина çырнисенче кăна май килчĕ.

Усал тĕнче тĕреклĕ çыннăн пурнăçне çăмăллăнах хуçать те, мĕнле-ши пĕчĕк ача пуçĕ çине хуйхă йăтăнса ансан? Айван ăслă та ансат туйăмсемпе пурăнать-ши пĕчĕк ача, е унăн чунĕ те хăрушла ыратма пултарать?

Тĕнчен асар-писерĕ умĕнче, «халь çеç вĕçме вĕренекен кайăк чĕппи лăпăстатнă пек, аллисемпе мелсĕр хăлаçланакан, пичĕ-куçĕпе çут тĕнчен таса тĕсĕсене аса илтерекен» хĕрача

пирте мĕнле туйăм вăратма пултарасси паллă ĕнтĕ. Кам хӳтĕлес темĕ çак ачашлăхпа тасалăха?

«Чуна хурлăх пусса пырать. “Ах, Турă! — шухăшлатăп эпĕ. — Районĕ ăçтарах-ши? Хăш çулпа каймалла-ши? Каç пуличчен çаврăнса килейĕпĕр-ши?” <...>Пĕлмен-курман çĕре тухма йывăр, вырăнтан тапраннă куççуль пуçа хĕсет»[8]. Мĕскер темелле-ши çавăн пек çыру мелне, çырнинче çын чунĕ витĕр курăнать пулсан?

> Пире икĕ чĕл çăкăр виççе параççĕ. Чĕлĕсене асăрхануллăн алă тупанĕ çине хуратăп. Çăкăрĕ ăшă. Ман çăвара сĕлеке тулать. Çĕнĕ уйăх пек икĕ чĕлле халь çиес марччĕ. Ман ĕмĕт — юмах пек: киле кайнă чух хирте канма ларăпăр та пĕр чĕллине çурмаран хуçăпăр, никамран вăтанмасăр вăраххăн чăмлăпăр, ĕмĕпĕр... Тепĕр чĕллине киле илсе çитересчĕ... Килте виçĕ татăк тăвăпăр — каллех çăкăр çимелле пулать![9]

«Çăкăр чĕлли» калав вунă çулхи Ельăн çак ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ татăлни çинчен. Пĕчĕк хĕрачан чунĕ кăшкăрасла ыратни пирки вуланă хыççăн шухăша каятăн: таса чунăн асапĕ çинче тивĕç-ши эпир хамăр хуйхă-майхăпа Турă умĕнче мĕкĕлтетме, унăн асапне кура-тăра хамăр канăççăрланни çинчен нăйăлтатма?..

Е хăйĕн пурнăçĕнче чĕр тамăкри пек çунаканăн чĕри кăна çын хурлăхĕпе тулма пултарать-ши?.. Ан тив, тепри, «Арçын Хĕветурари» «чипер инке» пекки, «уçă ир чечек çине тумлакан сивĕ тумлам пек хурлăхлă çемĕ» те итлетĕр, анчах вăл кĕрхи çара турат çинчи пĕччен çулçă пек нихçан та çапкаланман пулсан, нихçан та эсрелĕн шульăшне çывăхра туйман пулсан, тӳпе пек аслă çемĕ те унăн чĕрине çу кăна хывĕ.

«Арçын Хĕветурари» мĕскĕн Ленукăн хуйхине пĕр Хĕветура кăна — çынсен куçĕнче ӳкнĕ тĕнчери тепĕр тăлăх турат — пусарма пултармалла.

Çыравçă çут тĕнчере хăйне темле тăлăххăн туять. Кашни калавĕ унăн çак туйăмпа шăварăннă: «Пĕр тантăш пулсан та, темĕншĕн вĕсем (хĕрачасем. — *Ю.Я.*) манран чылай пĕчĕкрех те кĕçĕнрех туйăнчĕç, вĕсен вăййи те айван ав. Тăр пĕччен эпĕ. Никама та кирлĕ мар эпĕ. Тепĕр хут ĕсĕклесе ятăм»[10].

Çут çанталăкра та, çăлтăрлă тӳпере те çав ĕнĕрĕвех иккен. Çумăр çунипе тумла тăкăннин вăрттăн пĕлтерĕшĕ те çавăнтах. Тимлесе пăхăр-ха чунне усала сутнă çын Хĕветуран хĕр чысне

таптанă хыççăнхи çут çанталăк сăнне: «Лăпсăркка пĕчĕк тĕм хĕрлĕ çырлисем çинче шăрçаланса тăракан тумлама тумлатса хумханчĕ, чĕтренчĕ...»[11] Чечек пек чечен хĕрĕн усал тĕнче ури айĕнче таптаннă шăпинчен хурлăхлăраххи мĕн пур-ши?

Хампа хам хуçа тенĕ шухăш та темшĕн хурлăхлă кĕвĕпе вĕçленет. «Элекçей» калаври Елис чĕри çĕр çинче хуçа пек пурăнакан «хĕвел сехметне» суйлать. Суйлать хăйшĕн телейсĕр шăпине. Енчен те Элекçее курман пулсан вăл телейлĕ пулĕччĕ-ши?..

«Астăватăн-и, вунвиççĕре-вунтăваттăра чух пĕр-пĕр çу каçĕ алкум картлашки çине тухса ларатăн: ăшă, Хур кайăк çулĕ шуралса-çуталса выртать, кас вĕçĕнче юрлани илтĕнет. Сана никам та кӳрентермен-ха, ятламан, çавах та темĕншĕн çав тери йывăр, тунсăхлă, йĕрес килет»[12].

Çакă-ши тĕнче хуçи? Хĕрачан сисĕмлĕ чунĕ çинчен, хăй мар пулсан, тĕрĕссине кам калĕ? Таса чун йăнăшмасть пулсан, çĕр çинчи пурнăç – çăмăл мар. Çакна уçса парать те ĕнтĕ Ева Лисина хăйĕн калавĕсенче. Анчах ун чăнлăхĕ чуна тăвăнтармасть, вăл пире пурнăçра чун тасалăхĕшĕн пурăнма чĕнет.

**Литература**


[1] *Çеçпĕл М.* Çырнисен пуххи. Шупашкар, 1989. 224 с.

[2] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 4 т. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1979. 266 с.

[3] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. 32 с.

[4] Çавăнтах. 53 с.

[5] Çавăнтах. 55 с.

[6] Çавăнтах. 16 с.

[7] Çавăнтах. 72 с.

[8] Çавăнтах. 33–34 с.

[9] Çавăнтах. 40 с.

[10] Çавăнтах. 7 с.

[11] Çавăнтах. 70 с.

[12] Çавăнтах. 108 с.

# ЕВА ЛИСИНĂН ИЛЕМЛĔ ТĔНЧИН ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔХĔ

«Искусство вăл — туйса пĕлмелли, туйăмпа ăнланмалли тĕнче», — тенĕ Виктор Шкловский[1]. Е. Лисина калавĕсем — çавăн йышши тĕнче. Унăн хайлавĕсене искусствăн ытти тĕсĕсемпе танлаштарас пулсан, вĕсем ăс-тăна ĕçлеттерекен, ăс-тăн урлă витерекен скульптурăпа сăрă искусствине мар, музыкăна — чăваш кĕвĕ-юррине — çывăх пулни курăнать. Тăван халăх юррисем хурлăхлă, тен, хуйхăллă та. Е. Лисина калавĕсем вĕсемпе пĕр çемĕллĕ.

Жанр тĕлĕшĕнчен пăхсан, калав ахаль те кăмăл-туйăмпа повеçпе романран ытларах пĕвеннĕ (сăвăпа калав ку тĕлĕшрен пĕр картри япаласем). Е. Лисина стилĕ хурлăхпа тулнă лиризмпа шăварăннă[2]. Çыравçă калавсен поэтикине чун ыратăвĕ çинче хывать.

«Час-часах, уйрăмах çуркунне, эпĕ пĕр çынна аса илетĕп», — çапла пуçланать «Сивĕ ир» калав[3]. Анюк чун савнине — Вырăс Мишшине — аса илет. Ача чухне «пĕрле çапкалашса ӳсни», кайран, çитĕнерехпе, кăмăл туртни юратăва куçни, вĕсем хушшинчи çыхăну сасартăк тĕлĕнмелле татăлни, Мишша çамрăклах çĕре кĕни чĕррĕн куç умне тухса тăрать. Калав мĕнпе вĕçленесси паллă мар, анчах хурлăх автор чĕрине пăчăртани пĕрремĕш йĕркеренех сисĕнет. Çакă уйрăмах калу (повествовани) кĕввинче палăрать.

Е. Лисина калăпланă сăнарсем хăйсен хăш-пĕр енĕсемпе Ф. Достоевскипе Л. Андреевăн геройĕсене аса илтереççĕ[4]. Акă, калăпăр, Анюкпа Мишша хушшинчи çыхăнусем пуçла-

мăшĕнчен тытăнса вĕçне çитиччenех тĕлĕнтермĕшлĕ. «Тĕлĕнтеретчĕ вăл: хăй мана кун çути кăтартмастчĕ, ыттисене вара ман çывăха та ямастчĕ»[5], — аса илет автор-калуçă. Мишша хăтланăшĕсенче логика, килĕшӳлĕх çук. Вăл мĕн те пулин тунă чухне Анюк кĕтнĕ пек мар, пачах кутăнла пулса тухать. Характерăн çак уйрăмлăхĕ, тен, Мишша вилĕмпе юнашар пулнинчен те (унăн юн тымарĕ çумне снаряд ванчăкĕ вырнаçнă) килет. Ытти сăнарсем те «вăтам» пурнăçпа пурăнни çук. Ку калаври Анюкăн туйăмĕсем ак ытларах чух аффектлă — унăн чунĕ ăша тапратмалла ыратма пултарать, уйрăмах хăй «хупăлчине» пытаннă самантсенче. Сăмахран: «...Эпĕ киле каймарăм. Лаша вити хыçĕнче тислĕке пула çынран çӳллĕ ашкăрса ӳснĕ хупах ăшне кĕрсе лартăм. Куççуль шăпăртатать, умри мăянпа курак çырли çине тумлать. <...> Тăр пĕччен эпĕ. Никама та кирлĕ мар эпĕ. Тепĕр хут ĕсĕклесе ятăм»[6].

Е. Лисина калавĕсенче символла сăнарсем пайтах (сăнар кунта анлă пĕлтерĕшлĕ). Çакă калавсене «çăра», пысăк шухăшлă тăвать. «Сивĕ ир» калаври символла пайрăмсене илес пулсан, вĕсем нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине асăрхаса хăвармалла. Сăмахран, Анюк ашшĕсемпе вутă хатĕрлеме килсен Мишша картунри пĕтĕм савăт-сапана çурăлнă çĕмĕрт турачĕсене лартса тултарнă. «Тул çутăла пуçланă та, сивĕ ир çинчи шурă çеçкесем кун çутине хăнăхман куççене çĕçĕ пек касаççĕ. Пӳлĕмри сывлăш çăра эрех пек...»[7] Çĕмĕрт, тен, кунта юратун асапĕпе техĕмне палăртать, çав вăхăтрах вăл ĕç-пуçсем малалла мĕнле аталанассине те сăлтавлать, «Мишша шăпах çурăлса çитнĕ çĕмĕрте хуçса килнĕ пулас, çеçкесем тепĕр куннех тăкăнма пуçларĕç. Пĕтĕм япаласене, урайне, вырăна шурă çеçке хупларĕ»[8]. Çара туратсем, тăкăннă шурă çеçкесем кунта, тен, вилĕме сăнарлаççĕ?

Ева Лисинăн калавĕсем философиллĕ, анчах абстрактлă, ятсăр философи çук вĕсенче — пур шухăш-сăнар, шухăшкăмăл, шухăш-ӳкерчĕк т.ыт.те. Сăнаса пăхар-ха «Сивĕ ир» калав вĕçне: «... Вăрман хĕрринчи масар çинче çуркунне курăк шăтать, çеçке çурăлать. Мишша шăтăкĕ тавра ӳснĕ шап-шур çĕр çырли çеçки тимĕр кĕреçепе касăлчĕ, ешĕл çулçă сивĕ тăпрапа тăм айне пулса юлчĕ...»[9] Мĕне пĕлтерет-ши кунта символла пайрăм? Ева Лисинăн символла сăнарĕсене текстăн уйрăм сыпăкĕ тăрăх кăна ăнланма çук, унăн тупсăмне сăнарăн «чунне» кĕрсе кăна пĕлме пулать. Пĕрре пăхсан çĕр çырли

çеçки Мишшан шăпине символлать пек, анчах тĕплĕнрех шутласан ку сăнарăн пĕлтерĕшĕ урăхларах пулнине курма пулать. Çут çанталăк йĕркийĕ тăрăх çеçке çурăлнă хыççăн çырла пулмалла, анчах кунта çĕр çырли çеçки касăлать... Тупсăмĕ Анюкăн юратăвĕпе çыхăннă пулас, мĕншĕн тесен «çырлаллă» вырăнсем ку калавра та, «Элекçей» калавра та пур, унта вĕсем юратăвăн телейлĕ саманчĕсене сăнарлаççĕ. Мишша вилет, анчах ăна Анюк юратма пăрахмасть, Анюк туйăмĕ кашни çуркунне çĕр çырли çеçки пек çурăлать те шăпан «тимĕр кĕреçипе» касăлать, «сивĕ тăпрапа хĕрлĕ тăм айне пулса юлать».

Çапла вара контекстра пăхсан кăна сăнар пĕлтерĕшне тĕрĕс те туллин уçса пама пулать.

«Хĕле кĕрес умĕн» калав çӳлерех асăннă калаври пек экзистенциллĕ ӳкерчĕкпе вĕçленет: «...Павăл шухăшĕсем каллех пăтрашса кайрĕç. Вăл хĕвел çинчен шухăшлама пуçларĕ. Учĕнăйсем каланă тăрăх, хăçан та пулин сӳнмелле-мĕн çак хĕвелĕн.

Павăл пĕртен-пĕр япалана ăнланаймарĕ: чун-чĕрене савăнтараканскăр мĕнле пурăнмалла? Мĕнле вара вăл çуттипе ăшшине чĕптĕм хĕрхенмесĕр тăракан çут хĕвел сӳнме пултарать?

...Тăнлавĕсене икĕ аллипе хĕстерсе, пушă та шурă хирте пĕр çын макăрать.

“Ан кай, ан кай, хĕвел...”»[10].

Е. Лисинăн сăнарлăх тĕнчин никĕсĕнче — пурне те парăнтаракан пĕчченлĕх туйăмĕ. Илсе кăтартнă сыпăкăх ак космосла пессимизм витерет. Хĕвел — символла сăнар, вăл Павăл амăшне, Çинук аппана, символлать, анчах çак символăн тымарĕсем мĕн авалтанах килеççĕ. Кунта мифологизм та пур. Вăл герой тĕнчекурăмĕнче, унăн чун-чĕринче палăрать, анчах вăл хăш-пĕр чăваш писателĕсен хайлавĕсенчи «фольклорлă элементсем» пек çиелте выртмасть, вăл текстра шалта. Ăна ăнланса илме вулаканăн герой туйăмĕсене ăша хывмалла, мĕншĕн тесен философизмпа психологизм кунта тачă çыхăннă. «Хĕвел», «хĕвел çаврăнăш», «Хур кайăк çулĕ» тата ытти сăнарсем халăх тĕнчекурăмĕнче символсем пек йĕрленсе юлнă. «Сивĕ ир» калаври автор-калуçă Мишша амăшĕ, Маруç инке, ик хĕрача «хĕвел çаврăнăш çеçкисене чӳрече çумне çыпăçтарса пилĕк сарă хĕвел ӳкерни çинчен каласа паратчĕ» тесе пĕлтерет. Вĕсен çемйинче пиллĕкĕн пулнă. Вăрçăран упăшки

таврăнман, икĕ хĕрачи вăрçă пуçлансан вутран тухайман, Маруç инкепе Мишша кăна юлнă. Пилĕк «хĕвелтен» икĕ «хĕвел» юлать, анчах пĕрин, Мишшан, суран пур, çут тĕнчере вăл пурăнасси шанчăклă мар. Юлашкинчен вăл вилет. Халăх сăмахлăхĕнче пикене сар хĕвелпе танлаштарни час-часах тĕл пулать. Кунта чăвашсен мифологийĕпе те пĕрпеклĕх пурри паллă: чăвашсен шухăшлавĕпе, малтан виçĕ хĕвел пулнă[11], кайран вĕсенчен пĕри кăна юлнă. Çапла вара «Сивĕ ир» калав мифологиллĕ шухăшлав çинче хывăннă тесе те çирĕплетме пулать.

Çут çанталăк сăнарĕ те калаври ĕç-пуçа хутшăнать. Калăпăр, психологиллĕ пейзажпа çын чĕринчи кăмăл-туйăма уçса пама меллĕ. Акă «Хĕле кĕрес умĕн» калавра ăмăр çанталăк сăнĕ Павăлăн кăмăлĕпе пĕр евĕр, анчах ку калавра психологиллĕ параллельлĕх Павăлăн сăнарне кăна мар, калавăн тĕп шухăшне те илемлĕх мелĕсемпе палăртать[12]. Ку шухăш вăл — пурнăçпа вилĕм. Çавăнпа кунта калав ячĕ те метафора.

«Ир çитрĕ çак юр, çĕр те сивĕнсе çитейменччĕ, йывăçсем те çулçисене тăкса ĕлкĕреймерĕç», — çапла пуçланать калав. Çут çанталăк хĕлле вилет пулсан, кĕркунне вăл — ватлăх тапхăрĕ. Анчах хĕл ир ларнă. Çак Çинук инке вилĕмĕ вăхăтсăр килнине символлать. Ку калавра чун пурнăçне çут çанталăкпа ятарлă çыхăнтарни çук, вăл пытарăнчăк, ытларах ай шухăшра[13]. Тĕрĕссипе, кунта танлаштару тĕпре: «хĕле кĕрес умĕн» — Павăлăн амăшĕ вилес умĕн. Автор вулакана калун ытарлă пĕлтерĕшĕ пурри çинчен систерет. Акă, тĕслĕхрен: «Павăлăн пĕтĕм шухăш-туйăмĕ пăтранса кайрĕ, вăл пĕр урлă сăмах та калама пултараймарĕ, хуллен пĕшкĕнчĕ те амăшĕн **кĕрхи çăка çулçи пек аллине** хăй аллипе сĕртĕнсе илчĕ» (палăртни пирĕн. — *Ю.Я.*)[14].

Ева Лисина калавĕсем пĕрпĕтĕмлĕхпе палăрса тăраççĕ. Автор илемлĕх мелĕсемпе пурне те пĕр тĕвве пĕтĕçтерет.

Йывăр пурнăç килет «Хĕле ларас умĕн» калаври Çинук инке тĕлне. Апла пулин те вăл чыслă, çирĕп кăмăллă хĕрарăм. Çирĕп те таса, çав вăхăтрах синкерлĕ янăраççĕ ывăлне каланă пил сăмахĕсем: «Пур пул!.. Тӳрĕ пул!.. Таса пул!» Уйрăмах çак саманта вулакана хумхантармалла çырса кăтартнă автор. Ним те ытлашши çук, пĕтĕмпех виçеллĕ, килĕшӳллĕ кунта — калу интонацийĕ те шухăш тĕшшипе пĕр майлă.

Ева Лисина пултарулăхĕнче ачалăх вăл — вăй тĕвви, чĕре таппи. Юн таппипе пурнăç таппи пĕр килменни чĕрен тикĕс

ĕçне татать, чуна çӳçентермелле ыраттарать. Акă «Çăкăр чĕлли» калаври Ельăн кăмăлĕ ача-пăчанни пек мар салху. Амăшĕ ăна чирлĕ аккăшне çавăтса кайса тухтăрсене кăтартма ыйтать: «Чуна хурлăх пусса пырать. "Ах, Турă! — шухăшлатăп эпĕ. — Район ăçтарах-ши? Хăш çулпа каймалла-ши? Кaç пуличчен çаврăнса килейĕпĕр-ши?"» Амăшĕ çăкăр илсе çиме укçа парсан вăл килĕшет: «Çăкăршăн эпĕ таçта çитме те хатĕр. <...> Пĕлмен-курман çĕре тухма йывăр, вырăнтан тапраннă куççуль куça хĕсет»[15]. Кунта илсе кăтартнă пуплевре хĕрачан уçă кăмăлĕ, унăн çепĕçлĕхĕ, ачашлăхĕ, ачалăхра çеç пулакан айванлăхĕ сисĕнет. Калас пулать, Ева Лисина таса, «витĕр курăнакан» стильпе çырать: сăмах урлă çын чунĕ палăрать.

Çыравçăна куллен-кун пулаканни кăсăклантармасть, эпир сăнарсене ытларах вĕсен чун-чĕри çурăлса каясла чух, чунри асапа чăтма çук вăхăтра куратпăр. Çавăн евĕр час-часах ĕмĕт татăлнă самантра пулать. Акă «Çăкăр чĕлли» калаври Ельăн çăкăр илсе çиесси — чи пысăк ĕмĕт. Анчах яланхи пекех «акă ĕмĕт çитрĕ!» тенĕ чухне ĕмĕтленни тĕрлĕ сăлтава пула пурнăçланаймасть. Ку калавра та çаплах. Çăкăр çиме хатĕрленсе ларнă вăхăтра пĕчĕк Еля чӳречерен врач иртсе пынине курать. Унпа калаçнă вăхăтра столовăя хупаççĕ, ĕмĕтленнĕ çăкăр чĕлли вара сĕтел çинчех выртса юлать. Автор хĕрачан чуна татмалла хуйхине ĕнентермелле кăтартнă. Вăл каласа мар, сăнласа пани чун кисренĕвне витĕмлĕ тăвать:

> ...Таврана хура тĕс карса илет. Куç умне Лисук çеç, çăкăр çухатакан çеç, тăрса юлать.
>
> Эпĕ каллех малалла ыткăнатăп. Ман чышкăсем Лисука лачлаттараççĕ. Ура айĕнчи çĕр тайкаланать. Столовăй пӳрчĕ пĕр çухалать, унтан чӳречисене çиçтерсе çывхарать. Чӳрече рамисем ĕречĕпе ларса тухнă йывăç хĕрессем пек ман ума çитсе тăраççĕ. Каялла чакатăп. Алăсем çав-çавах тăпач муклашкисем пек ыткăнаççĕ. Хурланчăк çинçе сасса илтсен çеç ал-ура лĕнчĕр кайнипе эпĕ пӳрт кĕтессине авăнса анатăп. Кивĕ пĕренесем — ыраш çăкăрĕ тĕслĕ, пĕрене хушшинчи мăкран ыраш çăкăрĕ шăрши кĕрет. Эпĕ ыталанă çĕр пичĕ — çăкăр пĕçерме хутнă кăмака тĕпĕ пек — вĕри те асамлă. Çăкăр тĕслĕ таврара ман аппан пичĕ-куçĕ çеç хĕп-хĕрлĕ[16].

Еля Лисук аккăшне чышкисемпе кӳпкет. Анчах вăл çакна ăнланса тумасть — хĕрача хăйĕн пĕвĕ-сийне ют пек, ăс-тăнпа çыхăнман пек туять. Çын хăйĕнчен хăй ютшăннине çавăн пек ăста сăнланине мана Л. Андреевăн «Иуда Искариот» повеçĕн-

че тата В. Рсайăн «Тăпра калаçать» романĕнче кăна вулама тӳр килнĕччĕ.

Ĕмĕт татăлни хĕрачан туйăмĕсене çивĕчлетет тата кăткăслатать. Таврана эпир хуйхăпа «кисреннĕ» хĕрача куçĕпе куратпăр.

Çапла автор ку калавра хĕрача психологине тĕп-тĕрĕс сăнласа пама пултарнă. Вăл калăпланă сăнарсем чăн çынсем пек куç умне тухса тăраççĕ. Калавра çыравçăн илемлĕ шухăшлавĕ чăваш халăхĕн философийĕпе тата эстетикипе пĕр туртăмлă. Илер-ха пĕр сыпăкне: «Хир варринче пĕр йывăç ӳсет. Çак ют çĕрте вăл çеç, пĕчченскер, хӳтĕлекен тăван пек туйăнать. Эпир лăпланатпăр». Ку кĕвĕ чăваш юррисенче час-часах тĕл пулать. Тĕслĕхрен, «Уй варринче лаштра юман...» юрăра[17]. «Çăкăр чĕлли» калаври хăш-пĕр вырăнсем уçăмлăнах юмах тытăмĕ (морфологийĕ) çинчен аса илтереççĕ. Сăмахран, «Сухăркассипе ун вĕçĕнчи хир пирĕншĕн хăрушă мар, ку таврара темиçе хутчен те выльăх шыраса курнă. Эпир васкатпăр». Юмах тытăмĕпе пăхас пулсан, ку «пирĕн çĕр», «культурăланă территори». «Тăрмăш йăмрисем пирĕн ялтисенчен çӳллĕрех пек, вĕсем: “Эсир кунта мĕн туса çӳретĕр?” — тесе ыйтнăн туйăнать». Кунта автор хĕрачасем «ют», «пирĕн мар» территоринче хăйсене мĕнле туйнине сăнласа кăтартнă. Çавăн евĕр вырăнсене ытти калавсенче те асăрхатăн. Çапла вара хĕрачасен тĕнчекурăмĕ халăхăн яланхи шухăшлавĕпе пĕр майлă тесе çирĕплетсе калама пулать.

Ева Лисина пултарулăхĕнчи тĕп сăнар вăл, каларăмăр ĕнтĕ, хĕрача. Вăл чун уççине, хӳтĕсĕрлĕхе, тасалăха символлать. Ача кашни япалана хăйĕн ячĕпе калать, аслисен икĕпитлĕхĕпе çураçма пĕлмест. «Арçын Хĕветура» калавра та Ленук чунсăр çынсене юрасшăн мар, анчах ăна ирĕксĕррĕн «юраттараççĕ», çут çанталăк панă тӳрĕлĕхпе тасалăха, ырă кăмăллăха пĕтерес тĕллевпе хăйсене парăнтарасшăн пулаççĕ. Хĕрача аслисене хирĕçлет, хăй вăйсăр пулин те май çитнĕ таран «хитре инкесене» хирĕç тăрать, тăван амăшне асран ярса ăна сутмасть. Хĕрачан чун тасалăхĕпе аслисен хытă чĕреллĕхĕ хушшинчи хирĕçӳ синкер туйăм çуратать. Акă тăван ашшĕпе амаçури амăшĕ пĕчĕк Ленука вăл стена çине анне тесе çырса хунине тасаттарасшăн:

> Аллине хыркăч тыттарнă хĕрача çамкипе стенана тĕрĕнсе ĕсĕклет. **Ун çумĕнчи кантăк кĕленчине туратсем тискер кайăк чĕрнисем пек чăкăртаттараççĕ.** <...>
>
> — Итлетĕн-и, итлеместĕн-и?! — Вадим Андреевич Ленăна алăран ярса тытрĕ. Хĕрача аллине аялалла туртма тăрăшса çари! çухăрса ячĕ[18] (палăртни пирĕн. — *Ю.Я.*).

Сăнлакан ĕçсен тӳрĕ пĕлтерĕшĕсĕр пуçне автор çак сыпăка тарăн шухăш хывнă. Палăртнă предложенири илемлĕх мелĕсем — аллитераци, эмоци сĕмлĕ лексика — хĕрача чунĕнче мĕн пулса иртнине уçăмлатаççĕ, анчах калавра унăн символла пĕлтерĕшĕ те пур: вăл уйрăм тĕрĕсмарлăха философи шайне çитерет — хыт чĕреллĕ çынсем кăна мар, пĕтĕм тĕнче хĕрачана хирĕç çĕкленнĕ евĕр тăвать. Çак экзистенциллĕ кĕвĕ Лисинăн ытти калавĕсенче те илтĕнет...

Çынсем ачасем çине мĕнле пăхни вĕсенчи çынлăха виçсе хаклама, «çутатса пăхма» май парать. Хĕрачан чун ыратăвне пуринчен ытла туйса илме, ăнланма, пулăшма хатĕрри вăл — Арçын Хĕветура. Калава вуланă çемĕн пирĕн умра кăткăс чунсен — Арçын Хĕветурапа Ленăн — вăрттăнлăхĕ уçăлать. Вĕсен шăпинче пĕрпеклĕх сахал мар, анчах вĕсене пĕрлештерекенни чи малтанах — вĕсем тăлăх турат пулни. Хĕветуран савнă каччи вăрçăра пуçне хунă, ун хĕрлĕхне, тасалăхне путсĕр çын таптанă. Ăнсăртран мар Лена Хĕветурана чечек (ку унăн шăпине символлать) парать: «Лена ура айĕнче таптаннă чечеке чавса кăларнă пулас: çеçкесем лутăрканнă, хĕрачан пӳрнисем вараланнă»[19]. Хĕветура, нумай хуйхă-суйхă курнăскер, çынсен чун ыратăвне пуринчен лайăх ăнланать. Çавăнпа туртăнать те ĕнтĕ Ленук Хĕветура патне, ăна: «Ан пар мана чипер инкене», — тесе тархаслать, çавăнпа ĕнтĕ Хĕветура упăшкипе уйрăлса кайнă Надьăна, мĕскĕнленсе çӳрекенскерне, чи тĕрĕс, чи кирлĕ сăмахсем тупса калама вăй çитерет:

> Хĕветура Надьăна хулпуççинчен ярса тытрĕ, ун пичĕ тăрăх шултра тумламсем йăрăлтатса анчĕç.
>
> — Чунун илемне уçаймасан, ăна путарса лартсан эс Арçын Хĕветурана тухатăн! Надя! Ан пул Арçын Хĕветура! Арçын Хĕветурана ан тух! Тархаслатăп сана, мана та пулин хĕрхен — ан пул Арçын Хĕветура![20]

Автор калав пуçламăшĕнчех Арçын Хĕветуран чунĕ пĕрлĕхлĕ пулманнине, шалта унăн çынлăх, тасалăх пытанса пурăн-

нине, вӑл чун ыратнипе асапланнине систерет: «Кун хӗрсе кайнӑ. Сывлӑш шурӑ ҫулӑм евӗр вӗлтӗртетет... Сӑнӗ унӑн — ҫунса-ҫурӑлса выртакан тӑм ҫинче темле майпа сыхланса юлнӑ икӗ сенкер тумлам пек». Чун асапӗ ҫут ҫанталӑка ҫырса кӑтартнинче те, сӑн-сӑпатӗнче те тӳрех куҫа перӗнет, «тӑм ҫинчи икӗ сенкер тумлам» унӑн характерӗ икӗ сийлӗ пулнине, тумлам ырӑнӗсенчен «ҫынлӑх ҫӑлкуҫӗ» тапса тухассине систерет.

Пӗчченлӑх сӑлтавӗ Хӗветурара кӑна мар, айӑпӗ унпа юнашар пурӑнакан ҫынсенче те пур. Унпа инкек пулсан ӑна ӑнланакан ҫын тупӑнман, ҫынсем унран ютшӑннӑ, ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл пӗтӗм чун ӑшшине лашасене парать. Пӗчченлӗх — унӑн шӑпи.

«Ҫӑлтӑрсем курӑнман каҫ» калавра ҫыравҫӑн илемлӗ шухӑшлавӗн тепӗр енӗ — художествӑллӑ «остранени» — уйрӑмах палӑрать. Виҫӗ ҫулхи Катьӑна ашшӗ пӑрахса кайнӑ. Анчах хӗрача хальлӗхе ҫакна пӗлмест-ха, пӗтӗм чунӗпе ашшӗ шантарнӑ шакмака илсе килессе кӗтет. Кунта тӗп ӑслай вӑл — Катя ҫавна хӑйӗншӗн уҫни. Сасартӑк мар, хӑйӗн ӑс-тӑнӗпе шутласа ҫак хыпар патне ҫитет вӑл. Ҫакна автор ун чун хусканӑвӗсем витӗр кӑтартать.

Ашшӗ пӑрахса кайнипе килте яланхи йӗрке арканнӑ. Аслисем хальчченхи пек марри хӗрачан шухӑш-кӑмӑлне ҫивӗччӗн ӗҫлеттерет. Вӑл хӑйӗн шухӑшне ҫирӗплетме пултаракан вак-тӗвексене асӑрхаса пырать. Катя кӑна мар, вулакан та татӑклӑн калама пултараймасть-ха: кӗтсе илейрет-ши Катя шакмаксене? Ҫак ыйтӑвӑн тупсӑмӗ патне вӑл Катьӑпа пӗрле ҫитет. Калав пуҫламӑшӗнчен тытӑнса вӗҫне ҫитиччченех хӗрача кӗтни кӑлӑхах пулни палӑрса пырать. Кукамӑшӗн иккӗленӳллӗ сӑмахӗ хыҫҫӑн Катьӑн шанӑҫӗ арканма пуҫлать. Хуҫӑла пуҫланӑ шанчӑка Катя ҫирӗплетесшӗн, ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл ашшӗ парнеленӗ пуканене «ҫилӗм» ырӑнне йӑтса килет. Анчах ӗмӗт «савӑчӗ» вансах пырать. Нимӗн те кӑсӑклантармасть, хавхалантармасть Катьӑна. Акӑ хӗрача пуканепе выляма пикенет, анчах шухӑшӗ самантрах урӑххи ҫине куҫса каять: «Юрӗ, юрӗ, ан йӗр, йӑлӑнтармӑш, тӑррине сарӑ тӑвап! Кукамай, атте час килет-и?»[21] Хӗрачан ыйтӑвӗ кунта кӗтмен ҫӗртен пулса тухать. Пуплев интонацийӗ тӗлӗшӗнчен вӑл уйрӑмах пысӑк кӗтменлӗх.

Автор ку калава та экзистенциллĕ вĕçлет: «Тинех лăпланчĕ хĕрача. Пуканене хăй çумне пăчăртарĕ те куçне йывăррăн хупрĕ.

Каç уçă. Тротуар тасатса тимĕр кĕреçепе хăйăрттарни илтĕнет. Хунарсен айĕнче туратсем ялтăртатаççĕ. Чĕлтĕрти пăра çĕмĕрсе шыв шăнкăртатать. Йăм кăвак тӳпере çăлтăрсем чалтăртатаççĕ...»[22]

Хĕрача, тулашĕнчен пăхсан, лăпланнă пек, анчах чунĕнче унăн лăпкă мар, çавна кăтартса пама сасă çыравĕн (звукопись) тĕрлĕ енĕ май парать. Пысăк инкеке пула хĕрачан тĕнчетуйăмĕ çивĕчленни паллă, çакă тавралăха Катьăн хуйхăпа пусăрăннă чунĕ витĕр кăтартма пулăшать. Çут çанталăкăн аслă вăйĕсем умĕнче пĕчченлĕх уйрăмах уççăн палăрать.

«Масар çумĕпе» калава тарăнрах ăнланма, сăмахран, унăн тĕрлĕ пайĕсем мĕнле çывăхланнине, танлаштаракан пайрăмсен пĕлтерĕшне туйса илни кирлĕ. Калав çапла пуçланать: «Ĕç хыççăн эпĕ яланах киле васкатăп. Ман часрах пĕчĕк хĕрĕме, Атюçа, ыталаса илес килет. Паян та ĕçрен тухсан эпĕ тӳрех автобус чарăнакан вырăна утрăм»[23]. Автор сăнарĕ йăлтах хусканура — унăн часрах киле, ачи патне çитмелле. Çут çанталăк вара пачах урăхла туртăмлă: «...çырма-çатраллă хир тăсăлса выртать. <...> Хир çийĕ — ешĕл курăк пĕлтĕрхи хыт хура айĕнчен курăннăран, çĕр пăсланнăран — сенкер кĕрен тĕтреллĕ. Хутран-ситрен çеç çак ачаш тĕтрене тĕмĕн-тĕмĕн ларакан сар чечексем сирсе яраççĕ е тур амăш курăкĕн утравĕсем тасан кĕренленеççĕ»[24]. Кунта тӳнтер психологиллĕ параллельлĕх. Çут çанталăк ӳкерчĕкĕн ĕлки тĕтреллĕ, сапаланчăк тата уçăмсăр пулни канăçсăр кăмăл-туйăм çуратать. Калавăн пĕрпĕтĕмлĕхĕ ĕç-пуçа сăлтавламасси витĕмлĕ ĕнентерӳлĕхсенчен килет. Сăнаса пăхар-ха çӳлерех асăннă туйăмăн «кӳршĕллĕ» пусăмне: «Автобус пĕр каслă ял хушшине кĕрсе каять. Кăтраланса-купаланса тăракан çулçăсем хушшипе телевизор антеннисем, хĕрлĕ мăрьесемпе сенкер решеткесем — тĕплĕ вырăнĕнчен кăшт çеç сăмсине кăларса, хаваслăн шикленсе, халь-халь **каялла чăмма хатĕрленсе** тăракан ача пек — çуталса иртеççĕ»[25] (палăртни пирĕн. — *Ю.Я.*). Кунта эмоци сĕмлĕ сăмахсем канăçсăр туйăм çуратаççĕ, калу мĕнле йĕрпе аталанассине систереççĕ. Ритм героиньăн тĕрлĕ туйăмĕсем — хăранипе туйăм çивĕчленни тата релаксаци — ылмашăнса улшăннине систерет. Хĕрарăмăн шуйланса ӳкнĕ шухăш-туйăм-

не çыравçă каласа мар, кăтартса парать: «Кунти тирпейлĕхпе шăплăх чуна шиклентерет. Такам мана сăнаса тăнă пек туйăнать. Шарт! сикетĕп — тĕтре витĕр ман çине çава тытнă элчел çывхарса килет. Сывлама та хăратăп. Тимĕр кĕреçе йăтнă çын иккен...»[26] Çакăн евĕр сăнласа кăтартни чунра пулса иртекен улшăнусене ĕненмелле тăвать. Масар çинче мĕн пулса иртнине асра юлмалла, чуна çӳçентермелле çырса кăтартнă автор. Хаваслăх та, çĕкленӳ те мар — Ева Лисина калавĕсенче катарсисла синкерлĕхпе тата хурлăхпа çынна тасатса, çутатса кăларакан туйăм витерет вулакана.

«Элекçей» калав — хăйне евĕр чăваш донжуанĕ çинчен. Вăл кăткăс сăнар, шкулта хăнăхнă пек ăна ырă е ырă мар тесе хаклама йывăр. Чăнах та, Елис амăшĕ калашле, вăл — «хĕвел сехмечĕ, юрату палăкĕ»; «пурнăç çынни мар». Унăн çитменлĕхĕсем куç умĕнчех темелле. Елисăн та юратмалла мар пек çак чупкăна, анчах вăл ăна юратать. «Я много раз читал Обломова и, чем больше вчитывался в него, тем самым Обломов становился мне симпатичнее», — тесе çырать И. Анненский. — Автор, по-моему, изображал человека ему симпатичного, и в этом основание впечатления»[27]. Элекçей те çак цитатăра каланă йышши сăнар. Калава вуланăçемĕн, чăнах та, ăна килĕштерме мар пулсан та, хисеплеме пуçлатăн. Питлесси, çын çине ал суласси Ева Лисинăшăн ют. Ку калавра автор арçынăн çăтăх юратăвĕн, «донжуанствăн» психологине тишкерет. Чăваш литературинче çак темăна Лисина пек тарăн тĕпчени сахал тĕл пулать.

Çак сăнар çине тишкеререх пăхсан унта наци характерĕн енĕсем те палăраççĕ темелле. Элекçее «ытлашши çын» («лишний человек») тесе те калама пулать. Анчах «ытлашши» тени вăл аякран, ютран тупăннă тени мар. Ун йышши арçын сăнарĕсем чăваш литературинче чылай. Кунтах В. Рсайăн, Хв. Агиверĕн хăш геройĕсене кĕртме пулать. Чăваш хĕрарăмĕ, чăнах та, арçынпа танлаштарсан, яланах пуçарулă, хастар. Арçын шăпи литературăра — ытларах чух мĕскĕнлĕх.

Элекçей «ытлашши» çын пулсан та мĕскĕн мар. Вăл юрату «виртуозĕ», юрату «ăсти». Ун сăнарне калавра Елис сăнарĕнчен уйрăм ăнланма çук. Элекçейре кăна мар, Елисра та автор юратун уйрăм тĕсне сăнарлать. Çак туйăмăн тымарĕсем ку калавра сĕм авалтан килеççĕ. Елис вăйлă туйăмлă, Элекçее вăл пĕрре курсах юратса пăрахать. Юлташ хĕрачи те, Çеруш та

Елис Элекçее мĕншĕн юратнине ăнланма пултараймаççĕ. Çак туйăм ăçтан килнине автор калавра символла пайрăмсемпе систерет. Калăпăр, Елис Элекçее пӳлĕмсен чиккинче тĕл пулни, çынсем ăна «юпа» тени, вĕсем час-часах вăрманта пулни т.ыт.те калавра символла пайрăмсен шайне çĕкленеççĕ. Калав вĕçĕнче Елис çав символсен пĕлтерĕшне уçса парать.

Елис сăнарĕ те чылай кăткăс та хирĕçӳллĕ. Вăл Элекçее юратать, анчах ăна парăнмасть — авалтан килекен хĕрӳлĕхе хирĕçлекен вăй, тасалăх унра çиеле тухса пырать.

Пĕчченлĕх ку калавра çынран, ун кăмăл еккинчен килекен япала кăна мар, кунта çынна пĕчченлĕх пӳрнĕ. Телейсĕр юрату — Елисăн шăпи, унăн асапне вăл тивĕçлĕн тӳсет.

Е. Лисина калăплакан сăнарсем пек чун ыратăвĕ витĕр тĕнчене курнине совет литературинче ырламан — хурланă. Çĕнĕ шухăшлав виçипе пăхсан вара Ева Лисина — чăн гуманист, Д.И. Овсянико-Куликовский калашле, вăл «этемлĕхĕн иртнĕ асапĕсене манмасăр ун çĕнĕ асапĕсемпе асапланать»[28].

**Литература**

[1] *Шкловский В.* О теории прозы. М.: Советский писатель, 1983. С. 105.

[2] «В таких текстах (печальных. — *Ю.Я.*) автор нередко возвращается в места юности или описывает картины счастливого детства. Семантический компонент таких текстов — «сожаление» и «завершение». В них все завершается, кончается, уходит, прекращается. Стиль печальных текстов лиричен» (*Белявин В.П.* Психологические аспекты художественного текста. М., 1988. С. 89). Е. Лисинăн калавĕсем шăпах çавăн пек. Тĕнче сăнĕ çапла пулни ĕнтĕ, ман шутпа, ăна мифологиллĕ туртăмлă тăвать.

[3] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. 3 с.

[4] И. Анненский Ф. Достоевскипе Л. Андреевăн пултарулăхĕнчи çак енне питĕ тĕрĕс асăрханă: «Не только общая характеристика, но и обрисовка действий андреевского Иуды сильно напоминает нам Достоевского. Смесь шута и самодура, этих столь определенных типов нашей натуры, выражалась в его поэзии двояко: в моменте активном — давая выверт, а в пассивном — надрыв» (*Анненский И.* Книги отражений. М., 1979. С. 148.).

[5] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. 5 с.

[6] Çавăнтах. 7 с.

[7] Çавăнтах. 21 с.

[8] Çавăнтах.

[9] Çавăнтах. 22 с.

[10] Çавăнтах. 32 с.

[11] «Тахçан хĕвел пĕрре мар, виççĕ пулнă тата çĕр çывăхĕнчех çӳренĕ. Çавăнпа пур çĕрте те питĕ шăрăх тăнă, Çынсем хĕл, юр, сивĕ мĕнне

пĕлмен» (Чăваш халăх пултарулăхĕ: Мифсем, легендăсем, халапсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. 39 с.).

[12] Кунта Т.С. Пассек чăваш философийĕ çинчен асăрхаттарни вырăнлă пулмалла: «В чувашском материале мы застаем следы такой нераздеseverенности представлений о смерти человека и зимнем умирании природы. Смерть остается увязанной с предварительно выявленной в сознании смертью в природе. «Брак», «любовное соединение», «рождение» неотделимы от семантического пучка «весны», «лета» с его дериватами «обилие», «плодородие», «урожай», «тепло», «свет», в их космической увязанности с явлениями неба — солнцем, огнем, растительностью. В противоположном аспекте с теми же космическими объектами увязан семантический пучок «зимы», «скудости», «холода», «мрака» (*Пассек Т.С.* Круг чувашских праздников // Академику Н.Я. Марру. М.; Л., 1935. С. 465).

[13] «Калаври символсене пуçпа шутласа тăватăр-и е хăйсемех пулса пыраççĕ?» — кĕнеке авторĕн ыйтăвне Лисина çапла хуравлать: «Çук, нихçан та шутласа тумастăп, вăл хăй пулса пырать, çав тери йывăр самантсенче, этем сăмахĕ çитмен чух (куллен пурнăçра та çапла: инкек-синкек çинчен пĕлтерес умĕн эпир çынна «хатĕрлетпĕр»). Ĕçе пĕтĕмпе интуици, подсознани илсе пырать, анчах та кашнин вырăнĕ мĕне пĕлтернине, мĕне **хатĕрленине**, паллах, питĕ лайăх пĕлетĕп.

Сайра хутра пурте паллă пулса çитсен, пуç та ĕçлет. «Хĕле кĕрес умĕн» калаври Çинук аппа хăш самантра вилнине эпĕ пĕлсех тунăччĕ. «Ура вĕçĕнче авăнать те авăнать пĕр курăк. Унччен сарă пулнă, халĕ шуралса кайнă çеçкипе тĕмеске çумне çапăна-çапăна чĕтрет курăк» (Çинук аппа **тĕмеске** — вилĕм тăпри — патне çитрĕ). «Павăл шарт! сиксе тăчĕ». (Мĕншĕн? Чунĕ шуйханса ӳкрĕ — халь-халь темĕскер пулать.) «Иртенпе шăвакан пĕлĕтсем чарăнса ларнă» (ку тĕлте Çинук аппа вилнĕ). «Çанталăк çемçелнĕ пек туйăнчĕ ăна» (амăшĕн асапĕ вĕçленнĕ пек туйăнчĕ ăна). «Юр айĕнчен тĕмеске тăррисем хуралса тухаççĕ» (тĕмеске — вил тăпри чавмалли кĕтет)». (Ю.В. Яковлевăн архивĕнчен).

[14] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. 26 с.

[15] Çавăнтах. 33—34 с.

[16] Çавăнтах. 42—43 с.

[17] Чăвашсен йывăçа Турă вырăнне хурасси анлă сарăлнă. Д.М. Макаров хурăнăн асамлă вăйне ак çапла ăнлантарать:

Кĕтĕм вăрман ăшне,
Лартăм хурăн тĕп çине
Хурăн çырли тухиччен.
Лартăм атте килĕнче
Турă çырни тухиччен...

«Бессильная понять действительные жизненные обстоятельства, подавляющие брачные отношения в обществе, распаленная фантазия молодой девушки с мольбой обращается к своей могущественной сверхъестественной родственнице — березе. Хотя представления о березе-тотеме утеряны, но еще удержались в сознании его пережитки в виде веры, что будто бы березы охраняют материнство» (*Макаров Д.М.* Тотемический культ // НА ЧГИГН. Отд. 2. Ед. хр. №1037). Б. Чиндыковăн «Туй каçхине» калаври хурăнăн пĕлтерĕшне те çапла ăнлантармалла.

[18] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. 81 с.
[19] Çавăнтах. 77 с.
[20] Çавăнтах. 80 с.
[21] Çавăнтах. 47 с.
[22] Çавăнтах. 55 с.
[23] Çавăнтах.
[24] Çавăнтах.
[25] Çавăнтах. 56 с.
[26] Çавăнтах. 57 с.
[28] *Анненский И.* Книги отражений. С. 207.
[28] *Овсянико-Куликовский Д.Н.* Вопросы психологии творчества. СПб., 1902. С. 37.

# «ÇĔНЬЯЛ АЧИСЕМ» ПОВЕСТЬ ПОЭТИКИ

Осип Мандельштам каларăшле, «шухăшласа кăларнипе аса илни поэзире алла-аллăн тытăнса çӳреççĕ»[1]. Ева Лисина пултарулăхĕ те çапларах. Анчах вăл çырнисенче çакна та куратпăр: унăн пĕр хайлавĕнче шухăшласа кăларни нумайрах, тепринче — аса илни. Çавăнпа тишкерме меллĕ пултăр тесе вăл çырнисене икке уйăрнă пулăттămăр: шухăшласа кăларнисем тата аса илнисем. Пĕрремĕшсен шутне «Хупах хăлха Илюк», «Тепĕр çул та килетпĕр», «Большие луга» повеççене тата «Пăркка мучи калавĕсене» кĕртмелле, иккĕмĕшсен шутне — «Хĕле кĕрес умĕн» ятлă кĕнекери калавсене, «Çĕньял ачисемпе» «Рия» повеççене тата «Салтак çырăвĕсем» очерка.

Хайлавĕсене çапла пайлани çыравçăн илемлĕ шухăш еккине те тарăнрах ăнланма пулăшмалла. Çак ик ушкăна уйăрса тăраканни — автор хăйĕн чунне пĕр пытармасăр мĕн таран уçса кăтартнинче е, урăхла каласан, çырни мĕн таран автобиографиллĕ пулнинче. Лисина, хăй калашле, «ухмахрах», «ирĕкрех» çырма ăнтăлать, эпир кунта вăл хăйĕн илемлĕ шыравĕсенче пирĕн литературăра ыттисенчен маларах пынине куратпăр. Паллă ĕнтĕ: Анăçри çĕршывсенче ĕнер мар, тахçантанпах искусство, тĕпрен илсен, пурнăçра чăн пулманнине кăтартас енне каять, «ухмахлатать».

Ан тив, Ева Лисина «шухăшласа кăларнă» хайлавсем теприне Анăçа аса илтерччĕр. Çапах та ку пирĕн литературăн тавракурăм чиккисем сарăлнине пĕлтерет. Çак ĕçе тума вара сахал мар хăюлăх та, ăсталăх та кирлĕ.

Ҫапах та Турӑ пани Е. Лисинӑн «ирӗклӗ» ҫырма туртӑннинче мар, урӑххинче пек туйӑнать. Вӑл — ҫыравҫӑ май ҫитнӗ таран хӑй ҫинчен пӗр пытармасӑр ҫырса кӑтартнинче.

Камшӑн мӗнле-тӗр, анчах искусствӑра тӗрлӗ мелпе, техникӑпа ӗҫлеме хӑнӑхса пынӑҫемӗн хӑш ҫыравҫӑн илем туйӑмӗ те чакать. М.Э. Хомицер музыкҫӑ каланине илер:

> Скажу о себе. Помню, в молодости, при всем самом почтительном моем отношении к авторским ремаркам и указаниям, я играл все же в первую очередь «себя». Беру «себя» в кавычки, поскольку говорится это, разумеется, условно: имею в виду, что мои собственные исполнительские эмоции, чувства и переживания — по-юношески горячие и непосредственные — все время выходили где-то на передний план. Причем — непроизвольно. Не потому, что я исходил при этом из какого-то специального намерения, эстетической позиции и прочего. Хорошо ли это?
>
> Отвечу так: естественно. Возможно, жаль даже, когда артист минует каким-то образом этот этап — теряется что-то, присущее только молодости, единственное в своем роде и неповторимое[2].

Художник ӗҫ хапине хӑнӑхса пыни писателӗн те, пианистӑн та пӗрешкелех.

Музыкҫӑ каланӑ пек, хӑш чух художникӑн ӑсталӑхӗ те «сӗвӗрӗлет». Куна пӗтӗмӗшле йӗрке картне лартасшӑн мар: ку вӑл йӑлтах ӳнерҫӗ мӗн шыранинчен килет. Акӑ тепри, ӗҫе вӗреннӗ май, ӑслайӗсене те тупать, хайлавӗсенчи кӗтрете те хушать. Кашни ӑста хӑйне майлӑ ӗнтӗ, паллах. Апла пулин те, тимлӗрех пӑхсан, вӗсенчен хӑшӗ-пӗри ҫырас мехелӗпе те, шухӑш йӗрӗпе те пӗр пекрех пулнине курма пулать[3]. Маларах илсе кӑтартнӑ Хомицер сӑмахӗсем те Ева Лисинӑшӑн хӑш-пӗр енӗпе тӳрре килеҫҫӗ. Унӑн «Ҫӗньял ачисем» повеҫӗ тата калавӗсем автор чунӗнчи туйӑмсемпе паллӑ, ҫавӑнпа вӗсем чуна хумхантараҫҫӗ те. «Чем больше художник находит самого себя, тем глубже становится его переживание... Переживают в конце концов самого себя», — тенӗ хӑй вӑхӑтӗнче К.А. Мартинсен[4]. Е. Лисина ас тӗввине сӳтнӗ чухне унӑн ӑс-тӑнӗ те, кӑмӑл екки те палӑрмаллипех палӑрать, мӗншӗн тесен, каларӑмӑр ӗнтӗ, автор хӑй кӑмӑлӗпе хӑй сӑпатне ӳкерсе кӑтартать. Сӑмах вӗҫертсе темӗн те пӗр вӗҫтерсе, чӗре ҫумӗнче мӗн пуррине ҫын куҫӗ умӗнчен пытарса, вулакана улталаса, «ухмахланса» ачалӑхран юлнӑ чӗрери сурансенчен пӑрса ярас тени

çук унăн. Вулакан куçĕ умне хĕрача çинчен çырнинче автор сăнарĕ тĕкĕр çинчи пек тухса тăрать. Çыравçăшăн Густав Малер кĕввисем чун пек хаклă пулни çакăнтан килет пулас. Шухăш хывăнас типологи Лисина хайлавĕсенче Малер пултарăвĕн еккине аса илтерет (ун кĕввисене Лисина чунтан юратать). Астăвăр-ха, А. Шенберг Малер хайлавĕсенче мĕн илтнĕ: «Я должен обратиться к Вам не как музыкант к музыканту, а как человек к человеку. Ибо я видел Вашу душу обнаженной, совершенно обнаженной»[5]. Лисинăн çырас халĕ (пултару психологийĕ) те XX ĕмĕрти Бетховенăн — Малерăн майлăрах. Акă мĕнле пахалать вăл паянхи куçпа ун чухне хăй çырнине:

> «Çĕньял ачисен» чĕлхи пирки эпĕ çакна каласшăн. Авторĕ çырма пĕлмест, техника мĕнне те чухламасть, анчах туйăмĕ пур. Апла ку çыннăн чĕлхи ансат çеç пулма пултарать, апла пĕтĕм çăлăнăç — туйăмсене тĕрĕс кăтартасси»[6].

«Чĕлхи ансат» тенĕрен: шутласа кăларнă повеçсенче автор ансатлăхран хăтăласшăн пулни палăрать. Вăл «Тăван Атăлта» мĕн çырни те çакна çирĕплетет:

> «Хамăр картара» тапăртатса тăнипе, хамăра хамăр çеç мухтаса-хурласа пысăк шая çитес çук эпир. Мĕн каламалли ĕнтĕ — хăш-пĕр кĕнекесен подстрочникне тусан нимĕн те юлмасть. Чăвашла, тен, чиперех пулĕ, хамăр чĕлхепе йăпанатпăр-çке: сар хĕвелĕ йăл-йăл çиçет, çумăрĕ шăпăр-шăпăр тăвать — питĕ илемлĕ — куçар-ха, мĕн юлать? Апла çав илемсĕр пуçне тата урăххи — сюжечĕ, ăсталăхĕ кирлĕ[7].

Çыравçă çĕнни патне туртăнни кунта куç умĕнчех, юлашки вăхăтри пултарулăхĕ те унăн çапларах. Çакă пурĕ пĕрле вăл тăван литературăшăн пăшăрханнине кăтартать. Çапах та вăл кăткăслăх патне туртăнни, çын хыççăн сикни пулмасть-ши? Тен, аса илсе çырнă чухнехи пекех «ансат чĕлхепе» çырмалла мар-ши унăн? Хăй вăхăтĕнче Клод Дебюсси Мусоргскин «Детская» пьеси пирки çапла çырнă:

> Никто не обращался к лучшему, что в нас есть, с большей нежностью и глубиной. Он неповторим и остается неповторимым благодаря своему искусству без надуманных приемов, без иссушающих правил. Никогда еще столь утонченное восприятие не воплощалось столь простыми средствами выражения! Это похоже на искусство любопытного дикаря, обнаруживающего музыку на каждом шагу, запечатленном его эмоцией[8].

Ева Лисинăн ансат çырассинчен, тĕнчене ачан таса куçĕпе курассинчен пăрăнас кăмăлĕ акă мĕнле шутлаттарать. Тата камшăн кăтартуллă-ха çакăн пек илемлĕ шухăшлав? Çыравçă хăйĕн чунне витнĕ çынсенчен чи малтан Геннадий Айхипе Борис Пастернака асăнать. Вăл вĕсенчен ăсталăха вĕреннĕ-и, вĕренмен-и — ку урăх ыйту, анчах çак виç çыравçăн пĕрпеклĕхĕсем те куçкĕретех-çке! Сăмахран, Е. Лисина калавĕсем те, Пастернакпа Айхин хайлавĕсем те чун ыратăвĕ çинче хывăннă[9]. Вĕсем пăхасса та çут тĕнче çине пĕрремĕш хут курнăран шалт аптранă пек пăхаççĕ[10]. Айхипе Пастернак кăна мар, калăпăр, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа паянхи кунччен Анăçри искусствăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕ те çапларах. Ку мĕншĕн апла пулни те ăнланмалла: «...Я не могу отыскать в искусстве или художественном творчестве какого-либо существенного фактора, зародыши которого нельзя было бы найти в работах детей», — тенĕ Р. Арнхейм[11]. «Куç уçăласси» вара импрессионистсенчен пуçланнă. А.О. Чегодаев тĕпчевçĕ калашле, «пĕр ĕмĕр ĕнтĕ этемлĕх çут çанталăк çине тата çын çине импрессионистсен куçĕпе пăхать»[12].

Е. Лисинăн çырас хапи «ухмаха ернĕ» импрессионистсен[13] йăхĕ туртнинчен ытларах урăххинчен, çыравçă чунĕ ыйтнинчен килет. Анчах ун пирки каярах.

Унăн пĕрремĕш япалисене ырлакансем мĕн каланине пăхсан та çыравçăн чĕлхи хăйне майлă пулни курăнать. Илпек, Уяр, Артемьев — кашниннех илем туйăмĕ хăйĕнле[14]. Акă, сăмахран, Хв. Уяр та, «Çĕньял ачисем» çинчен «Талантлă кĕneke» ятлă статья çырнăскер, Е. Лисина кĕнекинче чĕлхе хăй евĕрлĕхне асăрхать: «Автор, юмахри асамçă пек, кирек мĕн çинчен çырсан та ăна чĕрĕлĕх шывĕ сĕрнĕ евĕр чĕртсе тăрататьн»[15]. Ку повеçе чикĕ леш енче те куçарса кăларма палăртнă. Вăл Германире тата Японире кун çути курмалла[16]. Пĕлместĕп, ку повесть нимĕççене мĕнпе кăсăклантарнă-ши, анчах японецсемшĕн Марине тăван-пĕтен пекех пуласси паллă. Пĕчĕк хĕрача пĕлĕтпе, сарă чечекпе, хурăнпа, çумăрпа, аслисемшĕн ниме тăман хăйĕн теттисемпе т.ыт.те чунтан киленме пултарни Япони çыннисемшĕн, пирĕн шутпа, çав тери çывăх. Кашни япалан илемне курса савăнасси — ку халăхăн юнра.

Хайлавра çыравçă, калăн, ас тĕввине салтать. Лисинăн асамлăхĕ пыл пек тутлă мар — унăн ача-пăча пурăнакан «асилӳ çĕршывĕнчи» (Е. Лисина), тĕрĕсрех каласан, тĕнчинчи[17] хĕвеллĕх[18] «ашшĕне курмасăр, ун сассине илтмесĕр, унпа юна-

шар ларса калаçмасăр, ашшĕ хӳтти мĕнне пĕлмесĕр ӳснĕ ачасен хурлăхĕпе, тунсăхĕпе»[19] хутăшса кайнă.

Ку повеçре сăмах пĕрре «йăл-йăл куç харшиллĕ, утмăлтурат пек кăвак куçлă е кĕр каçĕ пек хура çӳçлĕ, хура куçлă та йăлтăр кулăллă хĕрачасем» çинчен, тепре «ши-и! шăхракан, пĕр-пĕринпе шăла çыртса çапăçакан, хĕрачасене ура явса ӳкерекен, кирлĕ пулсан пурне те хӳтĕлеме хатĕр паттăр арçын ачасем»[20] çинчен каланипе ылмашăнса пырать. Кусене те, теприсене те автор чĕррĕн сăнласа кăтартать. Анчах çакна каламалла: хĕрачасен шалти тĕнчине палăртас тĕлĕшĕнчен Ева Лисина чăннипех те хăйне майлă пулсан, арçын ачасене çырса кăтартас çĕрте унăн, ачалăх çинчен çырнă ытти çынсен кĕнекисемпе танлаштарсан[21], çĕнни çукпа пĕрех. Ку ĕнтĕ Лисинăн çырас мехелĕнчен килет[22]. Сăмахран, Арçук сăнарне калăпланă чухне те вăл ача чухнехине аса илсе çырать теме пулать, анчах çыравçă арçын ачапа мĕн-мĕн пулса иртнине астăвать пулсан та, вăл мĕн туйнине хут çине куçарма унăн май килмест — Лисинăн вăйĕ те, вулакана çавăрса илекен илемĕ те — хăй тӳссе ирттернĕ, пĕрремĕшле туйăмсенче[23]. Вĕсене кура кăмăлĕпе çыравçă мĕнле çын пулнине те калама пулать. Лисина хĕрачасен чун хусканăвĕсене витĕмлĕ, тĕпĕ-йĕрĕпе кăтартса пама пултарнине шута илес пулсан, унăн сăнарĕсем кăна мар, çыравçă хăй те ача пек черчен чунлă пулни курăнать[24]. Вăл тĕнче çине таса куçпа пăхасси те, апла пулсан унăн таланчĕ те çакăнтан килет пулас. «Есть основание утверждать, что так называемая детскость мировосприятия и творческий дар находятся в достаточно близком соседстве друг с другом. А возможно и более того — в органической взаимосвязи», — тесе çырать Г. Цыпин[25].

Ку повеçре тата калавĕсенче Лисинăн чи тĕлĕнтерекенни вăл – çыравçă хĕрача туйăмне витĕрех курни. Повесть техĕмĕ те хĕрачасен, уйрăмах Маринен тĕнчетуйăмĕнче, мĕншĕн тесен çыравçă вĕсем урлă хăйне сăнласа пырать: Марине те, ытти хĕрача сăнарĕсем те — авторăн тĕпри чун татăкĕ[26].

«Çĕньял ачисем» повеçе çырасса та вăл такам валли мар, хăйне валли çырнă иккен. «...паллах, ку тĕлĕнмелле илтĕнме пултарать, мана айăплама та пулĕ, анчах та çавăн пек — хăшпĕр япаласене ху валли çеç çырнă пек туйăнать: ăна çырмасан питĕ йывăр, темĕскер пусса тăрать!» — тӳррĕн калать çыравçă[27]. Çапла вара çыравçăн «пурнăçри никĕсĕ пур» (Е. Лисина), анчах шутласа кăларнă хайлавĕсем (уйрăмах авторпа сăнар хуш-

ши пысăк чухне) мĕншĕн кăмăла тултарманнин сăлтавне те ăнланмалла: шутласа кăларнисĕр пуçне вĕсене ачасем валли ятарласа, тен, вĕсене юрас тесе, вĕсем çинчен шутласа çырнă. «Анчах та мана ача-пăча литератури мар, ачи-пăчи хăй шухăшлаттарать. Ман шутпа, халь пурин те ачасем çинчен ытларах шутламалла», — тенĕччĕ вăл[28]. Çакă пĕтерет те ĕнтĕ ăна. «Çĕньял ачисем» çинченех вăл урăхла калать: «Ачасем валли çырамха тенĕ пулсан эпĕ ăна урăхларах çырнă пулăттăм». Ева Лисинăшăн мĕнле пур çавăн пек çырни нимрен те паха. Кун пеккин сăлтавне кам та пулсан Л.Н. Толстойран уçăмлăрах палăртнине астумастăп:

> Более же всего увеличивается степень заразительности искусства степенью искренности художника. Как только зритель, слушатель чувствуют, что художник сам заряжается своим произведением и пишет, поет, играет для себя, а не только для того, чтобы воздействовать на других, такое душевное состояние художника заряжает воспринимающего, и наоборот: как только зритель, читатель, слушатель чувствуют, что автор не для своего удовлетворения, а для него, для воспринимающего, пишет, поет, играет и не чувствует сам того, что хочет выразить, так является отпор, и самое особенное, новое чувство, и самая искусная техника не только не производят никакого впечатления, но отталкивают[29].

Çыравçă мĕнле çырса мĕн пулса тухнине сăнанă май ку повеçри импрессионизмăн хăш-пĕр паллисене асăнса иртрĕмĕр ĕнтĕ. Çавăнпа ку хайлаври черчен чунлă та таса куçлă Марине чуна илĕртекен, чĕрене çитсе перĕнекен илемлĕ сăнар мĕнле пулнине тĕсесе пăхасси кăна юлать. Анчах чи малтан вăл мĕнле шухăшлине палăртса хăвармалла.

Этем çапла куран: хăйĕн чĕре çумĕнчи шухăшсенчен вăтанăçлă вăл. Чăваш вулаканĕ çыравçă хăйĕн чунне, хăйĕн черченлĕхне пĕтĕм халăх умĕнче «çарамаслантарнине» курма хăнăхман-ха[30]. Е. Лисинăн пултарулăхĕ, уншăн чи çывăх композиторăн Г. Малерăн пекех, çаплалла майлă[31].

Автор ача чухне асра юлнине сăнласа кăтартас ĕçре уйрăмах импрессионизма (калавсенче — символла импрессионизма) çывăх[32]. Литературăри çак çыру мелĕ çинчен калаçнă чухне тĕпчевçĕсем тĕрлĕ çыравçăсене хăйсене майлă ушкăнсем çине уйăраççĕ[33].

Импрессионизм вăл, чи малтан, çут тĕнчене çĕнĕлле курни. Писатель-импрессионист эпир мĕнле курни çумне анлăш

хушаканĕ пулать те. «Çĕньял ачисем» повеçе илес пулсан, вăл хĕрачан черченлĕхне курма вĕрентет. Çак таса та ансат туйăм пур халăхшăн та пĕр пек çывăх, çавăнпа чĕре тĕпĕнчен тухакан, анчах пур çыншăн та ăнланмалла илемлĕ сăмах, Л. Толстой каларăшле, тĕн пĕлтерĕшĕнчи япала.

Çĕнĕлле кăтартма çыравçăн хăйĕн те çĕнĕ куçлă пулмалла. Е. Лисинăн вара, каланăччĕ ĕнтĕ, ачан таса куçĕ, çавăнпах вăл вулакана куллен курма хăнăхнă, тĕлĕнмелли ним те çук япаласем çине тĕлĕнсе кайса пăхма вĕрентет[34].

Пĕчĕк хĕрачана кăтартни те, ун çинчен çырса пани те повеçре йăлтах черченлĕхпе пĕвеннĕ. «Пирĕн «черчен чуна» эмоци, туйăм çывăхрах, çавăнпа хĕрарăм искусствăра та хăйне çывăхраххи енне сулăнать. <...> Чăваш хĕрарăмĕн поэзинче тĕлĕнмелле илем, тĕлĕнмелле мул пур — чун», — тенĕччĕ Е. Лисина[35]. («Çĕньял ачисем», чăнах та, кăмăл-туйăм тĕлĕшĕнчен чăн поэзиех.) Хĕрарăмăннипе ачан кăмăлĕ, тĕпрен илсен, пĕр килет, мĕншĕн тесен «пĕчĕк ача та, чи малтан, туйăмсемпе, чун-чĕре хушнипе пурăнать»[36]. Апла пулсан çут çанталăк хăйех хĕрарăм çыравçăсене ачан чунне тимлемелли майсем туса парать-çке!

Тĕнчене тата чун хусканăвĕсене (ăспа виçме çуккисене) поэзи тата интуици тĕлĕшĕнчен ăнкарма пултарнинче Ева Лисина уйрăмах хăйне евĕрлĕ. Çыравçă вулаканпа чун сисĕвĕ, пĕр шухăш тепĕр шухăша хăйпе пĕрле туртнине тимлеме хатĕррин шайĕнче калаçать. Вăл Марине çинчен каласа мар, кăтартса парать, çавăнпа ĕнтĕ вулакан хĕрачан кăмăл-туйăмне ăс-тăнран маларах, чĕрепе йышăнать. Автор вулакан чунне витерме меллĕ хатĕр-хĕтĕрпе усă курса чĕррĕн, куçа курăнмалла çырма ăста. Çыравçă хĕрача сăнарне, пĕрре пăхма, çăмăллăн ӳкерет: черченкĕ сăр илет те хăйĕн илеме сисĕнчĕклĕ чĕри ăçта хума ыйтнă çавăнта асăрханса, чун хусканăвне палăртмалла тирпейлĕн кăштшар, тĕллĕн-тĕллĕн хурать. Пĕчĕк ачан чун ыратăвĕ çинчен каламалла чух вăл «йывăр» сăрă ытларах илет. Чун хистевне итлесе ăна пĕрре кăна сулмаклăн хурать[37]. Хĕрачан сехре хăпнине вăл, тĕслĕхрен, çапла çырса кăтартать:

> — Ай-ай! Пĕтрĕм! Пĕтрĕм! — кăшкăрать Марине.
>
> Утă капанĕ патне чупакансkер, вăл палт! пăрăнчĕ те кас вĕçĕнчи çĕрулми пахчине кĕрсе кайрĕ. Вашт! çаврăнса пăхрĕ каялла, леш çынни курăнмарĕ. Лап! ӳкрĕ Марине йăран хушшине, çĕр çумне лăпчăнчĕ. Куçне ик аллипе хупларĕ. Чĕри талтталт! сикет, çурăм хыçĕнче такам тăрать пек, вăл сывлани те илтĕнет пек[38].

Чăваш чĕлхи, пирĕн шутпа, сăмахпа «ӳкерме» меллĕрех, çавăншăнах ăна импрессионистла чĕлхе теме те пулĕ[39]. Хальхи чăваш çыравçисем чĕлхе пуянлăхĕпе, курмалла тата илтмелле çырма май паракан тĕрлĕрен мелсемпе çителĕклĕн усă курмаççĕ-ха — искусствăн пĕрлехи аталанăвĕ çакна ыйтать пулсан та. Хăй вăхăтĕнче Д.С. Лихачев çак туртăма ак çапла пĕтĕмлетнĕ: «Границы между литературой и действительностью все время размываются. <...>Искусство все определеннее стремится создать иллюзию действительности — зримую и слышимую картину изображаемого»[40]. Тахçан литературăна чун панă символизм та сасă çырăвĕн тĕрлĕ мелĕсемпе, сăвă е проза кĕвĕлĕхĕпе, тĕрлĕрен тĕслĕ репризăсемпе т.ыт.те анлăн усă курнă.

Ева Лисина чĕлхе илемне ытараймасăр «пуçне çухатмасть», çыру техники тĕлĕшĕнчен Набокова аса илтерекен Илпек Микулай пек, хăйсем тĕллĕн тăракан сăнарсемпе эрешлесе çырасси уншăн ют. Сăнарлăх кунта çыравçăн «чĕлхи» кăна мар, вăл унăн илемлĕ шухăшлав тупсăмĕ те.

Лисинăн пĕр-пĕр ĕç-пуçа е япалана тĕпĕ-йĕрĕпе çырса парас йăла çук. Вăл темиçе вирлĕ пайрăмпах куçа курăнмалла сăнар калăплать. Тата çакăнтан тĕлĕнмелле: автор пĕр самантра çеç пулса иртекен пулăмсене те хут çине куçарма тăрăшать. Мĕн çинчен çырса кăтартнине темиçе пая ваклани саманта тытса чарма, ăна тăсма май парать.

Ева Лисинăн шухăшлавĕ монтажлă. Мĕншĕн вăл çырнисем таткаланчăк пулнине ăнланма автор хăй калани пулăшать:

> Пуçа литература вутне чиксен «çӳпçесене» тĕрĕслемелле пулчĕ: унта хам пĕлекенни, чуна савăнтараканни-хурлантараканни пур-и? Пур иккен — ачалăх. Çулĕсем тахçанах иртнĕ пулин те, асăмра анне те чĕрĕ, çатан çумĕнче мĕнле вĕлтĕрен тĕмисем ларнине те, хĕвел çаврăнăш çулçисем епле кăштăрттатнине те, хур кĕтнине те — пĕтĕмпе, пĕтĕмпе астăватăп! Эп вĕсене кино кадрĕсем пек куратăп — çырса кăтартмалли çеç. Чăнах та çак повеçе эпĕ питĕ хăвăрт çырса пĕтертĕм[41].

Çыравçă «кино кадрĕсемпе» шухăшланин сăлтавĕсенчен пĕри — аса илсе çырни-мĕн. Татăклă проза авторĕ А.П. Чехов та çапла çырнă иккен. Батюшков писатель ăна Ницца хули çинчен мĕн те пулин çырса яма ыйтсан вăл çапла хуравлать:

> Такой рассказ я могу написать только в России, по воспоминаниям. Я умею писать только по воспоминаниям и

никогда не писал непосредственно с натуры. Мне нужно, чтобы память процедила сюжет и чтобы на ней, как на фильтре, осталось только то, что важно или типично[42].

Аса илсе ӳкерессе импрессионистсен те хӑшӗн-пӗрин йӑлара пулнӑ.

Марине ҫинчен тата арҫын ачасемпе аслисем ҫинчен ҫырнисем повеҫре кӑмӑл е кӑмӑл сӗмӗсем тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗрне хирӗҫлеҫҫӗ. Айванлӑхпа ӑс хире-хирӗҫ пулни хӑй те илӗртӳллӗ ӗнтӗ. Мӗн чухлӗ илем пӗчӗк ачапа мӑн ҫын хушшинчи расналӑхпа пӗрпеклӗхе курса савӑннинче! Амӑшӗ чӑх чӗппи сыхлама кӑларнӑ Маринене сӑнаса пӑхар-ха. Вӑл хӑйне мӗн хушнине манса кайнӑ ӗнтӗ. Ӑна тӳпери пӗлӗтсен асамлӑ улшӑнӑвӗсем ҫавӑрса илнӗ, ҫавӑнпа вӑл амӑшӗ кӑшкӑрсан кӑна пуҫ тӑрринчи хурчкана курать:

— Кша! Кша! — кӑшкӑрчӗ Марине те.

Чӑх йӑмра айне пытаннӑ-мӗн. Чӗпписене ҫуначӗпе хупӑрланӑ. Марине вӑрӑм хулӑ илчӗ те ҫиллемес чӗп амӑшӗ хӑй ҫине сиксе ларасран сыхланса ӑна аякӗнчен тӗртрӗ.

— Ларакан чӑхха мӗншӗн тӑрмалан-ха? — тарӑхрӗ Маюк инке.

— Шутласа пӑхас! Пурте пур-ши?

Марине чӑхха сылтӑм енчен, сулахай енчен, кӑкӑрӗнчен чышрӗ, лешӗн кашни тӗкӗ вирелле ҫӗкленчӗ. Ура ҫине тӑратрех ӑна хӗрача. Вӑл чӗпсене шутлама пуҫларӗ, анчах лешсен йышӗ кашнийӗнчех тӗрлӗрен тухрӗ. Юлашкинчен Марине вуникке ҫитерчӗ те: «Пурте пур», — терӗ[43].

Повеҫре ҫак икӗ кӗвӗ ҫума-ҫумӑн пулни ҫинчен каланӑччӗ ӗнтӗ.

Асӑрханӑ-и эсир пӗр тӗс тепӗр тӗспе хӑйӗн сӗмне улӑштарнине? Ун пек чух япала е тӗссӗрленет, е хӑйӗн тӗсӗпе ҫуталса каять. Ҫаплах кунта та: пӗчӗк Марине чӑнласах выляни, чӑнласах савӑнни е хурланни «ӑслӑ-тӑнлӑ» ҫынсен шухӑшӗ ҫине перӗнни черчен кӗвӗсен янравне ӳстерет. Хӗрачан айван ӑспуҫне ҫыравҫӑ ӗненмелле палӑртма пултарать. Акӑ вӑл каллӗ-маллӗ шухӑшламасӑр, пуҫа мӗн пырса кӗнӗ ҫавна тӳрех тума та («Иван паттӑра хӑтарни»), йывӑр шухӑша путма та пултарать («Тавӑру»). «Мир является ребенку не как объект познания, но как объект, вызывающий в нем постоянно неизвестные чувства, то приятно возбуждающие, то угнетающие, подавляющие его», — тет тӗпчевҫӗ[44]. Ҫакӑ «Тавӑру» сыпӑкри Мари-

нешӗн тӗп-тӗрӗс. Милиционерсем Элекса инкенне хӑяр тӑпӑлтарнӑшӑн Арҫука тытса кайма килнӗ. Тахҫан малтан пиччӗшӗ Маринене ун ашшӗ милиционер, вӑл хӗрачана вӗсем патӗнчен хӑйӗнпе илсе каясшӑн тесе тыттарса каланӑ. Халӗ ҫакна аса илсен Марине, пӗр енчен, хӑй кам пулнине милиционер умӗнче уҫса пиччӗшне ҫӑлса хӑварасшӑн, тепӗр енчен, милиционер палласа илесрен унӑн чунӗ ҫук. Сехри хӑпнӑран тата чунӗнче икӗ туйӑм кӗрешнӗрен пӗчӗкскер тӑнран кайманни кӑна:

> Пӳртри ҫынсем таҫта тухса кайрӗҫ... Марине тӑр-тӑр чӗтренипех тӑрса юлчӗ. Сывлама, утӑм пусма хӑраса тӑчӗ вӑл. Майӗпен хӑй ирӗкрине туйса илчӗ... Сывласа ячӗ. Пӳртрен тухрӗ. Ӑна илсе каймарӗҫ. Ирӗкре вӑл. Савӑнмалла ун. Анчах та пыра ларнӑ, ҫӑтса та ҫӑтайми чӑмӑркка тӑнлавсене ыраттара пуҫларӗ... Пӗтӗм тавралӑх ют пек. Пӗр-пӗр япалана тӗкӗнсен вӑл Маринене тӗртсе ярассӑн туйӑнать.
>
> Ӗнерхи кун аса килчӗ. Ӑшӑччӗ. Ирхине Марине ҫӗр улми ҫумларӗ. Ҫӗр улми пахчи халь куҫ умнех тухса тӑчӗ: тӗттӗм симӗс тӗмсем ҫулҫисене ҫавӑра-ҫавӑра хумханаҫҫӗ. Марине йывӑррӑн куҫне хупрӗ: малашне ӑна ҫӗр улми тӗмӗсем хӑйсем патне те ҫывӑхартмӗҫ, «кай кунтан» тейӗҫ... Телейлӗ пурнӑҫ иртсе кайрӗ...[45]

Пӗчӗк чун мӗнле чӗререн ӗненме пултарнине те палӑртса хӑвармалла. «Шикли шикленнӗ, кӗрӗк пӗркеннӗ» сыпӑкри Марине, тӗттӗм каҫ тула тухнӑскер, хӑйӗн айван ӑсӗпе (анчах ку ытарайми илӗртӳллӗ айванлӑх) пӗр иккӗленмесӗрех хӑй куҫӗпе хӑй вупӑр карчӑкне курнине ӗненет[46].

Юлашкинчен ҫакна калас пулать: повеҫри палӑртнӑ енсене кура тӑра кунта импрессионистла туртӑм пуррине хирӗҫлеме йывӑр. «Последствие истинного искусства есть внесенное в обиход жизни новое чувство», — тенӗ Л. Толстой[47]. Е. Лисина хӗрача ҫинчен ҫырни шӑпах ҫав карта ларать. Чӑваш литературинче ача черченлӗхне витӗмлӗ кӑтартма пултарни сайра тӗл пулать[48].

**Литературӑпа асӑрхаттарусем**

[1] *Мандельштам О.* Слово и культура. М.: Советский писатель, 1987. С. 19.

[2] Цит. ҫакӑнтан илнӗ: *Цыпин Г.* Музыкант и его работа. Проблема психологии творчества. М.: Советский композитор, 1988. С. 37.

[3] Пӗр ҫын та илеме хӑй ӑссӗн кӑна тумасть. Ц. Тодоров калашле, «вообще всякое художественное произведение создается как параллель и

как противопоставление некоторому образцу» (*Тодоров Ц.* Поэтика // Структурализм: «за» и против». М.: Прогресс, 1975. С. 59). Çавăнпа ку е тепĕр искусство япалине хăй хальлĕн кăна тĕпчени сахал, тен, ăна ун пек тĕпчеме май çук та-и? «Истолковывать произведение как таковое и замкнутое в себе, не выходя за его пределы ни на мгновение и не проецируя его ни на какой иной объект, кроме него самого, — задача в некотором смысле невыполнимая», — тет Ц. Тодоров. Çакна шута илни тата тĕпчев никĕсне танлаштару меслетне хывни, ман шутпа, «Çĕньял ачисем» повеçĕн вырăнне тата пĕлтерĕшне уçса пама пулăшать.

[4] *Тодоров Ц.* Поэтика // Структурализм: «за» и «против». М.: Прогресс, 1975. С. 14.

[5] *Малер Г.* Воспоминания. Письма. М., 1968. С. 516.

[6] Ю.В. Яковлевăн килти архивĕ.

[7] Тăван Атăл. 1990. 3 №.

[8] *Дебюсси К.* Статьи, рецензии, беседы. М.; Л., 1964. С. 17.

[9] «Пастернак основывает свою поэтику на аффективном переживании действительности, личного и волевого в ней» (*Якобсон Р.* Работы по поэтике. М.: Прогресс, 1987. С. 32).

А. Хузангай Г. Айхи çинчен çырнисенче çакна палăртать: поэтăн сăввисенче туйăмсем ытларах чун асапĕ, йынăшу шайĕнче. Критик унăн «чĕлхине» Казимир Малевич сăмахĕсемпе ăнлантарать: «Если я слышу стон, я в нем не вижу и не слышу никакой определенной формы, я принимаю боль, у которой свой язык, стон, и в стоне не слышу слова. Поэт боится выявить свой стон, свой голос, ибо в стоне и голосе нет вещей. Они голые, чистые, образуют слова, но это не слова, а только ради буквы, в них нет материи, а есть голос его бытия, чистого, настоящего, и поэт боится самого себя».

[10] «Американская исследовательница Ольга Хьюз справедливо уподобила такой непосредственный взгляд на мир мировосприятию дикаря или ребенка: для Пастернака в определенной степени органично и то и другое» (*Баевский В.* Темы и вариации. Об историко-литературном контексте поэзии Б. Пастернака // Вопросы литературы. 1987. № 10. С. 58).

Айхине илес пулсан, ун çинчен калаçакансем çакна асăрхамасăр иртекен çук: «Вăл, сăмахран, йытта ахальлĕн кăтартса пама пултараймĕччĕ. Ăна ихтиозавр пекрех туса ытти йытăсенчен урăхла вĕртернĕ пулĕччĕ», — тенĕ поэтăмăр çинчен М. Светлов. (Цит. çакăнтан: *Сениэль М.* Кĕтрет çути // *Айхи Г.* Чĕрĕ тĕвĕ. Шупашкар, 1975. 86 с.)

Е. Лисинăн калавĕсем, «Çĕньял ачисем» повеçĕ те çапларах. Хв. Уяр ун пирки акă мĕн çырать: «Кĕнекене тытатăн та, пĕрремĕш йĕркеренех сана уçă сывлăш варкăшĕ пырса çапать. Çĕнĕлле каласа хунисем, хăйне евĕр курма пĕлни, япаласене, пулăмсене, ĕç-пуçсене урăхла, кĕтмен енчен кăтартса пани...» (*Уяр Хв.* Талантлă кĕнеке // Ялав. 1972. 5 №. 31 с.).

[11] *Арнхейм Р.* Искусство и визуальное восприятие. М.: Прогресс, 1974. С. 164.

[12] Французская живопись второй половины XIX в. и современная ей художественная культура: материалы научной конференции, 1971. М., 1972. С. 2.

[13] Импрессионистсенчен, лешсем хăйсен ӳкерчĕкĕсене халăх умне пĕрремĕш хут кăларсан, çапла тăрăхланă. Вулăр: *Гароди Р.* О реализме и его берегах // Иностранная литература. 1965. №3, 4. С. 206.

[14] Тӑван Атӑл. 1990. 3 №.

[15] *Уяр Хв.* Сӑмах мехелӗ. Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1980. 184 с.

[16] *Таллерова О.* Писателе — преми // Коммунизм ялавӗ. 1988. Январӗн 17-мӗшӗ.

[17] Автор тӳпе, ҫӗр, ял, ҫут ҫанталӑк ӳкерсе хайлав умӗнчех (прологӗнчех) ача-пӑча тӗнчине ҫавӑрать. Унӑн илемлӗ шухӑшлавӗ кунта халӑхӑн майлӑ.

[18] Эп кӑна мар, ку повесть ҫинчен ҫыракансем ыттисем те вӑл хӗвел ӑшшипе тулнине палӑртаҫҫӗ. Сӑмахран, вулӑр: *Хузангай А.* Солнечные поляны Синьяла // Дружба народов. 1979. № 1. С. 272.

Повесть хӗвеле майлӑн пулни те ӑна импрессионизма ҫывӑхлатать. «Яркий солнечный свет в различных его преломлениях был неизменно главным персонажем в их картинах, и это не только тогда, когда виден солнечный диск, красный у Моне или лимонно-желтый у Ван Гога. Солнце почти всегда присутствует в картинах импрессионистов благодаря отраженному свету. Даже сквозь лондонские туманы Моне пробиваются его лучи» (*Алпатов М.* Поэтика импрессионизма // Французская живопись второй половины XIX века и современная ей художественная культура. М.: Советский художник. 1972. С. 95).

[19] *Лисина Е.* Салтак ҫырӑвӗсем // Тӑван Атӑл. 1980. 7 №. 7 с.

[20] *Лисина Е.* Тепӗр ҫул та килетпӗр. Шупашкар, 1989. 3 с.

[21] «Хӑйсен ача чухнехи пурнӑҫӗ ҫинчен нумай писательсем ҫырнӑ», — асӑрхаттарать Трубина Марфин «Ача чухнехи» повеҫӗн хыҫ сӑмахне ҫыракан Л. Агаков (*Агаков Л.* «Ача чухнехи» повесть ҫинчен // *Трубина Марфи.* Ача чухнехи. Шупашкар, 1960. 211 с.). Писатель Хумма Ҫеменӗн «Ача чухнехи» повеҫне асӑнать. Вӗсем Е. Лисинӑн повеҫӗсенчен чылай расна. Хумма Ҫеменӗн повеҫӗнчи ӗҫсем, Н. Петров халашле, «пӗтӗмпех вуникӗ ҫулхи шкул ачи Тимуш куҫӗ умӗнче пулса иртеҫҫӗ» (*Петров Н.* Хумма Ҫеменӗ. Пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ // Хумма Ҫеменӗ. Шупашкар, 1960. 3 с.) пулсан, Е. Лисина ача-пӑча куҫӗпе курать, тӗнчери сас-чӗве вӗсен хӑлхипе тӑнлать, вӗсен пуҫӗпе шухӑшлать. Трубина повеҫӗнчи Мархва сӑнарӗнче ачалӑх сахал курӑнать. Ачан таса куҫне йӑлтах идеологи «шурӑ илнӗ». Ҫак жанр чӑваш литературинче мӗнле аталаннине сӑнама Уйӑп Мишшин «Ачалӑх кунӗсем» повеҫне илер-ха. Мишша сӑнарӗ кунта ҫӳлерех асӑннӑ Тимушпа Мархваран чылай чӗрӗрех пулса тухнӑ. Ку повеҫри ача Е. Лисинӑн арҫын ачисемпе пӗрешкелтерех — Уйӑп Мишши ача сӑнарне ачалла палӑртать. Трубина пек класс кӗрешӗвӗ ҫине, вырӑссенчен вӗренме кирли ҫине пусӑмламасть, ятне тунӑ япаласене юп тумасть. Автор хӑй ҫырни ҫине мӗнле пӑхни «кӑмӑллӑ ачаш стиль» (И.А. Андреев) сӗмӗнче палӑрать.

Каярах ачан тӗнчесисӗмне тӗпе хурса ҫырма тӑрӑшни Ю. Скворцовӑн «Киле таврӑнсан», В. Енӗшӗн «Пӗчӗк Шӑнкӑрч пӗчӗк мар», Д. Гордеевӑн «Чӗкеҫ йӑвине ан аркатӑр» повеҫӗсенче тӗл пулать.

[22] Кун пекки искусствӑра час-часах тӗл пулать. А. Пушкин, Л. Толстой... хӗрарӑм чунне те, арҫын чунне те пӗр пекех таранннӑн сӑнлама пултарнӑ пулсан, тепри хӑй хӗрарӑм пулсан хӗрарӑма туллин сӑнласа кӑтартать, арҫын пулсан — арҫынна. Вӗсемшӗн Роден: «Самыми лучшими сюжетами являются те, которые нам знакомы лучше всего», — тени тӗрӗс (*Роден.* Сборник статей о творчестве. М., 1960. С. 15). Тӗслӗхе Сурбаран ӳкерчӗкӗсене те илме юрать: «Образы (женщин. — *Ю.Я.*), создан-

ные Сурбараном, индивидуальны и портретны, но в них нет глубины чувств и мыслей, присущей его мужским фигурам. В женских моделях художника больше прельщает характерная для испанок миловидность, изящество и нарядность» (*Малицкая К.М.* Франсиско Сурбаран. М.: Искусство. 1963. С. 81).

[23] Çынсем калашле, «арçынла», анчах хăй шучĕпе, хĕрарăмла киносем лартакан Лариса Шепитько пĕрремĕшле туйăмсем çине ак çапла пăхать: «Бывает, что кинематограф воздействует на зрителя уже будучи обработанным посредством ремесла, профессии, т.е. уже вторично. И потому нужного высокого отзвука в сердце зрителя он иметь не будет. Достигнет прежде всего ума, лишь потом — сердца. Мой же расчет — прямо адресоваться к эмоциям, а уже потом к верхним этажам сознания. И я убеждена, что, поскольку наше искусство обращается к эмоциям, живет образами, надо сначала воздействовать именно на чувственное восприятие, прежде всего на него, а уж затем и на сферу сознания. В основе такого киноискусства — первичность авторских ощущений, только первичность. Если ты щедр на это, если способен это передать, тогда фильм будет иметь ту мощь заряда, которая пробьет стереотип, привычку восприятия, определенную систему недоверия и тому подобное» (Последнее интервью. Лариса. Книга о Ларисе Шепитько. М.: Искусство, 1987. С. 188).

[24] *Яковлев Ю.* Ырă сăмах // Пионер сасси. 1989. Декабрĕн 2-мĕшĕ.

[25] *Цыпин Г.* Музыкант и его работа. Проблема психологии творчества. М.: Советский композитор, 1988. С. 107.

[26] Борис Пастернак Прокофьевăн «Золушка» балетĕнче Галина Уланова ташланине курнă хыççăн ун патне çапла çырса янă: «Я особенно рад, что видел Вас в роли, которая наряду со многими другими образами мирового вымысла выражает чудесную и победительную силу детской, покорной обстоятельствам и верной себе чистоты. Поклоненье этой силе тысячелетия было религией и опять ею станет, и мне вчера казалось (или так заставили Вы меня подумать совершенством исполненья), что эта роль очень полно и прямо выражает Ваш собственный мир, что-то в Вас существенное, как убежденье» (Борис Пастернак — Галине Улановой // Советская культура. 1988. 10 декабря). Вырăс писателĕн сăмахĕсем Ева Лисинăшăн та тĕрĕс.

[27] Ю.В. Яковлевăн килти архивĕ. Д.Н. Овсянико-Куликовский çак пулăма питĕ тĕрĕс ăнлантарать: «Всякое художественное произведение, хоть сколько-нибудь заслуживающее этого названия, возникает как вопрос, на который хочет ответить художник, как задача, решить которую он стремится. Этот искомый ответ, это решение составляет потребность его ума, его души. Созданием произведения он и удовлетворяет этой потребности, — он, так сказать, «отделывается» от неё, как Лермонтов отделался от своего «демона» — стихами. В этом-то смысле художник творит для себя» (*Овсянико-Куликовский Д.Н.* Из лекции об основах художественного творчества // Вопросы теории и психологии творчества. Т. 1. Изд. 2. Харьков, 1911. С. 16).

[28] Тăван Атăл. 1990. 3 №.

[29] *Толстой Л.Н.* Что такое искусство? М.: Современник, 1985. С. 240. Писателĕн шухăшĕ ĕненмеллерех пултăр тесе тата çакă пултарулăхăн хăйне евĕр саккунĕ пулнине палăртма тесе ун çумне М. Равель тата Г. Уланова

каланисене хушса çырам. Жанна Леле çамрăк пианистка патне М. Равель ак çапла çырнă: «Продолжайте и впредь так играть для самой себя, не заботясь о публике. Впрочем, это самое верное средство заслужить ее благосклонность» (Равель в зеркале своих писем. Л., 1962. С. 93). Г. Уланова калани те вичкĕн шухăшлă: «Выходя на сцену, артист должен представить себе, что его окружают не три, а четыре стены и он танцует не для зала, а для себя...» (Литературная газета. 1957. 27 июля).

[30] Чуна уçса çырас туртăм тата Хв. Агиверĕн пысăк. Хăй вăхăтĕнче ăна «Икĕ аркăллă кĕпе» публицистикăллă калав çинчен çырнинче Б. Чиндыков асăрханăччĕ: «Еплерех çын-ши вăл, çак хăйне хăй хывăнтарса, чун-чĕрине рентген ӳкерчĕкĕсемпе тĕрĕслесе пăхасшăнскер? <...> Калаври тĕп сăнар автора пит çывăх тăрать пулас. Тата çитменнине çырасса та калавне пĕрремĕш сăпатран çырнă-çке. Ку çеç те мар-ха, калаври кашни сăмах — чуна уçса панăскер, тӳрĕ кăмăлпа çырнăскер. Хăйĕн кун-çулне, шухăш-кăмăлне тĕлĕнсе каймалла, тимлĕн пĕрчĕн-пĕрчĕн тĕпчет Агивер. Ăна хăйне те кăштах хăратнă-и, тĕлĕнтернĕ-и çавăн пек ытла та, пĕр пытармасăр чун тĕпĕнчине халăх умне кăларасси, е вăл хăйĕн чунĕ ыратни çинчен çырма урăхларах форма кирлĕ тесе-ши «калав» мар, «публицистикăллă калав» тесе палăртнă çĕнĕ хайлав жанрне» (*Чиндыков Б.* Чун сийĕсем // Тăван Атăл. 1985. 5 №. 72 с.).

[31] «Антипатия, которую в наши дни вызывает музыка Малера у части слушателей и критиков, весьма симптоматична: речь идет о праве искусства на неприкрытую эмоциональность, искренность, на человечность в эпоху, когда чувству нередко предпочитают конкретную эмоциональность, живому человеку — скрывающую душу маску, условность, марионетку» (*Барасова И.* О Густаве Малере // *Малер Г.* Воспоминания. Письма. М., 1968. С. 39).

[32] «Как можно достичь необходимой символизму суггестивности, если поэтический образ идеи не будет образом чувственным? Лишивший себя (в силу абстрактности, иррациональности своего идеала) объективно-природной формы символизм неизбежно обрекал себя на то, чтобы питаться формой субъективно-природной, т.е. импрессионистической, «субъективизирующей объективное» (*Андреев Л.Г.* Импрессионизм. М.: МГУ, 1980. С. 36).

[33] Вулăр: *Кулиева Р.Г.* Реализм А.П. Чехова и проблемы импрессионизма. Баку, 1988.

[34] Пурнăçа тĕлĕнмелле сăнласа кăтартнине наукăра «остранени» теççĕ. Импрессионизм шăпах çак мел çинче хывăннă та ĕнтĕ. Акă импрессионизма тĕпчекенсенчен пĕри калани: «Импрессионизм — это не философия и не техника, импрессионизм — это искусство, и в основе его лежало новое художественное видение мира, новая поэтика. Нечто подобное тому, что наши литературоведы 20-х годов именовали «остранением» (*Алпатов М.* Поэтика импрессионизма // Французская живопись второй половины XIX века и современная ей художественная культура. М.: Советский художник. 1972. С. 90).

[35] Тăван Атăл. 1990. 3 №.

[36] Психология детского возраста и речь детей // Вопросы теории и психологии творчества. Т. 4. Харьков, 1913. С. 162.

[37] Ăнсăртран мар ĕнтĕ Е. Лисинăн чи юратнă кĕнекисенчен пĕри вăл — Винсент Ван Гогăн дневникĕ. Çыравçă художник хатĕр-хĕтĕрĕнчен

хăшне-пӗрне ăша хывнă та-и тен? Ван Гогшăн литература калама ҫук ҫывăх пулнă, хăй калашле, «сăмахсемпе мӗнле ӳкересси» ҫинчен шутланисем те ун пайтах. Ҫак ик ăстан чун пӗрлӗхӗ тӗнчене пӗр пекрех, синкеррӗн курассинче те палăрать. «Хăвăн хайлавусене ӳкерсе кăтарт-ха тесен эпӗ калавсене ҫапла кăтартнă пулăттăм: по холодному, почти прозрачному, с чуть-чуть зеленоватым оттенком фону разбросаны сгустки энергии. Эти «сгустки» объемом небольшие, одного цвета, чуть-чуть сияющие, но они сильно закручены, близки к взрыву! «Ҫӗньял ачисем» — фон тот же, но по нему разбросаны теплые пятна (!) — разноцветные, разной формы (но не круглые)» (Ю.В. Яковлевăн килти архивӗнчен). Ева Лисина хăйӗн калавӗсем ҫинчен мӗн калани Ван Гогăн сăрă ӳкерчӗкӗсене те аса илтерет. Чун кӳтсе ҫитсе татăласла туртăннă самантсенче ӳкернӗ чăн «ахахсем» (шедеврсем) унăн пайтах. Е. Лисина асăнакан «ӳкерчӗкне» тата Ван Гогăн «Ҫăлтăрлă каҫне» танлаштарăр. Вӗсен иккӗшӗн те синкер темле майпа ҫӳлти (космос) вăйсемпе ҫыхăннă.

[38] *Лисина Е.* Ҫӗньял ачисем. Шупашкар, 1971. 58 с.

[39] Чăваш чӗлхи евӗрлев сăмахсемпе пуян. «В современных нам европейских языках — я имею здесь литературные идиомы — мы находим для наших подражаний очень мало соответствий: европейские мимемы слишком малочисленны и поэтому нередко чересчур общи, ибо распространяют свой обхват на безмерно широкие области явлений; тогда, в сравнении с мимемами приволжских народов, они поражают нас своею расплывчатостью и отсутствием свежего колорита, которое, однако, выявляется для исследователя только при ближайшем рассмотрении тех и других» (*Ашмарин Н.И.* О морфологических подражаниях в чувашском языке. Казань, 1928. С. 8).

Уйăп Мишшин «Ачалăх кунӗсем» повеҫӗнчи Николай Дмитриевич вӗренекенсене ҫапла калать: «Халăх илеме юратать. Чăвашсем «ҫил вӗрет» тесе кăна каламаҫҫӗ, «вăш-вăш туса ҫил вӗрет» теҫҫӗ... Апла каласан ҫил вӗрни сисӗнет, илемлӗрех илтӗнет. «Шыв юхать» тесе кăна каламаҫҫӗ, «шăнкăр-шăнкăр шыв юхать» теҫҫӗ. Ун пек каласан шăнкăртатса шыв юхни илтӗнсе тăрать» (*Уйăп Мишши.* Ачалăх кунӗсем. Шупашкар, 1962. 107 с.).

[40] *Лихачев Д.С.* Прогрессивные линии развития в истории русской литературы. О прогрессе в литературе. М., 1977. С. 52.

[41] Тăван Атăл. 1990. 3 №.

[42] *Чехов А.П.* Полн. собр. соч. и писем в 30 томах. М.: Наука, 1980. Т. 4. С.123.

[43] *Лисина Е.* Ҫӗньял ачисем. 6 с.

[44] Вопросы теории и психологии творчества. С. 103.

[45] *Лисина Е.* Ҫӗньял ачисем. 46 с.

[46] «Бог пустит детей в рай не за копейки или бублики, а за то, что душа ребенка, несмотря на свои наивные помыслы, чуткостью своею поднимается на самые высоты религиозного настроения» (*Айхенвальд Ю.* Силуэты русских писателей. М., 1909. С. 19).

[47] *Толстой Л.Н.* Что такое искусство? С. 265.

[48] Е. Лисинăна пӗр Н. Плониш (сăрă ăсти) кăна ҫывăх тăрать темелле. Анчах унăн ӳкерчӗкӗсенче ачалла айванрах тӗнчетуйăм яланах хăй ирӗккӗн ҫуралмасть пулас.

# ТĔНЧЕ ШАЙĔНЧИ ЕВА ЛИСИНА

## ĔНЕ ЙĔРĔПЕ
### («Улăхпи» кĕнекери ĕне сăнарне тĕнче культура анлăшĕнче тата аваллăх тарăнăшĕнче курма пăхни)

«Чăвашсен истори çулне йĕрлесен акă мĕн курăнать, — тенĕччĕ калаçура 1986 çулта Геннадий Степанов ăсчах. — Вĕсем Тухăçран тухса хĕвел хыççăн утнă».

Телей саккунĕсем тесе
Шыва та вăрмана пуç тайнă.
Кун-çул хăвачĕ йĕрлесе
Çичĕ çăлтăр айне, алтăр çăлтăр айне
Мĕн авалтан эпир танкканă,
Китай панчен те Индирен
Эпир иртсе шыранă канăç[1], —

çырнă Ухсай Яккăвĕ «Халăхăн ылттăн кĕнекинче» (1937). Чăвашăн аваллăхĕ тĕтреллĕ. Ăна сирме сăвăçăн чун хăвачĕ пулнă. Вăл чăн-чăн маг, тухатмăш-пĕлӳçĕ пек япала-пулăм тĕшшине курма пултарнă. Çирĕм улттăри çамрăк чăваш историне Алтăр çăлтăрпа çыхăнтарса пăхни, ун витĕр куракан ăс-туйăмĕ тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерет.

Çилсĕр, хӳтĕ айлăма
Йăлтăрти вучах чĕртсен
Юмахпа халап яма
Пухăнаççĕ ваттисем, —

çырать вăл «Çул» кĕнекере[2].

Кăвайт çути çеç мар, Заратуштра çути те ӳкнĕ Ухсайăн сăвă йĕркисем çине.

«Çутăран тăранса пурăнатпăр, теççĕ чăн чăвашсем. Вăл тĕлĕнмелле пысăк философи. Вăл хĕвеле, уйăха, çăлтăра пуç çапатпăр тенине пĕлтерет»[3], — тесе çырать Иосиф Дмитриев.

«Несĕлсем авал-авал хĕвел туррине Шăваш ят панă, — шухăшлать Арсений Изоркин. — Чăваш тĕнĕ — Сăваш тĕнĕ»[4].

Карти-карти кикак-кикак хур кайăк,
Эсир вĕçетĕр ирĕк пĕлĕтре,
Тархасшăн, çитĕр ман тăван хире,
Анне илтмелĕх юрласа çеç кайăр[5], —

çунса кĕлленнĕ Белгород çийĕн вĕçекен хур кайăк сасси Ухсай чунĕнче аваллăх сассине, пĕлĕвне вăратнă («Карти-карти кикак-кикак хур кайăк» сăвва 1943 çулта çырнă). Ĕлĕкхи ĕмĕрсем чăвашăн тӳпери çулĕ ăçталла выртнине систернĕ.

«Çимĕк каçхине вара çамрăксем ушкăнăн-ушкăнăн хур кайăксем пек карталанса сĕм вăрман айĕнче юрласа çӳренĕ», — аса илнĕ Мария Матвеевна К.В. Иванова 1964 çулта[6]. К. Ивановпа Я. Ухсай ялĕнче — Слакпуçĕнче — çеç мар çапла çӳренĕ пур чăваш та.

«Салтак ачи юлташĕсемпе хур кайăксем пек карталанса çӳренĕ», — çырать В.Г. Родионов[7]. Хулпуççи урлă янă шур тутăрсемпе çунатсем пек суллана.

Вилĕм пурин те юнашар çӳрет. Салтак вара вилĕмпе куçакуçăн тăрать. Вилсен-тусан хур кайăк çулĕпе каясса пĕлтернĕ ку йăла. «Çăлтăр витĕр çул курăнать, эпир каяс çул марши?» Ăçта илсе каять ку çул?

Хур акăш, шур акăш,
Пашне çинчен çӳлелле
Харăс вĕçсе кайрĕç тет,
Сĕтлĕ кӳлĕ хĕррине
Вĕçсе кайса ӳкрĕç тет[8], —

«Элихун» поэмăра (1926) аваллăх сассине тимленĕ Илле Тăхтине çапла курăнать ку çул вĕçĕ.

«Йывăр тăпру çăмăл пултăр, чуну сĕтлĕ кӳлĕре тасалтăр», — тет чăваш паян та хăйĕнчен ĕмĕрлĕхе уйрăлса каякана. «Салтака вара ашшĕ-амăшĕ: “Сĕт çулĕпе кайса çу çулĕпе таврăн”, — тесе пиллесе ăсатнă», — тет В.Г. Родионов[9].

Сĕтне те, ҫуне те параканĕ – ĕне. Эппин, чăваш тĕнчекурăмĕнче те, тĕнĕнче те ĕне вырăнĕ вышкайсăр пысăк. Еплерех тĕлĕнмелле космос ӳкерчĕкĕ тухса тăрать куҫ умне: хур кайăк ҫулĕпе этем чунĕсем сĕт кӳлле, ĕне патне ăнтăлаҫҫĕ.

«Улăхпи килчĕ-ҫке! Хальхинче эпĕ ăна ҫывăхранах куртăм. Мана пуринчен ытла унăн куҫĕсем тĕлĕнтерчĕҫ: тап-таса куҫсем... Пурне те ăнланакан, пурне те куракан куҫсем... Жданка куҫĕсемех...»[10] — ҫапла вĕҫлет хăйĕн повеҫне Ева Лисина. Ăна вăл ĕнене халаллать. «Вăрҫă ҫулĕсенче лаша вырăнне ĕҫленĕ, кайран хĕне кайса вилнĕ ĕнене — Жданкăна — асăнса», — ҫырнă кĕнеке хуплашки ҫине. Тĕлĕкре те курать ҫыравҫă ĕнене.

«Хăш чухне пурнăҫра пулниех тĕлĕкре уҫăмлăн та тĕптĕрĕс курăнать. Ҫав каҫхине мана чăнни, хам ача чухне курни, тĕлленчĕ. Пирĕн ĕне пурччĕ — Жданка. Эпĕ тĕлĕкре ҫавна курнă... <...>Вăрҫă вĕҫленнĕ кун вилчĕ вăл. Эпĕ витене чупса кĕтĕм те ун умне чĕркуҫленсе лартăм: "Ан вил, Жданка, ан вил! Вăрҫă пĕтрĕ, эпир ҫĕнтертĕмĕр, малашне пахча та сухалamăн, вут та турттармăн", — йăпатрăм ăна сивĕ тарпа хупхура пулса кайнă хушкинчен ачашласа.

Ир ҫинче курнă эп ку тĕлĕке. Вăрантăм та тĕлĕнсе кайрăм. Ача чухне ман яланах Жданка унччен, йывăр ĕҫе кӳлĕниччен, мĕнлерех пулнине курас килетчĕ — эпĕ ăна ун пек пĕрре те курман-ҫке-ха! Халь ăнкарса илтĕм — вăл шăп та шай Улăхпи пек пулнă! Тап-таса куҫлă, пĕтĕм таврана ырлăх саракан, тăнăҫлăха хӳтĕлекен, ҫынсене пулăшакан-ҫăлакан чун пулнă вăл!..»[11] — ҫак йĕркесем «Эпĕ те аса илтĕм» сыпăкран. Жданка кăна килмен ҫыравҫă патне тĕлĕкре — ĕнепе пĕрле аваллăх сывлăш хăвачĕ килнĕ.

(«Генилле хайлав ҫыртăм», — тенĕччĕ вăл мана «Улăхпи» кĕнекене вĕҫлесен. Килĕшетĕп. Аваллăх сывлăшĕ-пĕлĕвĕ тĕлĕшĕнчен вăл чăнах та генилле. Унта темскер, эпир тĕлĕкре, чун сисĕмлĕхĕпе сĕмленме кăна пултараканни, кĕнех.)

Пирĕн ăру, ытти ăрусемпе танлаштарсан ытлă-ҫитлĕ ачалăхра ӳснĕскер, ĕне хакне пĕлмест те. Салтак ачисемшĕн, нушаллă ӳснисемшĕн вăл, тен, Турăпа та пĕр тан. «Пирĕн ялта 100 кил пулнă, — аса илет Анатолий Розов вăрҫă вăхăтне. — Камăн ĕне пулман, вĕсен килĕнче хăй ҫути сӳнчĕ. Тăрвашра вĕсен шучĕ вунпиллĕк... Микихверсем, кайри кӳршĕри Семен Лукичсем... Ĕне ҫитерме ҫӳреттĕмĕр Вăрман кассине, Виҫ

çырмана, Ушак пуçне, Киремете, Потши çырмине, çул хӗррине çерем çине... Пӳрт умӗнче урамри ем-ешӗл курӑк çине выртаттӑн та тӳпенелле пӑхаттӑн. Ылтӑн пӗлӗтсем çакӑнса тӑратчӗç»[12].

«Пулас ӑстана ӗне пуртан пӗлӗтсем ылтӑнӑн курӑннӑ», — тесе шухӑшлама тивет. Розов палӑксем ӑсталать («Автан», «Çӗрпӳ хули 400 çул тултарнӑ» монумент т.ыт.те). Ачалӑх унӑн пултару çӑлкуçӗ кӑна мар, вӑл хӑй те унтах пурӑнать теме пулать Анатолий Сидорович пирки. Шел, вӑл пиртен ӗмӗрлӗхех уйрӑлса кайрӗ. Шанас килет, Чӑвашра унпа пӗр шухӑшлӑ ӑста тупӑнӗ те вара пӗлӗтсене ылтӑнӑн курӑнма май паракана — ӗнене — пӗр палӑк майлӗ. Ку тӗлӗшӗнчен халӗ Чӑвашра ырӑ тӗслӗх пур — Ева Николаевнӑн «Улӑхпи» кӗнеки. Тен, ытти çыравçӑсем те ача чухне хӑйсен пурнӑçне татма паман чӗрӗ чуна — ӗнене — аса илӗç. Вара ӗнене палӑк лартасси ӗмӗт кӑна пулмӗ, сӑмах вӗççӗн çеç юлмӗ.

Палӑкӗ те пулсан ахаль палӑк пулмӗ. Ӗне сӑнарӗ, чӑн-чӑн сӑнар, символ пек пысӑк, ӗмӗрхи, ӗмӗр чӗрӗ хӑватсем енне çавӑрӗччӗ пире. Вӑй парӗччӗ. (Пытармастӑп: «Улӑхпи» пирки çырнӑ чух уйрӑмах темле хавхалану туятӑп. «Шалти куç» умӗнче халӑхӑмӑрӑн истори кӗнекийӗ лас-лас уçӑлса хупӑнать тейӗн. Кӗнекине эп, паллах, вулаймӑп. Мӗншӗн тесен ун çырӑвне хальлӗхе пӗлсех çитерейместӗп-ха.)

Чӑвашӑн телей кӗнекине ӗне çисе янине пурсӑмӑр та ачаранах илтнӗ. Халӗ тин çапла каланин чӑн пӗлтерӗшне тавçӑратӑп пек.

«Пӗр-пӗр ӗнене пуссан, — çырнӑ Иван Юркин XIX ӗмӗр вӗçӗнче, — унӑн хырӑмлӑхӗнче кӗнеке евӗрлӗ пӗр япала пур, ав çавна касса илсен чӑвашсем çамрӑксене: «Чӑваш кӗнеки çакӑ пулас?» — тесе кулса кӑтартаççӗ. Ак çак легендӑран пирӗн чӑвашӑн тахçанхи авалхи саманасенче кӗнекесем пулни палӑрать»[13].

Чӑвашӑн ӗнтӗ çырнӑ кӗнеке халӗ пайтах. Анчах телей кӗнеки çаплах çырӑнмасть-ха. Шалти сасса мар, тулашри шава ытларах кӗртнӗрен мар-ши, тетӗп эпӗ. «Чӑваш çын ӑшне кӗме юрататать, — тенӗччӗ Георгий Фомиряков художник. — Тӗрӗссипе вара, хӑв ӑшна кӗмелле. Апла тума вӑл хӑрать».

«Шалти кӗнекене» ытларах вулас пулать тесе систерместши ӗнепе çыхӑннӑ халап та.

Халӑхӑмӑр Тухӑçран тухнине астусан çапла шутлама май килет. Хӗвелтухӑçӗнче çырнӑ, çырӑннӑ чӑнлӑха шансах пӗтер-

меççĕ — сăмах вĕççĕн каланине маларах хураççĕ. Чунран шăранса тухмалла калас тенине. «Çыртăм та — чуна пушатрăм», — тенине илтме пулать çыравçăсенчен. Тен, кирлĕ мар ăна пушатма? Тен, хăш-пĕр япалана (халăхшăн, çут тĕнчешĕн кирлине) ăшрах йĕтса çӳремелле.

Çак тĕнчене тĕпченĕ çынсемпе
Калаçсанах кичем пусать темме.
Сăлтавĕ пур. Пуплеççĕ пит хитре,
Анчах пĕлмеççĕ чун тĕпсĕрлĕхне.

Ăс-тăн парса пуплекене юратăр,
Çапах та, сых ятне, çакна ан манăр:
Пур сăмахран виле шăрши перет,
Çакна мансан сире черет çитет[14].

Иосиф Дмитриевăн çак икĕ тăват йĕркийĕн тымарĕсем Тухăç поэзийĕнче, Тухăçра. Тухăçĕ вара пирĕн чунра. Кĕресех пулать пирĕн, чăвашсен, хамăр ăша, тупмаллах хамăрти Тухăçа. Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш филологи факультетĕнче Тухăç литературине вĕрентме пуçлани çак пулăмăн палăрăмĕ пулĕ тетĕп. «Пирĕн яшлăхра вĕренӳ программисенче Анăç литератури пулнă, — чунне уçса калаçать студентсемпе Денис Гордеев çыравçă. — Вуласса вуланă. Анчах ăша хывман. Çамрăклăхра ăша хывни кăна нумайлăха вырнаçать. Халь тин улшăнма май çук. Çамрăк ăру Тухăç литературине тишкерме, унăн йăли-йĕркине тĕпчеме тытăннăшăн савăнатăп. Пирĕн чăваш литературине те, тен, урăх сĕм çапĕ»[15]. Чăваш художникĕсем ку тĕлĕшĕнчен маларах пыраççĕ. Акă Ф. Мадуров шепсут (скульптор) чунĕ туртнипе Египетра пулать. Луксорпа Карнака храмĕсене ачашлать. Чăвашсен те чи аслă турри Ра пулнă тесе ĕненсех ĕненет. «Çут тĕнчере мĕне ĕненессине, мĕне палăк лартассине илсен пирĕн чăн малтанах Хĕвеле палăк лартмалла», — тет.

Ĕне йĕрĕпе утиччен эпĕ Федор Иванович чăваш Туррине Египетра шыранине йышăнмастăмччĕ, Н.И. Егоров калашле: «Чăваша чăваш пулнишĕн юратмалла», — теттĕм. Халĕ унăн сĕмленĕвĕсене ăнланма пуçлатăп пек. «Пирамида тексчĕсенчен» акă мĕн паллă. Ра турра Тӳпе ĕне çуратнă. «Ылтăн пăру» тенĕ ăна.

В.Д. Димитриевăн «Чувашские исторические предания» кĕнекинче чăвашсем вырăнтан вырăна ĕне, вăкăр хыççăн куç-

нине пĕлме пулать[16]. «Шалти кĕнекене», выльăх туйăм-сисĕмне шаннă иккен пирĕн мăн асаттесем. Çапла мăйракапа хĕвел ирĕксĕрех пĕр сăпатланаççĕ (Г. Фомиряков ӳкерчĕкĕсенчи пекех). Ĕне мăйраки хушшинчи хĕвел илсе çитернĕ пулать чăваша халь пурăнакан вырăна...

Тĕрĕс çулпа илсе кайрĕ-ши мана ĕне çулĕ — пĕлместĕп. Ĕнене несĕлсем ĕненнĕ. «Ĕненӳ» сăмахра та «ĕне» сăмах илтĕнет. «Вĕсем Турра çывăхрах пулнă. Кăвак пĕлĕт ĕлĕк аялтах пулнă тет»[17]. Унтанпа вăл хăпарса та хăпарса пырать. А. Розов сăнанă ылтăн пĕлĕтсем çавсем ĕнтĕ вĕсем. Сар кун çĕршывĕн шевли вылять вĕсенче. Тӳпенелле пăхакансем, пирĕн телее, пур-ха. Чăваш тĕнчи, çĕр çинчи халĕ арканнă пулсан та, çӳл тӳпере ун сăнарĕ çаплипех илемлĕ, тулли...

## МĔНЕ ПĔЛТЕРЕТ-ШИ ШĂП ТА ШАЙ ВУНИКĔ СЕХЕТРЕ КУÇА КУРĂНАКАН ĔНЕ?

### («Улăхпи» кĕнеке вăратнă шухăш-кăмăл)

«Кирек кама та унта пăхса аташмалăх пур», — тенĕччĕ Геннадий Исаев художник Анатолий Розов ӳкерчĕкĕсем пирки. Ева Лисина кĕнеки пирки те ман çавнах калас килет. Вăл пĕрре пăхма ансат, ача-пăча япали темелле. Шаларах кĕрсен — çухалса-çĕтсе те кайăн вара. Çыравçă улшу калаçнине туйма пуçлатăн. Ача-пăча сăмахлăхĕнчи пулмасла халап-юмахри пек:

Шăтман хăва тĕпĕнчен
Çуралман куян тухса тарнă,
Урасăр Кавĕрле хăваласа кайнă,
Суккăр Пăлаки пăшалпа персе тытнă,
Хурансăр çакнă,
Çимесĕр тăраннă[18].

Кунта абсурчĕ те, парадоксĕ те пĕрле. Çапла кулса-шӳтлесе халăхăмăр ача-пăчана шутлама вĕрентнĕ. Çын сăмахне ан шан, хăв пуçупа шутла. Астăватăп-ха: ача чухне мана, пĕр ултăрискерне, анне вăхăтлăха тесе ĕне пăхма хăварнăччĕ. Кĕтĕве ярас умĕн хуçисем ĕнисемпе кашни хăй тухатчĕç, выльăх пĕрпĕринпе ан тĕкĕштĕр тесе вĕсене хăнăхтаратчĕç. Иван мочок (мучие пирĕн патра çавăн пек калаççĕ) арăмĕ сапурпи (эрĕм) татать.

— Унпа мĕн тăван? — ыйтатăп эпĕ.

— Унран пит тутлă яшка пулать, — тет вăл. — Тат эс те.

Эпĕ те татрăм хайхи. Килте кăна ку йӳçĕ курăкран яшка пулманнине каларĕç. Çук, улталарĕ теес килмест ман вăл хĕрарăм пирки (халĕ ĕнтĕ вăл çĕре кĕнĕ, йывăр тăпри çăмăл пултăр). Вăл мана хăйне майлă ăс пачĕ, вĕрентрĕ.

«Атте çураличчен асаттепе ĕне кĕтме кайрăмăр», — сĕм авалтан çапла юмахласа ӳснĕ чăваш ачисем. Çавăнпа вĕсем ĕлĕк ăслă пулнă, пысăк патшалăх тытса тăма пултарнă.

Ева Лисина кĕнекинче те çав авалтан килекен, этемре тавçăрулăх вăратакан вăркăша туятăн. Куç хĕссе, чеен калаçать çыравçă вулаканпа. «Эп тем те калăп унта, эс хăв шухăшла, тăнла, чăн тупсăмна хăв туп» тенешкел.

> Пĕрех куртăм вăл ĕнене, — юмахлать çыравçă. — Ку ĕç ирхинехи çумăр хыççăн пĕр харăс икĕ асамат кĕперĕ тухнă кун пулса иртрĕ. Шăп та шай вуникĕ сехетре. Эп юрлакан сехет çакса çӳретĕп. Çав сехет талăкра икĕ хутчен — кăнтăр варринче тата çĕр варринче — юрласа илет. Çавăн чух шăпах сехет юрлама пуçларĕ те, эпĕ темĕскершĕн кантăкран пăхрăм. Улăхра ĕне çӳрет! Эпĕ ăна тӳрех палласа илтĕм! Вăл яланхилле васкамасăр пыратчĕ, умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ пĕлĕт — лĕпĕшпе йĕпвăрри çаврăнатчĕ[19].

Улăхпие курни, автор шучĕпе, темле чăнлăха çывăх пулнипе танлашать. Улăхпие курми пулнă çын — пĕтнĕ çын иккен. «Улăхпие курманни аван мар. Ку ырра пĕлтермест»[20], — çавнашкал ăнлантарать Е. Лисина Улăхпи ятлă хăвата. «Сутмалла» вылямасть-ши çыравçă вулаканпа? Вылять пулсан — еплерех-ши Улăхпин чăн пĕлтерĕшĕ?..

> Вată юман хыçĕнчен
> Шуйттан татах хĕтĕртет, —

тенĕ Кĕçтенттин Ивановăн «Шуйттан чуринче»[21].

Улăхпи те пире хăй хыçĕнче мĕн тăни пирки шутлама хистет. Улăхпи текен пуçватмăш тупсăмне тĕнче литературине, культурине шута хумасăр тупма май çук.

> Эп ял хуçалăх академийĕнче вĕреннĕ, — çырнăччĕ Ева Лисина пĕр çырура (1990. Кăрлач, 12). — Манăн ял хуçалăх институтĕнче вĕреннипех пулмарĕ курăнать, мĕншĕн тесен малтанхи çулĕсенче кашни кун тенĕ пекех Ленин библиотекине

> ҫӳремеллеччӗ — Айхи сӗтӗрет! Вӑл ума кӗнеке купи пырса хуратчӗ: “Ҫаксене вуласа тух, кайран мана хӑшӗ ытларах кӑмӑла кайнине каласа пар”. Кӗнекисем пурте тенӗ пекех сӑвӑ кӗнекисемччӗ. Ялта нимӗн вуламасӑр тенӗ пек ӳснӗ хӗрача, эп тӳрех лайӑх кӗнекесем хушшине лекрӗм. Пастернака та, Цветаевӑна та эпӗ ҫавӑн чухне вуланӑ. Кайран тете (пичче) ыйтатчӗ, мухтаса та илетчӗ: “Маттур хӗрача эс!”, хӑш чухне тусӗсем умӗнче те мухтанать: “У моей сестры верное чутье, хороший вкус”. “Ленинкӑран” консерваторине каяттӑмӑр (юнашарах-ҫке)[22].

«Начар литература вуласа курман та, — тенӗччӗ вӑл Чӑваш патшалӑх университечӗн студенчӗсемпе тӗл пулнӑ чух (1991). — Эп тӳрех лекнӗ лайӑх литература аллине».

«Лайӑх литература» «Улӑхпи» повеҫе те витернӗ. Вӑл тӗрлӗрен майпа Морис Метерлинкӑн «Сенкер кайӑкӗпе», Н.В. Гоголӗн «Миргород» кӗнекери «Старосветские помещики» хайлавпа, Валентин Распутинӑн «Матӗрӑпа сывпуллашнипе» хутшӑнӑва кӗрет, вӗсене сас парать...

«Ырӑ сыхлавҫӑ»[23], — тет ҫыравҫӑ Улӑхпи пирки. Вӑл пӗтмелли яла сыхласа хӑварнӑ. Ҫакӑ мана тӳрех Матӗра хуҫине аса илтерчӗ:

> Каҫ пулсан вара, Матӗра ыйха путсан, шыв арманӗ ҫыранӗ айӗнчен пӗчӗк чӗрчун тухса ларчӗ. Хӑй кушакран кӑшт ҫеҫ пысӑк, анчах нимӗнле чӗрчун пек те мар. Вӑл — утрав хуҫи. Пӳртсенче хӗрт-сурт пур пулсан, утравӑн та хуҫи пулмалла. Никам та ӑна нихҫан та курман, тӗл пулман, вӑл вара кунта пурне те пӗлнӗ, мӗн пурӗ пирки пӗлнӗ. Ҫавӑнпа вӑл хуҫа та ӗнтӗ, мӗн пуррине курса-пӗлсе тӑма. Анчах вӑл никама та кансӗрлемен. Хуҫа пулса юлма ҫавӑн пек кӑна май килнӗ те — никам та сана ан тӗл пултӑр, эс пурри пирки никам та ан сӗмлентӗр.

Улӑхпи те Матӗра хуҫи пекех — асамлӑ, вӑрттӑн чӗрчун. Анчах вӑл куҫа курӑнать, ҫитменнине тата шӑп та шай вуникӗ сехетре. Вӑхӑчӗ хӑйех пирте Михаил Федоровӑн «Арҫуринчи» кӗвве вӑрататать: «Те арҫури, те шуйттан, те ыр-усал, те вӑр-хурах, те ҫул маяк, тем амак?»[24] Хӗветӗрӗн — «чун шикленет, ӑш вӑркать, пуҫ тӗпӗнчен сӗрӗм тухать»[25]. «Арҫурире» пулса иртекен ӗҫ-пуҫ — каҫпа. Улӑхпи вара — кӑнтӑрла курӑнакан вӑрттӑнлӑх.

90-мӗш псаломра ҫавӑн пек йӗркесем пур: «Не убоишися от страха нощнаго, от стрелы летящия во дни, от вещи во тме преходящия, от сряща и беса полуденного». И.Я. Яковлев

шкулĕнче ăна çапла куçарнă: «Çĕрлехи тискертен те, кăнтăрла вĕçсе килекен ухăран та, тĕттĕмре çӳрекен чиртен те, кăнтăрлах пĕтерекен муртан та эсĕ хăрамăн»[26]. «Бес полуденный» тенине «кăнтăрлах пĕтерекен мур» тесе мар — «кăнтăрлахи усал» тесен тĕрĕсрех пулать пулĕ.

Митрополит Антоний «Человек перед Богом» кĕнекере «кăнтăрлахи усал» пирки калани:

> Ман шутпа, ку вăл — сăнар. Çулла кăнтăр вăхăтĕнче мĕн пулса иртнине эпир пурте пĕлетпĕр. Хĕвел хĕртмеллипех хĕртет, ăрша вылять, таврари пур япалан та рельефĕ уççăн палăрать, ĕмĕлкесем касса тунă пек шараç, сăрăсем уçăмлă, пĕтĕм тĕнче куç умне ялтăр тухса тăрать. Çавăн пек курăнни пире ирĕксĕрех хăй енне çавăрать, пирĕн ăс-тăна витерет. Вара эпир курма пăрахатпăр е, тен, пĕрре пăхса куçа курăнманнине курма пуçлатпăр[27].

Мĕтри Юманăн «астармăш», пуçа çавăракан хайлав пур. Вăл «Нарспи» (1922) ятлă. Кăнтăр вăхăчĕпе çыхăннă унти тухатлакан йĕркесем: «Пăчă çĕрте çулçă çулça чуптунă чух шăпчăк сасси янăрать, савать, çилленет, юна вылятать, кăкăра хĕртет, пуçа çавăрать, куçа илет — Нарспи чунĕ мар-ши çав?

Эх, Нарспи, Нарспи! Сетнер чунне илсе кайни сана çитмен пулĕ халь. Каччăпа хĕр чĕрисене вут-кăвар хĕрӳпе çунтармашкăн чарăнма санран пулмасть пуль»[28].

Нарспи Кĕçтенттин Ивановăн вилĕмсĕр сăнарĕ çеç мар. Кунта вăл — çут çанталăкри, космосри канăçсăрлăх, этем чунне мур пĕлет тaçталла туртакан вăй, хăват.

Тĕнче вăрттăнлăхне тимленĕ Максимилиан Волошин çыравçă шăп кăнтăрла вилсе кайнă иккен. Марина Цветаева «Живое о живом» (1932) ĕçĕнче акă мĕн çырать:

> Кăнтăр вăхăчĕ пур вăхăтран та курăмлăрах, курăнуллăрах; ĕмĕлкесĕр япаласем, тĕлĕксĕр çывăракансем, тĕлĕрекеннисен тĕлĕкĕсем те ун чухне — çĕрĕн. Чи магиллĕ, мифла тата тĕшмĕшле вăхăт, çурçĕр пекех магомифомистикăллă. Аслă Панăн, кăнтăрлахи Демонăн тата пирĕн, вырăссен, сăпайлă кăнтăрлахи усалăн вăхăчĕ. Ача чухне Калуга кĕпĕрнинче хам хăлхапа илтни: «Ленка, атя шыва кĕме!» — «Пыма-а-стăп, кăнтăрлахи усал сĕтĕрсе каять». Çĕрĕн чăн хăйĕн, çĕр тытăмĕн магийĕ, мифики тата мистики[29].

«Уя тухсан уй турри тăтăр», — тесе кĕл тунă чăвашсем. Уй сыхчи, уй пăхакан, уй пуçĕнчи ырă, уй перекечĕ тата ытти

хăватсем те пулнă (Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинчен»). Е.А. Грушко тата Ю.М. Медведев пухса хатĕрленĕ «Словарь русских суеверий, заклинаний, примет и поверий» кĕнекере уйри хăш-пĕр хăватсен юратнă вăхăчĕ кăнтăрла пулнине вуласа пĕлме пулать. «Полевой (полевик, житный дед)» теççĕ иккен ăна. Ырă теме çук ун пирки, вăл «юмах ярать, юптарать, йăнăш çулпа чуптарать. Чике тăршшĕ ларттарать» (М. Федоров). «Шурлăха илсе кайса путарма та пултарать. Ăна уйрăмах чикĕре — ана йăранĕ çинче — тĕл пулма пулать. Унта кирек мĕнле пулсан та çывăрма юрамасть: уй хăвачĕн ачисем пур, вĕсем унта чупса çӳреççĕ, ашшĕ-амăшне апатланма кайăксем тытаççĕ. Çывăракан çынна курсан ун çине сиксе ӳкеççĕ те пăвса вĕлереççĕ»[30].

Ухсай Яккăвĕн «Шуйттан чури» трагедийĕнче (1965) Юнтиер:

Кун пек ыйхă пуснине
Хам ĕмĕрте курманччĕ, —

тет те «çывăрма йăран çине выртать». Шуйттан ун урлă сиксе каçать те çапла такмаклать:

Уй-уй урлă çӳресе
Паян тухрĕ ман тинке.
Пĕр хресчен те, иçмасса,
Сехремет йăран çине
Пырса выртман çывăрма.
Эпĕ унта çӳресси
Ĕлĕкрен, авалтанах
Паллă пĕтĕм халăха.
Хам кĕтменччĕ, ăнсăртран
Тупрăм хамăн çул çинче
Анкă-минкĕ хресчене.

«Эх, ачам, мĕншĕн эсĕ выртрăн-ши çылăхлă йăран çине», — тет Юнтиер амăшĕ Эрнук. Вăл, асăрхăр, суха тăвакан ачисене çитерме кăнтăрлахи апат илсе килнĕ[31].

«Улăхпи килчĕ-çке! — çырать Ева Лисина. — Хальхинче эпĕ ăна çывăхранах куртăм. Мана пуринчен ытла унăн куçĕсем тĕлĕнтерчĕç: тап-таса куççем... Пурне те ăнланакан, пурне те куракан куççем... Жданка куçĕсемех...»[32]

Жданка ятлă ĕне вăрçă вĕçленнĕ кун ĕмĕрлĕхе куçне хупнă. Эппин, Улăхпи пире ирĕксĕрех леш тĕнче, унта кайнисем

пирки шухăшлаттарать. Н.В. Гоголĕн асăннă хайлавĕсенче вилĕм хыпарçи — кушак... Вăл таçта çухалнă, унтан тупăнать. Пульхерия Ивановна ăна тытасшăн пулать, анчах кушак чӳречерен сикет те — куçран çĕтет. «Ку вăл ман вилĕм, — тет карчăк, — мана илме килнĕ».

...Выльăх-чĕрлĕх салтак ачисемшĕн çывăхран та çывăх чун пулнă. «Эпир çитĕннисемпе килте сайра-хутра кăна тĕл пулаттăмăр, — аса илет Г.И. Алимасова. — Çу вăхăтĕнче — пушшех. Ĕç, ĕç, ĕç... Ĕçе пулах аннесемпе шăкăлтатса ӳсеймерĕмĕр эпир»[33]. «Вилес умĕн, — тет Серафим Роуз пачăшкă «Душа после смерти» кĕнекере (М., 1991), — çынна леш тĕнчене кайнисем кĕтсе илеççĕ. Кĕтсе илни кашнипе пулмасан та пултарать. Çак пулăм эс мĕнле халăх çынни, мĕнле тĕнпе пурăннинчен тата епле пурăннинчен килмест, çавăнпа ăна универсаллă теме пулать».

Салтак ачисене ĕне кĕтсе илме пултарать-ши? «Чăвашсем халĕ те наян çынна вăрçнă чухне: “Эй, ĕне, кĕсмен”, — тесе вăрçаççĕ», — çырнă И.Н. Юркин XIX ĕмĕр вĕçĕнче «Чăваш кĕнекине ĕне çисе янă имĕш» хайлавра[34]. Çыравçăпа килĕшес килмест. Тем тесен те ĕне ĕнех вăл — сурăх мар (тепĕр тесен, сурăхне те кӳрентерес килмест — сивĕре çăм алсишпе çӳренине аса илсен). «Ĕне, — тет Фатей Шипунов академик, — пин сăмах тата çĕр интонаци таран ăнланать»[35]. Сĕтшĕн кăна иленмен пулĕ тетĕп салтак ачисем ĕнене. «Ĕне, — çырать Хв. Уяр «Индире курса çӳрени» (1974) тĕрленчĕкре, — таса выльăх, Турă выльăхĕ шутланать. Статистика пĕлтернĕ тăрăх, Индири чухлĕ ĕне ниçта та çук. Çӳреççĕ вĕсем çĕршыв тăрăх сулланса. Курăк ӳснĕ пек, хăйсемех çуралаççĕ, çитĕнеççĕ, ватăлса вилеççĕ»[36].

Темле майпа ĕнесем, тен, Индие Инди пулма май параççĕ... «Паллă ĕнтĕ, — тет Юрий Мамлеев «Судьба бытия» ĕçре, — Индире — этемлĕхĕн метафизика центрĕнче — эпир ăспа виçме çук чĕм (дух) тинĕсне куратпăр»[37].

Чĕмĕ вăл пирĕн те пур-ха, пач çук мар... Анчах, анчах... Георгий Фомиряков Индие кайса килнĕ хыççăн каласа панинчен:

> Инди халăхĕ — лăпкă халăх. Вăрçмаççĕ вĕсем, пĕр-пĕринпе кăмăллă калаçаççĕ — урамра та, таçта та... XX ĕмĕрте пирĕн пурнăçа космос, телевидени т.ыт.те кĕчĕ. Индире вара ĕлĕк йăла-йĕрке мĕнле пулнă — халĕ те çаплипех тăрса юлнăн туйă-

> нать. Тăхăнасса та вĕсем ĕлĕкхиллех тăхăнаççĕ. Çи-пуçĕсем хăйсенех — Европа çи-пуçĕ мар. Хăйсен йăли-йĕркине вĕсем мансах каймаççĕ. Эпир те ĕлĕкхине манмасан пирĕн те пурнăç лайăх пулассăн туйăнать. Эпир туйăмсем патне, чун патне часчасах çула хуплатпăр, çав çулсене манса каятпăр. Ача чухне пур вăл пирĕн: хĕвел те пире сап-саррăн курăнать, курăк та — сип-симĕссĕн... Çулсем иртсе пынăçемĕн эпир çавна курма пăрахатпăр — анне панă туйăмсем патне пирĕн çула хуплакан йывăрлăхсем пухăнса пыраççĕ. Вара эпир хамăрти хамăрлăх патне çитми пулатпăр. Индие кайса килни — хамăрлăх патне кайма пулăшакан çул теме пулать ăна. Тĕнчере мĕн пурри йăлтах унтан пуçланса кайнă. Инди — савăнăçлă, хĕвеллĕ... Ĕмĕт тĕнчи теме пулать ун пирки. Кашни çыннăнах ĕмĕт тĕнчи пулмалла — эп унта пулса куртăм (çавăншăн савăнатăп). Индие Франципе Швейцарипе танлаштарма çук, вĕсем пач расна тĕнчесем. Ман Европăна каяс ĕмĕтсем те çук — унта пурнăç йăлтах искусствăллă. Индире хĕвел пин çул каялла çынсем çине епле çутатнă, халĕ те çавăн пекех çутатать. Çыннисем те çавăн пекех пурăнаççĕ хĕвел айĕнче. Тухăçалла туртăнас пулать пирĕн, ман шутăмпа, Тухăçалла... Вара хамăра хамăр лайăхрах курма пултарăпăр[38].

«Чĕм (дух) тĕлĕшĕнчен халь пулса иртекен пулăмсен никĕсĕнче Тухăç выртать, — тенĕ К.Г. Юнг Европа çыннисен шăпи пирки шухăшласа. — Анчах Тухăç вăл махатмăсемпе пуян Тибет монастырĕ мар — вăл пирте хамăрта, вăл пирĕн хамăр чун, ялан çĕнĕ чĕм хапи (форми) тата вăйсем çуратакан чун. Çапла эпир хамăрти тискер кайăка, хамăрти пусмăрçă çĕтлĕха çăварлăхлăпăр»[39].

Ĕне хыççăн утман чăваш ачи çук пулĕ. Çавăнпа пирĕн хамăр тымарсем патне таврăнасси Европа çыннисенчен те ансатрах. «Му!» тесе вăратнă Джоу дзэн ăста хăйĕн вĕренекенĕсене чун ыйхинчен[40]. «Санăн уру çине ĕне пусайман-ха», — теççĕ чăвашсем пурнăçăн чăн тупсăмне чухлайман çынна. Ачалăхри ĕне сассипе вăранасчĕ пирĕн, чăвашсен, хамăр мĕн çухатса пыни пирки шухăшласчĕ...

**Литература**


[1] *Ухсай Я.* Вут чĕлхе. Шупашкар, 1940. 10—11 с.

[2] *Ухсай Я.* Çул. Шупашкар, 1952, 26 с.

[3] *Дмитриев И.* Чăваш пĕтмен-ха, апла тĕнче пĕтмест // Хресчен сасси. 10.07.91.

[4] *Изоркин А.* Чăваш шумер пулмасан та несĕлсен культурин ват тымарĕ çав тăванлăха анать // Хыпар. 1995. Ака, 4.

[5] *Ухсай Я.* Çырнисен пуххи. 3 т. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2003. 37 с.

[6] ЧПГĂИ ĂА. 5 уйр. 165 упр. ед. 1022 инв. №.

[7] *Родионов В.Г.* К образу лебедя в жанрах чувашского фольклора // Чувашский фольклор. Специфика жанров. Чебоксары, 1982. С. 170.

[8] *Тăхти И.* Поэзи, проза, публицистика. Шупашкар, 1979. 158 с.

[9] *Родионов В.Г.* К образу лебедя в жанрах чувашского фольклора. С. 170.

[10] *Лисина Е.* Улăхпи. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. 40 с.

[11] Çавăнтах. 38 с.

[12] Асилӳ ал çырăвĕ. 5 с.

[13] ЧПГĂИ ĂА. 1 уйр. 67 упр. ед. 3538 инв. №.

[14] Ю.В. Яковлевăн килти архивĕнчен.

[15] Ялав. 2002. 6 №. 69 с.

[16] *Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания. Чебоксары, 1993. С. 26, 30—31, 32, 56, 60.

[17] Чăваш халăх пултарулăхĕ: Мифсем, легендăсем, халапсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. 2004.

[18] Чăваш халăх пултарулăхĕ: Ача-пăча фольклорĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. 290 с.

[19] *Лисина Е.* Улăхпи. 99 с.

[20] Çавăнтах. 20 с.

[21] *Иванов К.* Çырнисен пуххи. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990. 222 с.

[22] Ю.В. Яковлевăн килти архивĕнчен.

[23] *Лисина Е.* Улăхпи. 33 с.

[24] Революцичченхи чăваш литератури. Текстсем. 1 т. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984.

[25] Çавăнтах.

[26] Псалтырь на чувашском языке. Мухтав юррисен кĕнеки. Симбирск: Типолитография Губернского Правления, 1912. 80 с.

[27] *Антоний митрополит.* Человек перед Богом. М.: Паломник, 2000. С. 124.

[28] *Юман М.* Суйласа илнисем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. 43 с.

[29] *Цветаева М.* Сочинения в двух томах. Т. 2. М.: Художественная литература, 1980. С. 191.

[30] *Грушко Е.А., Медведев Ю.М.* Словарь русских суеверий, заклинаний, примет и поверий. Нижний Новгород, 1995. С. 367.

[31] *Ухсай Я.* Шуйттан чури. Шупашкар, 1969. 35—40 с.

[32] *Лисина Е.* Улăхпи. 40 с.

[33] Хресчен сасси. 1992. 48 №.

[34] ЧПГĂИ ĂА. 1 уйр. 67 упр. ед. 3538 инв. №.

[35] День литературы. 1998. № 3.

[36] *Уяр Хв.* Çул кĕнеки. Шупашкар, 1978. 187 с.

[37] Вопросы философии. 1993. № 11. С. 71.

[38] Арсений Тарасовăн передачинчен // Чăваш телевиденийĕ. 1995.

[39] *Юнг К.Г.* Архетип и символ. М., 1991. С. 219—220.

[40] *Коваль С.Н., Холин Ю.Е.* Дух воина. Философия и практика дзэн. Краснодар, 1993. С. 84.

# «ТЕМШĔН ÇАВ ТЕРИ ЙЫВĂР»

## (Ыратăвăн тĕн-тĕшмĕш сĕмĕ)

Ĕнтĕ çĕр çаврăнать, çĕр çаврăнать
Ман пуçăмри çаврака çĕлĕк пек.
Ĕнтĕ ĕмĕр иртет, ĕмĕр иртет
Каç выртса тĕлленнĕ тĕлĕк пек, —

халăх юрринчи çавнашкал хурлăхлă кăмăл витернĕ Ева Лисина калавĕсене.

Юрă урлă халăх шухăш-ĕмĕчĕпе Турă, Çӳлти тĕнче, вĕçсĕрлĕх, ăспа виçме çук вăрттăн хăватсем енне капашнă. Хăйĕн хуйхи-суйхине пĕтĕм тĕнчене тĕвĕлесе тăракан пĕр хăватăн çутă кĕввипе шайлаштарнă. Чун тĕревĕ, шанчăк шыранă.

Мĕн хистенĕ-ши Лисинăна «Хĕле кĕрес умĕн» кĕнекери çичĕ калава хайлама? Çыравçă ятне, чапне илес тесе çырман вăл, ахăртнех. «Хытсан», «пиçсе çитсен» кашни писательпе тенĕ пекех пулакан вылянчăк кăмăл кунта çук. Пур — хăюсăррăн, шăппăн ĕсĕклесе йĕни. Тасалăх, черченлĕх, чунлăх асамĕ пур. Çывăх çын умĕнче кăна уçатпăр эпир чуна çапла. Тен, уçмастпăр та-и. Акă «Сивĕ ирти» Мишшапа Анюк пĕр-пĕрне вилесле юратаççĕ, анчах çакна пĕлтерме хăяймаççĕ. Çут çанталăк, космос, вилĕм кăна хăйĕн ытарлă чĕлхипе çитерет Анюк патне юратăвăн чăн тупсăмне. Çитерет — пурнăç хăрушшине. Юратуран, хăвăнтан тарма кирлĕ маррине. Тарсан та ниçта та: кунта та, лере те — хăвăнтан хăв пытарăнас çуккине. Çак çĕр çинче мар канăçсăрлăх, темле ĕмĕрхи тухату (ылхан-ши вăл е телей?) хистет ĕмĕрлĕхе кусне хупнă савнине асăнса çырма: «Час-часах, уйрăмах çуркунне, эпĕ пĕр çынна аса илетĕп...»

Лисина чун ыратăвĕн сăмах тупмалла мар вăрттăнне сăнарлассипе А. Куприна, И. Бунина, чăваш çыравçисене Ю. Скворцова, П. Эйзина, Б. Чиндыкова, кинори А. Тарковские, И. Бергмана, А. Куросава, чăваш сăрăçне Ю. Зайцева çывăх:

«Сасартăк тĕттĕмленчĕ. Кĕтмен çĕртен асар-писер çил çавăрттарса килчĕ. Хупман чӳречесем чанкăртатрĕç, картишĕнче ларакан пушă витресем халтăртатса кусса кайрĕç. Йĕтем çинчен килекен хĕрарăмсем кĕпи-саппунĕсемпе чăлханса, куçĕпуçĕсене аллисемпе хупласа чупса çухалчĕç. Урапасем тĕрĕлтеттерсе иртрĕç. Тăвăл хыççăн çумăр çитрĕ»[1] («Сивĕ ир»).

«Астăватăн-и: вунвиççĕре-вунтăваттăра чух пĕр çу каçĕ алкум картлашки çине тухса ларатăн: ăшă, Хур кайăк çулĕ шуралса-çуталса выртать, кас вĕçĕнче юрлани илтĕнет. Сана никам та кӳрентермен-ха, ятламан, çавах та темшĕн çав тери йывăр, тунсăхлă, йĕрес килет»[2] («Элекçей»).

* * *

Пĕчченлĕх, Турă пуçа çырни, шелсĕр шăпа, ырă усалпа мăшăрлă çӳрени, инкек куçа курăнса килменни тытса тăрать Лисинăн шухăшлă та çуйханчăк тĕнчине. Çыравçă тĕнчетуйăмĕ синкерлĕ пулни вăл, паллах, çавăн пек кăмăлпа çуралнипе çыхăннă. Анчах ун ыратăвĕ — халăх чунĕн ыратăвĕ те. Ун амăшĕ апăс (жрец) йăхĕнчен тухнă. Апăссем иртнипе пулассине туйса тăраççĕ. Вĕсен уйрăм çын чунĕ пирки кăна шухăшламалла мар, пур этем чунне те сиплемелле, пур япалана та усса çавăрмалла. Ыратура та вăй-хăват тупмалла. Лисина калавĕсенчи апăслăха туйса илме пĕр-ик йĕрке те çителĕклĕ: «Ир çитрĕ çак юр, çĕр те сивĕнсе çитейменччĕ, йывăççем те çулçине тăкса ĕлкĕреймерĕç»; «Те пĕлĕт татăлса анчĕ, лăппи-лаппи юр çуса иртрĕ»[3]. Лисинăн синкерлĕ мăнаçлăхĕ Христос тĕнне кĕмен чăвашсен таса, чăн пурнăç хевтипе пĕр килет. Чăн чăваш тĕнĕн философилле енне (экзистенциализм философине çывăххине) уçма вăл вăхăтри мал ĕмĕтлĕ интеллигенцийĕн мĕн хаклă пулнине ăнланни те пулăшнă. Ю. Скворцовăн алхапăл çырнисенчи (записной кĕнекери) шухăш:

> Говоря о форме художественных произведений. В основном у нас в поэзии у молодежи — модное. Мода идет с Центра, Запада, шума. Те, которые побыли в Москве, те и свои силлабические стихи читают с московской интонацией. Да, есть мода в интонации. В последнее время она изменилась.

Эта интонация — трагически торжественная... Форма — не своя, похожая на кого-нибудь из классиков или вошедших в моду поэтов. Так как невозможно полностью уподобиться или повторить мастерство классика — получается обезьянье кривлянье[4].

Лисина мода хыççăн кайсан та çын мĕлки пулса пурăнман, çын уттипе утман. Вăл Мускаври «кухньăсенче» хускатакан ыйтусене пирĕн халăхăмăр сĕм авалах çивĕччĕн лартнине туйса илнĕ. Чăваш тĕнĕнчи чĕме калавсенчи сăмах варне кĕртме пултарнă, ăна хăйĕн пултарăвĕпе вилĕмсĕрлетнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Ю. Скворцов Лисина пултарулăхне пысăк хак панă.

### Литература

[1] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. Шупашкар, 1994. 14 с.
[2] Çавăнтах. 108 с.
[3] Çавăнтах. 23 с.
[4] ЧПГĂИ ĂА. 5 пай. 896 упр. ед. 5281 инв. №4.

# ПУРНĂÇ ХĔВĔШĔВĔ ТАТА ЧУН ТĂНĂÇЛĂХĔ

Пушă хирте
Пĕр сасă илтĕнет.
Те чун сасси?
Те Турă сасси?[1]
*Е. Лисина. Тăм ӳкнĕ шап-шур*

Ева Лисинăн илем тĕнчине тĕвĕлесе тăракан хăватсенчен аслисем — Турă сасси тата чун сасси. «Чунчĕрере тăнăçлăх çук пулсан ĕçлеме йывăр»[2], — тет вăл. 1995 çулччен Мускавра пурăннă, хушăран кăна Шупашкара килсе кайнă, хăш-пĕр çыравçăсемпе хутшăннă. Халĕ вăл Шупашкар çынни. Чăваш пăтравĕнчен вăл тĕлĕнме пăрахмасть. «Мĕнле хăрушла пурăнаççĕ вĕсем, манса кайса хаярлăх ăшне кĕрсе ӳкеççĕ, хăш чухне хăйсем мĕн каланине хăйсем ăнланмаççĕ. Вĕсем пирки шухăшласан чĕре ыратать. Мĕнле пăтранаççĕ вĕсем, мĕнле пăтранаççĕ» (кунта тата малалла Е. Лисина автор патне янă çырусенчи йĕркесем).

Епле те пулсан тытăнса тăрасах пулать-çке ку пурнăçра, атту кăнттамлăх аллине кĕрсе ӳкме пулать...

Татăлса-хуçăлса анни мĕскер иккенне эпĕ питĕ те лайăх ăнланакан çын. Вăл тĕлĕшрен пĕр япалана тума юраманнине эпĕ çав тери тĕплĕ, витĕр пĕлетĕп. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен эп çав «инкексене» темиçе те курнă, чăтса ирттернĕ, паян кун та чăтатăп. Ун пек чухне «эп пĕтрĕм», «эп хуçăлса антăм» теме юрамасть (!) — çавăн пек пулин те! Çавăн пек каласан çав сăмахсем пĕтерсех, лапчăтсах лартаççĕ, психика урлă пусараççĕ. Тытăнса тăмалла. Пĕррехинче, пĕр 15—17 çул каялла, «пĕтрĕм иккен» темелле чух, хама пĕр çын та пулăшман чух, пĕтĕмпе

вĕçне çитсен, эпĕ хам валли пĕртен-пĕр пулăшу шутласа кăларнăччĕ: ĕçе кайнă чух çул çинчи пĕр-пĕр илемлĕ йывăçа астуса юлаттăм, кайран хам ăсăмра çавна — йывăçа — аса илсе йăпанаттăм. Çавсене — Мичурин проспекчĕ хĕррипе ларакан йывăççене — паян кун та паллатăп, астăватăп (1994).

Халь, Шупашкартан таврăнсан та, чап хăрушă влаç пекех иккенне курса-ăнланса илсен, ман каллех чунри пĕр пая çухатмаллаччĕ. Ман ун пек тивĕç çук — мĕншĕн тесен çынла тытăнса тăмалла (1994).

Çавнашкал сĕнӳ-канаш парса хăй пурнăç тĕслĕхĕпе паянхи арпашса кайнă саманара тытăнса тăма вĕрентет Ева Николаевна.

«Чунра ырă та канлĕ», — тесе çырнăччĕ вăл пĕр сăвăра. Чунра тăнăçлăх, канăçлăх тупма калама çук йывăр. «Тĕнче пĕтес умĕн канăçлăх çухалĕ», — асăрхаттарнă ĕлĕк-авал чăвашсем. Кăна вĕсем хальхи вăхăт пиркиех каланăн туйăнать.

Тĕнче тулса çитрĕ иккен ыратупа, тасамарлăхпа, аташнипе. Вырсарникун чиркӳрен таврăнатăп, метропа ыратăп, «çапкаланса» çӳрекен икĕ хĕрарăмпа икĕ ачи кĕчĕç (хăйсем тирпейлĕ тумланнă). Пĕр ачи — хĕрача, 5—6-сенче — амăшне икĕ чышкипе çапать; амăшĕ: «Я не виновата, я не виновата!» — тет. Метрори çынсем, интеллигентсем, ачана: «Ай, как не стыдно!» — теççĕ. Темĕскершĕн манăн çак ачана пуçĕнчен шăлса илес килчĕ, пуçĕнчен шăлса илтĕм те: «Ты — очень хорошая!» — терĕм, мĕскĕн, хăйне хытарма тăрăшрĕ-тăрăшрех — тутисем чĕтреççĕ, чăтаймарĕ, йĕрсе ячĕ, пуçне амăш чĕрçи çине чиксе йĕрет, амăшĕ ыталаса илчĕ ăна — амăшĕн куçĕсемпе манăн куççем тĕл пулчĕç те: манăн хал çук ун пеккине чăтма... Çавăнта ларакан пĕр хĕр — казак хĕрĕ пулчĕ пулас — сумкинчен шоколад кăларса ачана тыттарчĕ. Вагонран манран маларах тухса кайрĕç... Хĕрачи халĕ те куç умĕнче тăрать. Мĕскер ун чунĕнче?..

Тытăнса тăрасах пулать. Эпĕ Чечняра пулнă хыççăн нумай япаларан хăрами пулнă тата хама та лайăхрах пĕлекен пулнă. Çавăнпа, чăнах та, каллех çав сăмахах: тытăнса тăрас, тумаллине тăвас, май килнĕ таран урнă-асакан тĕнчен тасамарлăхне кĕрес мар (1997).

Эпĕ кунĕпе мăнукăма пăхатăп та пахча çимĕç шăваратăп (ӳсен-тăрансене шел! — çулçисене лăпсăр усса лараççĕ: мĕнле асапланаççĕ пулĕ вĕсем — хăяр çулçисем (пилĕк-ултă çулçи) хĕвелпе пиççе-çунса кайнă — «ожог первой степени»! — шутласан, хăраса каймалла! (1999).

Пурнӑҫӑн тӗлсӗр-ирсӗр шавӗнчен хӑтӑлас тесе Ева Николаевна 1992 ҫулта Тверь облаҫӗнчи Денисова Горка вырӑс ялӗнче ҫурт туяннӑ. Генри Торо ҫырнӑ «Уолден, или Жизнь в лесу» кӗнекери (1854) «ҫӑтмаха» хӑйӗн пурнӑҫне кӗртме тӑрӑшать... Юлашки ҫулсенче Лисина ҫутҫанталӑк хӳттипе кӑна ҫырлахмасть. Турӑ тивлечӗпе сывлакан тӗрлӗ вырӑнсенче пулать, хушӑран мӑнастирте пурӑнать:

«Урӑм-сурӑм пурнӑҫ хӗвӗшӗвӗ кӗртсе ярать ҫав (тӗрӗсрех, пусса тӑрать), пӗртен-пӗр тӗллевӗм (ӗмӗтӗм) те ҫакӑ ҫеҫ: каллех хам пӗлтӗр пулнӑ мӑнастире ҫитесчӗ, манашкӑсем суккӑр ачасемпе ӗҫленине курса манасчӗ ухмаха тухнӑ ҫынсен кирлӗ мар тапаланӑҫне» (1991).

1995 ҫулта Лисина хӑй вӗренекенне, Саша Яковлев артиста, вӑрҫӑ тамӑкӗнчен хӑтарас тесе Чечняра пулать. Унтан таврӑннӑ хыҫҫӑн иксӗмӗр калаҫнинчен:

> Толсто-Юрт текен Чечня ялне каҫпа ҫитрӗмӗр. Хӗрринчи ҫурта вырнаҫрӑмӑр. Вара тӳрех чаҫе кайрӑмӑр. Унта кӑнтӑр вӗт, питӗ хӑвӑрт тӗттӗмленсе ларать. Манӑн каялла яла таврӑнмалла. Офицер хунарпа илсе тухрӗ мана. Нимӗн те курӑнмасть.
>
> — Халӗ кайӑр, — тет вӑл.
>
> Эп калатӑп:
>
> — Хӑш еннелле каймалла?
>
> — Ҫак еннелле. Асӑрханӑр, пур ҫӗрте те мина. Ҫул тӑрӑх кӑна кайӑр.
>
> Мӗнле ҫул? Нимӗн те курмастӑп. Хуп-хура. Хам пурнӑҫра эп ҫавӑн пек хӑраса курнӑ-ши? Ӑҫта каймалла? Тӑрас пулсан — тӳрех шӑнма пуҫлатӑн. Февраль уйӑхӗнче унта хӑрушӑ тӗтре. Ҫав ҫӑра тӗтрене ҫӗҫӗпе каса-каса илме пулассӑн туйӑнатчӗ. Чаҫ (полигон) тавра траншея чавса тухнӑччӗ. Салтаксем тула тухма ҫавӑнта чупатчӗҫ. Эпӗ пӗр утӑм турӑм та — ҫав шӑтӑка кӗрсе ӳкрӗм. Унтан аран-аран тухрӑм. Ӑҫта каймалла? Пӗлместӗп. Турӑсӑр пуҫне кам пулӑшайтӑр мана? «Боже, Боже, оставь меня в живых ради моей сестры», — йӑлӑнтӑм эпӗ. Каланӑ чухнех туйса илтӗм: эпӗ тӗрӗс калатӑп. Эп вилнӗ пулсан манӑн аппам Луиза мансӑр пурӑнаймастчӗ. Ман аппа (1937 ҫ.ҫ.) – 1-мӗш группа инваличӗ, ачаранпах... Мана Турӑ умӗнче тӳрре кӑлараканни – чирлӗ аппана пӑхни иккен. Чи хӑрушӑ самантра ӑс-пуҫ тӳрех чи тӗрӗс, чи кирлӗ сӑмаха каларӗ. Ҫавна каларӑм ҫеҫ — хыҫала (ҫурӑм хыҫне) Такам пырса тӑчӗ. Ӳт-пӳ ман вут пек хыпса илчӗ. Хыҫалта тӑрать. Сывлать. Пӑхӑттӑм ҫаврӑнса – анчах кӗлленсе каясса пӗлетӗп. Шӑпартатса куҫҫуль юхать: Юрату, Хӗрхенӳ ҫитрӗ ман патӑма. Тӗнчере ҫакӑнтан хакли ҫук. Эп пӗр хӑрамасӑр лӑпкӑн кӗтсе тӑратӑп. Салтаксем ман енне ҫутатмалли ракета яра пуҫларӗҫ. Яраҫҫӗ те — пӗр виҫӗ утӑм тӑватӑп. Куратӑп сукмакне. Ҫапла ҫитрӗм хамӑн ҫурт патне.

Çамрăк чухне юратни те, пĕр-пĕр калав пичетленни те, савăнни те – çав вут-çулăма нимĕнпе те танлаштарма май çук. Аса илсессĕн, вăл таврăнатчĕ ман пата – пĕр эрне хушши çапла пулчĕ. Сергий аттене (священника) каласа патăм та, вăл: "Ун чухне Сирĕн сăмахсем чунтан тухакан кĕлĕ пулнă. Турă çавăн пек кĕлле илтет. Манахсем çавăн пек саманта туяссишеĕн вуншар çул кĕлтăваççĕ", – терĕ.

Урăх нимĕн те кирлĕ мар, çав пулсассăн. Тĕлĕнмелле телей...

**Литература**

[1] Тăван Атăл. 1990. 3 №.

[2] Ю.В. Яковлевăн килти архивĕнчен.

# АЧАЛЛА ВЫЛЯНЧĂК КĂМĂЛ

## («Пăркка мучи калавĕсенчи» шӳт пирки)

«Кай, ан калаç, пĕлместне? Юри шахвăртан пуль? Тем, пурте шахвăртакан-вăлтакан пулса кайрĕç! Каласа парас-им вара? Асту, эпĕ кăна никама та каламан».

Çапла çаврăнать Пăркка мучин чее чĕлхи — юмах ярса юптараканни, кукăр çулпа чуптараканни.

«Шутласа кăларнă япаласем ман чăваш чиккинчен тухаççĕ», — тет Лисина хăйĕн пирки. Чăнласах çапла-ши ку, шӳт тумасть-ши пирĕнпе çыравçă? Тем. Ю. Артемьев ав: «Пăркка мучи» калавĕсем Георгий Орлов хайлавĕсенчи Тривим йысна сăхманĕнчен сиксе тухнă», — тет[1]. Сăмах арманĕ ма чăн шӳт е, Пăркка мучилле каласан, «высший сорт» авăртса кăларайманнине те ăнлантарать критик, хăй те тиркев-тĕпчеве чее те ăслă кулăша çиçкĕнтерекенскер: «Пăркка психологийĕ те, чĕлхи те хулапа ял чиккинче, ниепле те тĕрек тупса тымар яма пĕлмелле мар вырăнта, йăл илмен-ши?»

Лисина хăйне çывăххине, хăй тӳссе ирттернине çырса кăтартма ăста. Уйрăмах асилӳ çăмхине сӳтнĕ чух унăн таланчĕ чĕрĕлсе, вăйланса каять («Çĕньял ачисем», «Сивĕ ир» кĕнекери 7 калав). Хăйĕн ачалăхне мĕн çывăххине сăнарлама та унăн ялан тенĕ пекех çĕнĕ май-меслет тупăнать. Кун пек чух çыравçă выляса мар, чăнласа калаçать вулаканпа (тен, хăйĕнпе хăй те). Чунне уçса çырать вăл. Чунĕ хурлăхлă синкер кĕвĕ ĕнерет. Кирек кам та, кирек хăçан та ăнланассăн туйăнать чун çапла шăппăн ĕсĕклесе йĕнине. Çынсене савăнăç мар, хурлăх пĕрлештерессĕн туйăнать. Кашнийĕнех пирĕн — атте-анне, çемье,

ача-пăча, тăван-пĕтен, тус-тантăш, çуралнă çĕршыв, юрату... Кашниех эпир çакна çухатасран хăратпăр. Çухататпăр... Кулă вара — кашнийĕн хăйĕнле. Пĕр халăх тепĕр халăх куллине, пĕр вăхăт тепĕр вăхăт шутне ăнлансах пĕтмест. Кунсăр пуçне тата: çаврăнăçуллă кулă вăл — Турă пани, талант. Уйрăм халăха е çынна вăл ытларах е сахалтарах тивме пултарать. «Хĕрарăмсемшĕн, — тет, сăмахран, Карел Чапек, — култарасси пит ал çеммиех мар. Ку вăл — арçын ĕçĕ»[2]. Çакăнта мар-ши Ю. Артемьев палăртнин тупсăмĕ: «Култарас килет, анчах та кăмăл екки кулăш йĕрĕ çине ӳкесшĕн мар»[3]. Çакна Лисина хăй те туять пулас: вара унăн çырас мехелĕ ирĕксĕрех ачалла айванлăх еннелле сулăнать. Артемьев шучĕпе, «кулăш эффекчĕн çăлкуçĕ шалти сăнарлăхра пулмалла»[4]. Ача хăтланăшĕсем хыççăн кайсан шӳте ытла ăслă тума май çук. Тен, ку ача-пăча литератури валли кирлĕ те мар? Тен, унăн ачалла кăмăллă, çăмăл шухăшлă пулмалла та? Пĕчĕк шăпăрлансене вĕт мыскара, камит, хăйсем пекех чĕлхепе шапăлтатни кирлĕ. Аса илĕрха, тĕслĕхрен, Астрид Линдгренăн Вăрăм Чăлха Пеппине.

«Пăркка мучи калавĕсем» — пуш сăмах çăмхине сӳтни, халап-юмах çапни çеç мар. Ытарлă, юптарса, вăлтса калаçни те, ирĕклĕрех çырма ăнтăлни, çĕнни патне туртăнни те. Лисина чăваш литературинчи «ухмахланас», вулакана улталас, сутса ярас, шӳт тăвас, вĕçтерсе калаçас йăлана чылай аталантарать темелле. Ун пултарăвне халăх халапçăсен шӳт ытарлăхĕпе юптарăвĕ, тĕртсе калас ăсталăхĕ те чĕрĕ вăй парать. Пăркка мучин сăмаха вĕçтересси Тăхтин çемçе чĕлхи-çăварĕпе, Иван Мучин шултра йĕплĕ сăмахĕпе, тĕл-тĕл йĕплĕ Уярпа, Куçма Чулкаçăн Лапшу Çтаппанĕпе, Юхма Мишшин Путĕш Паттянĕпе, Анатолий Емельяновăн Тимĕрç Прухурĕпе хăш-хăш енчен пĕр килет. Чĕлхепе теттепе вылянă пек ирĕклĕ авкалакансен шутĕнчен эпĕ Лидия Саринене тата Владимир Степанова уйăрнă пулăттăм.

«Пăркка мучи калавĕсене» вырăнти ача-пăча литературипе тава кĕрсе çырнă пек туйăнать мана. Ку вăл пирĕншĕн, тен, урăхларах литература та. Кунта ирĕклĕрех çырма ăнтăлни, сюжет кăсăкĕ çине пусăмлани куçкĕрет. Çĕнĕ май-меслет, çĕнĕ хавал шырать çыравçă. Пăркка мучи хăтланăшĕсем мана Вăрăм Чăлха Пеппине, Карлсонпа Винни Пухăн тата ача-пăча юратнă ытти сăнарсен мыскарисене аса илтереççĕ. Анчах тĕлĕнмелле: чăваш чиккинчен тухас тени Лисинăшăн чăваша

таврӑннипе ҫаврӑнса тухнӑ иккен. Пӑркка мучи чӑваш ачисен темиҫе ӑрӑвне савӑнтарнӑ Шерхулла, Лапшу Ҫтаппанӗ, Тривим йысна раттинченех иккен. Пур иккен апла чӑвашрах ҫӗнӗлӗх хевти те, ирӗклӗхӗ те. Ӑна уҫмалла кӑна. Ҫакна мыскараҫӑсем, камитҫӗсем тӑваҫҫӗ пулӗ тетӗп. Тем те пӗр шутласа кӑларакансем, тӗрлӗ шӳт тӑвакансем яланах Чӗрӗлӳ (Возрождени) палли пулнӑ. Ман шутпа, Чӑваша вӗсем тата йышлӑн килмелле-ха. Ҫитмелле Чӑваша чӗрӗлӗх, ҫитмелле Лисина вӑхӑчӗ те.

### Литература

[1] *Артемьев Ю.* Ирӗк шухӑшсем. Шупашкар, 1991. 137—138 с.
[2] *Чапек К.* Беседы с Т.Г. Масариком // Москва. 1990. № 11. С. 177.
[3] Артемьев Ю. Кӑтартнӑ ӗҫ. 138 с.
[4] Ҫавӑнтах.

# «ЧĂВАШ ЯЛĔНЧЕ ÇУРТ ИЛЕСЧĔ»

«Эп витĕр пĕлетĕп вырăс камне», — тет Ева Николаевна наци ыйтăвĕ пирки сăмах тапратсан. 1956 çултанпа, Аслă Арапуçĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнăранпа, вăл Мускавра пурăнать. (1995 çулта Шупашкара куçса килнĕ.) 1960 çулта амăшĕ çĕре кĕрет.

— Анне вилесси икĕ-виçĕ кун кăна юлчĕ, — аса илет çыравçă. — Ирхине хамăр ума тухрăм та, куç хуралса килчĕ: пирĕн хапха çине «Лисин Хветуçĕ вилнĕ» тесе çырса хунă. Пĕтĕм ӳт-тирĕмпе туятăп: мана такамсем сăнаççĕ. Вăлт пăхса илтĕм те — хирĕçри кил умĕнче темиçе çын ларать (эп вĕсене паллаймарăм), çавсем сăнаççĕ мана. Вĕсен шучĕпе, манăн йĕмеллеччĕши е кăшкăрса ямаллаччĕ-ши? Эп ним курман-асăрхаман пек туса хапха умĕнче турпас пуçтаркалам пек турăм та каялла кĕрсе кайрăм. Кайран урамра никам та курăнман самантa сыхласа тăтăм та хапха çине çырнине шăлса тасатрăм. Анне пире çав каç пилленĕччĕ пулас — виççĕмĕре уйрăммăн-уйрăммăн чĕнсе кĕртрĕ. Мана пилленĕ чух: "Тетӳ ялта пурăнас çук, эс кунта пурăн, çурта ан салат", — терĕ[1].

Çакăн хыççăн пушшех те йывăрччĕ ялта пурăнма. Хама мăйран ярса илнĕ пекех туяттăм. Анне çуртне манăн сутмалла пулчĕ (унтан хăрушши çĕр çинче çук та пулĕ!), чирлĕ аппана çынсем патĕнче хăвартăм та Мускава, малалла вĕренме, кайрăм, тете Мускава вырнаçрĕ, хĕллехи каникул вăхăтĕнче аппана та унта илсе килтĕм, вара эпир виççĕмĕр те пĕрле чăмăртантăмăр[2].

Мĕншĕн çынсем ялтан тухса каяççĕ? Мĕншĕн эпĕ хам тухса кайрăм? — çапла чунне ыраттарса шухăшланă Василий Шукшин. — Ялтан тухса кайнисен чунĕ тĕпĕнче — хăрăк туйăм, айăп тата тунсăх. Кашниех пиртен тӳрре тухма май шырать[3].

Ева Лисина амăшĕн пил сăмахне пурнăçламаннин сăлтавĕ те унăн пиччĕшне, Айхи поэта, патшалăх хăрушсăрлăх органĕсем хĕстернинче тата ял çыннисенчен тахăшĕн маларах асăннă килпетсĕр ĕçĕнче кăна мар пулĕ. Ун чухне пур чăваш çамрăкĕн пуçне те «хуланалла, Мускавалла каясчĕ» текен шухăш çавăрса илнĕ пулнă. «Пур кăсăксăр-пăсăксăр çамрăк кайса пĕтрĕ ĕнтĕ. Чĕлхесĕр Униç те Ваççа хăраххисем çеç юлчĕç»[4], — калаçаççĕ утă пуçтаракан хĕрарăмсем «Юрăç Ваççа» калавра (1957). «Çак çул вăтам шкул пĕтернĕ ял ачисем ялах юлас юхăм питех сарăлманччĕ-ха, — çырать Юрий Скворцов, — çамрăксем “вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн ăçта та пулин каймаллах” текен шухăшпа пурăнатчĕç. Çума “куршанак çыпăçăна” пуçласанах ирĕкелле тапнă, хуласене саланнă: техникумсенче, институтсенче вĕреннĕ. Вунă çул вĕреннĕ хыççăн ниçта вĕренме кайманнисем те ялта юласшăн пулман: тĕрлĕ стройкăсене пĕрер çуллăх тесе тухса кайнă та — таврăнман. Яла «кунта — ырлăх» тесе çеç çырнă»[5].

Ютри илĕртни хыççăн каясси, тăван кил шухăшне пăрахăçа кăларасси иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчех пуçланнă. «Сблизить инородцев с русским народом, объединить в христианском миросозерцании, в культурном и бытовом облике», — çак тĕллеве тĕпе хурса ĕçленĕ чăваша «çутта кăларакансем»[6]. «Эпир шкулсенче вырăсла шухăшлама вĕреннĕ, эпир çурма вырăссем пулса кайнă, çавăнпа чăвашла çырма та, калаçма та пултараймастпăр», — йышăнать Мĕтри Юман вĕреннĕ чăваш айăпне «Чĕлхе тавĕ» статьяра (1926). «Чĕмпĕр шкулĕнче ачасене чăваш чĕлхине мар, чăвашла çырма та чăнтан вĕрентмен, — аса илет вăл «1906-мĕш çул. Чăвашсен хушшинче пулнă ĕçсене асăнни» кĕнекере. — Ăна ачасем хăйсемпе хăйсем çеç вĕренкеленĕ. Çак енчен сăнама тивĕçлĕ япалана асăнмасăр хăварас мар: эпир, чăваш шкулĕнче вĕренекенсем, алăпа çырнă журнал кăларма тапăнсаттăмăр. Çавна эпир вырăсла çыраттăмăр, чăвашла çырасси çинчен пирĕн шухăш та çукчĕ, семинарире кăшт çеç каярахпа икĕ чăвашла журнал — “Çăлтăрпа” “Шурăмпуç” — тухкаласа тăнă»[7].

1946 çулта Чĕлхе, литература тата истори наука тĕпчев институтне Гурий Комиссаров «История чувашской письменности и литературы» ĕçне ярса парать. Унта вăл хăйĕн сăввисене те кĕртнĕ. 1908—1917 çулсенче вырăсла çырнисенчен пĕринче: «Родному слову каждый рад», — тенĕ. Çак шухăша

вырăсла калани хăйех чăваш чĕлхи хăватне шанса пĕтерменнине систерет. «Мы, чуваши, не замыкались в узкой сфере своего национального искусства и пробовали писать не только для своих чуваш, но и для других народов России (теперь Советского Союза), для которых русский язык является общим, международным языком», — çапла ăнлантарать вăл хăй мĕншĕн вырăсла сăвăланине 1946 çулхи утă уйăхĕн 22-мĕшĕнче çырнă çырура[8].

50-мĕш çулсенче, Сталин вилнĕ хыççăн, вырăсла çырас туртăм татах та вăйланать. «Юлашки виçĕ çул вырăсла çеç çырнипе чăвашла кĕнекене çӳп-çапсем пухса çеç йĕркелерĕм. Ан тив, çӳп-çапах тухтăр», — çырнă Геннадий Айхи Юрий Скворцов патне 1963 çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче[9].

Ева Лисинăн пĕрремĕш кĕнеки «Сказки» ятпа вырăсла тухать (1969): «Урăхла пулма та пултарайман, — тет вăл. — Незвал кĕнеки те вырăсла, таврара та вырăсла кăна калаçаççĕ, хам та чĕлхе çинчен шутламан, çавăнпа манăн экспромтла сиксе тухнă юмахсем те вырăсла пулчĕç. «Экспромта» Шупашкара ярса патăм. Часах пĕчĕк кĕнеке пичетленсе тухрĕ»[10].

Тверь облаçĕнчи Денисова Горка вырăс ялĕнче çурт туянни те вырăсалла сулăннă вĕреннĕ чăвашсен çулĕпе тепĕр утăм тухиех пулнă ахăртнех.

«Эпĕр, чăвашсем, ют çынсен хĕрĕсене илме ĕмĕтленсе пурăнатпăр, — çырнă Иван Юркин «Пиçнĕ тутасем калаçни» калавра (1924). — Калăн, вĕсене темĕн тĕрлĕ ырă тесе. Çук, вĕсем пирĕн чăваш хĕрĕсем чухлĕ çук. Çичĕ ют çынни хамăр çын пек, темĕн каласан та, ырă пулас çук. Пирĕн, чăвашăн, пурнăçĕ майра илсе янипе çуннă. Пирĕн çăварсем кăна мар, тутамăрсем те пиçнĕ. Ăшра вут çунать, тĕтĕм тухни курăнмасть»[11].

Ева Николаевна Чечняна кайса килнĕ хыççăн (1995-мĕш çулта) калакан шухăшсем те — хăйне майлă «пиçнĕ тутасем калаçни»:

> Хам та тĕлĕнетĕп – эпĕ чăвашпа çеç пĕтĕм чун-чĕререн калаçма пултаратăп иккен. Чăвашпа (паллах ĕнтĕ, вăл çывăх тус-юлташ пулмалла) калаçнă чухне манăн пĕтĕм чун-чĕре ирĕлет, чун тĕпĕнчи сăмахсем тухаççĕ. Денисова Горкăра вырăссемпе ун пек калаçаймастăп. Эпĕ вĕсемпе туслă, анчах вĕсемшĕн манăн чунăм хупă. Эпир те вĕсемшĕн ют-ши? Сăмахран лавккара çăкăр кĕтсе тăратпăр. «Хотя Ева чувашка, мы ее любим», — теççĕ мана савăнтарас тесе. Ку, паллах, «кухня

шайĕнчи сăмах, анчах нумай-нумай çул хушши «старший брат» шутланă халăх ялан вĕрентесшĕн, пурте пĕлеççĕ пирĕн менле пурăнмаллине. Денисова Горкăпа юнашар ялта Рая ятлă вырăсланнă чăваш хĕрарăмĕ пурăнать. «Эп кашни кун кунта йĕретĕп, – тет. – Вырăссем эп ĕçленине кураççĕ те калаççĕ: «Что ты работаешь? У тебя же дети не придут». «Вилсен илсе кайса пытар мана чăваш масарĕ çине, — тет. — Мĕнле выртас ман вĕсен масарĕнче? Вырăссем патĕнче эп нихăçан та канаймастăп». Вырăссене ялта пурăнсан пĕлсе çитетĕн. «Эсир ма ӳсĕрĕличчен ĕçместĕр?» — теççĕ пире. Эпир тирпейлĕ, таса пурăннинчен тĕлĕнеççĕ. Ара пирĕн çурт лапăрчăк пулмалла-и? – вара эпир чăваш пулатпăр-и? «Ты же названная сестра Рае, поговори с ней: что она всё время работает?» – теççĕ. Айхи калать (унăн та пĕчĕк пӳрт çак ялта): «Тарар пулĕ кунтан. Айта пĕрле çурт илетпĕр чăваш ялĕнче. Эй, мĕнле телейсĕр эпир!..» Эп çурт юхăннине чăтма пултараймастăп... «Мĕн çуртшăн тăрăшан?» — тет кӳршĕ мана. Çуртăн пĕр чӳречине хăйсем фанерпа хупланă. Чечняра пулни маншăн открыти, откровени пулчĕ. Пирĕн, иккен, урăхла ăс, урăхла опыт пур. Пирĕн тĕлĕнмелле культура. Чунра такт, Турă пани пур. Чикĕ пур. Генетика шайĕнче ларать пирте: «Ун пек калама юрамасть, ун пек тума юрамасть». Чăваш хĕрарăмĕ хăш-пĕр япаласене, касса пăрах, тăваймасть. Эп, сăмахран, нихăçан та калаймастăп «грязная татарка», «грязная башкирка» тесе. «Они тоже люди», — тесе калама пултараççĕ пирĕн пек пĕчĕк халăх çыннисем пирки. Вырăс хĕрарăмĕсем пире ăнланмастчĕç. Эпир вĕсене ним мар ăнланаттăмăр. Эпир, пĕчĕк халăх хĕрарăмĕсем, пĕтĕмпе ăнланаттăмăрччĕ. Эп çавăн чухне хамăр çинчен тĕплĕрех шухăшла пуçларăм... Эп Чечняра каларăм: «Эй, Турă, мĕнле лайăх çак тĕнчене чăваш пулса çурални», — тесе...»[12] (Чечняна кайса килнĕ хыççăн калаçнисенчен).

**Литература**

[1] *Лисина Е.* Каламалли сăмах // Ялав. 1989. 8 №. 28 с.

[2] Тăван Атăл. 1990. 3 №. 60 с.

[3] *Шукшин В.* Избранное. М.: Просвещение, 1992. С. 327.

[4] *Скворцов Ю.* Хĕрлĕ мăкăнь: Повеçсемпе калавсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2003. 335 с.

[5] Çавăнтах. 333 с.

[6] *Яковлев И.Я.* С думой о народном просвещении. Из переписки. Ч. 2. Чебоксары, 1998. С. 351.

[7] *Юман М.* 1906-мĕш çул. Чăвашсен хушшинче пулнă ĕçсене асăнни. Шупашкар, 1925. 92 с.

[8] ЧПГĂИ ĂА. 5 уйр. 902 упр. ед. 5327 инв. №.

[9] ЧПГĂИ ĂА. 5 уйр. 902 упр. ед. 5327 инв. №.

[10] Тăван Атăл. 1990. 3 №. 61 с.

[11] Аван-и. 1993. 3 №.

[12] Ю.В. Яковлевăн килти архивĕнчен.

# ЕВА ЛИСИНА ТАТА ЧĂВАШ КОСМИЗМĔ

Аçу та, аслаçу та сан,
Савнă тусăм Андриян,
Аслăк тăрринчен çӳле
Хăпарса пĕртте курман.

Эсĕ çăлтăр тĕнчине
Кĕнипе чăваш ятне,
Ху çуралнă çĕршыва
Кĕртрĕн аслă мухтава[1], —

çырнă Ухсай Яккăвĕ «Андриян Николаева» сăвăра (1962) чăваш космонавтне чысласа, чăваш халăхне вара — мĕскĕнлетсе. Калăн, ыттисем хăпарнă, эпир — хăпарайман... Çак йĕркесенче пирĕн интеллигенци е, тĕрĕсрех каласан, вĕреннĕ çынсем чăваш халăхне мĕнле выраăна хуни сăнарланнă. «Аслăк тăрринчен çӳле / Хăпарса пĕртте курман». Чăваш тивĕçне чакаракан çак шухăш-кăмăл халăхăмăр хăйĕн авалхи чапне, мăнаçлăхне çухатса, манса пынă май çĕр тĕрлĕ янăранă. Çеçпĕл, тĕслĕхрен, «Пирĕн вăй» статьяра (1918) «кĕлет айсене тарса кĕни»[2] пирки çырать, «Чăваш сăмахĕ» тĕрленчĕкре (1920) вара: «Унталла-кунталла вăрман айне тарса пытаннă»[3], — тет. «Хура яла кĕрсен чĕрем ыратать / Çамрăк яшă ĕмри унта путнăччĕ»[4], — çырать Ф. Павлов «Аслă уя тухрăм ула йытăпа» сăвăра (1920—1921). «Ача пулса ӳснĕ самана чуна вĕчĕрхентерет»[5], — шухăша каять Хунар «йĕри-тавра çăлтăр пек çăра чăваш ялĕсене, чухăн ялсене» сăнаса (*Мĕтри Юман.* Пурлăх комиссарĕ. 1927). Чăваш ялĕ, чăвашлăх тамăк пек туйăннă. Çавăнпа ĕнтĕ Ф. Павлов

чăваш музыкине те çĕр путăкĕпе çыхать. «Çырмари юрă (Чĕмпĕр шкулĕ, И.Я. Яковлев тата чăваш ĕç халăхĕн музыка искусстви çулĕ)» — çапла ят панă вăл чăвашсем «ĕслеттерсе хăратнă тискер кайăк пек шăршлă çырма-çатрасенче çеç тарса пытанса пурăннă»[6] вăхăта сăнарланă ĕçĕнче (1928). «Чăваш халăхĕ, — тет вăл «Чăваш тĕп театрĕ» статйинче (1922), — çĕр хурчĕ, тусан амăшĕ»[7]. Хурт пулсан эппин — çĕр ăшне часрах тарса кĕмелле. Иртен-çӳрен ури айĕнче лапчăнас мар тесен. Чăваш интеллигенцийĕн пирвайхи пусăмĕн чĕри çумĕнче йăва çавăрнă çак шухăш-кăмăл Петр Осиповăн «Айтарĕн» малтанхи вариантĕнче («Пирĕн пурнăç хăтлăхра». 1927) ак çапла янрать: «Пытан ăçта та пулсан е тар хăвăртрах!»[8] — тет Улай Сентиере. Пьеса вĕçĕнче вара, Айтара вырăссем вĕлернĕ хыççăн, пур чăваша та таркăн шăпи кĕтет. «Хамăрăн авалхи тĕнпе йăлана усрас тесен пурĕ пĕр тарас пулать хăтлăха»[9], — тет Айтар çынни пулнăскер. Хăтлăхĕ мĕне пĕлтерни Сентиер Пинерпие каланă сăмахсенче уçăлать: «Чăвашсемшĕн ĕлĕкренпех хăтлăх вăрманта пулнă; анатри чăвашсем пĕтĕмпех вырăссенчен тарса юман шырланне пытаннă теççĕ. Тарар-и эпир те çавăнта. Пирĕн тус — сĕм вăрман, пирĕн кил — тарăн çырма, пирĕн пурнăç — хăтлăхра!»[10]

Ухсайăн «Çĕр» поэми (1961) — таркăнсем ютра тымар яни пирки. Çавăнпа ун ячĕ тĕрĕссипе «Çĕнĕ çĕр» пулмалла. «Тухса таçта чăваш телейĕ тарнă, / Юртса çӳренĕ тилĕ йĕрĕпе»[11], — тет сăвăç. Камшăн тарнă, камшăн тарман... Камшăн тăван çĕршывра та çĕр çитнĕ, камшăн çитмен... Кам: «Çĕнĕ çĕре кайăпăр та / Тулă кулачи çийĕпĕр», — тенĕ... Кам вара: «Ан кай, чăваш, ан сапалан, / Ху çĕрӳнте патвар юман пек лар!» — тесе юрланă... Кам çил хăваланă та çил ятне илтнĕ. («Çилсем кайрĕç» теççĕ мишерсем чăвашсем кайнине курсан», — тет Владимир Карсаков.) Кам пурнăçне, Шелепи калашле, хăйĕн тымарĕ тăрăх янă та: «Юлашки юман типиччен çĕр çинче чăваш пĕтмест»[12], — тенĕ (Хуначи Кашкăрăн — Г.Н. Волковăн — «Юманпа хĕвел» кĕнекинчен. 1975).

Çук, космос ăнĕ чăвашăн ыттисенчен кая мар. Ева Лисинăн «Çĕньял ачисем» повеçĕнчи пĕчĕкçĕ чăвашсем акă хĕвелпе вылясшăн, хĕвел патне тӳпене чупса хăпарса каясшăн... «Космос саманинче пурăнатпăр-çке!»[13] — тесе ăнлантарать Хветĕр Уяр Çĕньял ачисен кăмăл туртăмне «Талантлă кĕнеке» тĕрленчĕкре (1972). «Çĕньял ачисем» пĕрремĕш хут 1971 çулта

пичетленнĕ — Юрий Гагарин тĕнче уçлăхне вĕçсе тухнă хыççăн вунă çултан. Çав вăхăтра пирĕн ентешĕмĕр те, Андриян Григорьевич, икĕ хутчен (1962 тата 1970 çулсенче) космосра пулать. «Савăннипе куççуль тумламĕсем юха-юха анчĕç, — çырать Васлей Давыдов-Анатри кун кĕнекинче (1962. Çурла, 12). — Чăваш ачи Андриян Николаев космосра».

Юрий Гагаринпа Герман Титов хыççăн тĕнче уçлăхне чăваш çĕкленни Ева Лисинăна та витĕм кӳнĕ. «Ачасен юрри тӳпене çĕкленет»[14], — тесе çырать вăл. А. Николаев вĕçевĕ чăвашшăн, чăваш шăпишĕн мĕне пĕлтернине шута хурса çапла калама пулать: юрă тӳпене çĕкленет, мĕншĕн тесен çăлтăрсем патне чăваш çĕкленнĕ. Виççĕмĕш космонавт вĕçевĕ чăваш чунĕ тĕпĕнче упранакан вăрттăн пĕлӳ-сĕмленĕве вăратнă, çĕр çинчи пулăмсене космоспа пĕр кĕвĕлентернĕ.

Çăлтăр витĕр çул курăнать —
Эпир каяс çул пуль çав.

Уйăх витĕр уй курăнать —
Эпир çӳрес уй пуль çав.

Хĕвел витĕр хĕр курăнать —
Эпир илес хĕр пуль çав.

Лисина хайлавĕсенчи ĕç-пуç темле асамлă майпа аслă хăватсемпе, тӳпепе çыхăнать, сăлтавланать.

Хĕвел!
Сарă хĕвел!
Аслă сарă хĕвел!
Сана кĕтетпĕр!
Ялан сана кĕтетпĕр!
Сарă хĕвел,
Часрах кил![15] —

чĕнсе юрлаççĕ Çĕньял ачисем.

«Çăкăр чĕлли» калава вăрçă хыççăнхи çулсенче выçăпа вилнĕ Çĕньял ачисене асăнса çырнă. Вилĕм хайлав вĕçне тĕнтĕшмĕшле сĕм хушать:

...Кантăкран шаккаççĕ. Эпĕ чӳрече пăрне вĕрсе ирĕлтеретĕп. Пĕчĕк çавра шăтăкран хăрах куçпа урамалла пăхатăп. Тулта асар-писер тăман тустарать, çил улать. Пирĕн кил умĕнче пĕчĕк çуна сĕтĕрнĕ ушкăн ача тăрать. Вĕсем мана чĕнме килнĕ. <...>

Ачасем... тулашакан çилпе кĕрмешсе кĕртсем урлă колхоз авăнĕ еннелле çул тытрĕç. Ашса тухмалла мар юр ал-урана тăлласа ачасене турта-турта антарать. Ашшĕсĕр тăрса юлнă ачасем пĕтĕрĕнекен юр юххи ăшĕнче çухалаççĕ[16].

«Этем çулĕ — çăлтăр çулĕ, — тет Мĕтри Юман «Шевле вылять» хайлавра (1906), — этем çулĕ — кайăк хур çулĕ, вĕçĕ те çук, хĕрри те çук, йĕрĕ те çук, палли те çук»[17].

**Литература**


[1] *Ухсай Я.* Çырнисен пуххи. Пĕрремĕш том. Сăвăсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2001. 282 с.

[2] *Çеçпĕл М.* Çырнисен пуххи. Шупашкар, 1989. 200 с.

[3] Çавăнтах. 222 с.

[4] *Павлов Ф.* Çырнисен пуххи. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. 86 с.

[5] *Юман М.* Суйласа илнисем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. 71 с.

[6] *Павлов Ф.* Çырнисен пуххи. 440 с.

[7] Çавăнтах. 308 с.

[8] Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1989. 109 с.

[9] Çавăнтах. 111 с.

[10] Çавăнтах. 98 с.

[11] *Ухсай Я.* Çырнисен пуххи. Тăваттăмĕш том. Поэмăсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2003. 207 с.

[12] *Хуначи Кашкăр.* Юманпа хĕвел. Шупашкар, 1975. 60 с.

[13] *Уяр Хв.* Сăмах мехелĕ. Шупашкар, 1980. 185 с.

[14] *Лисина Е.* Çăкăр чĕлли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. 150 с.

[15] Çавăнтах.

[16] Çавăнтах. 43—44 с.

[17] *Юман М.* Суйласа илнисем. 38 с.

# ХĔРАЧА ЧЕРЧЕНĔ

## (Хыҫ сăмах вырăнне)

Епле хайлаллă ҫав ачалăх,
Илемлĕ тĕлĕк пек чипер,
Ун чух ҫăватчĕ ҫумăр чалăш,
Хыватчĕ асамат кĕпер.

*Ухсай Я. Вĕҫевҫĕ*

Ача чух пурсăмăра та пире — арҫын ачине те, хĕрачине те — тĕнчен вăрттăнĕ-илемĕ уҫăлнă пулнă. Анчах хĕрачасене, тен, ытларах та. Хĕрарăм ӳнерҫĕсен чĕрĕ пултарăвĕ шухăшлаттарать ҫапла. Талант ҫăлкуҫĕ вĕсен ытларахăшĕн — ачалăхра, пĕчĕкҫĕ хĕрача тĕнчетуйăмне чĕре ҫумĕнче упранинче.

Акă, Ева Лисинăн «Ҫĕньял ачисем» повеҫĕнчи телейлĕ кулăпа ҫутăлакан Маринешĕн «ҫăвать ҫумăр — чăш-чăш, лăс-лăс, лăстăр-лăстăр!» Ытарайми хĕрача пуканелле, шакăлла, туйла вылянинче — мĕн чул асамлăх, илем! «Ма эп арҫын ача пулса ҫуралман-ши?!» — тесе шăпана тарăхни кунта ҫук, пур «хĕрача пулма лайăх!» тесе чунтан савăнни.

Ăпăр-тапăр ĕҫ вĕҫленсен Марине теттисене туртса кăларчĕ. Мĕнле кăна тетте ҫук ун: симĕс кĕленче катăкĕсем, лапчăннă шăвăҫ курка, пĕр сĕвем пурҫăн ҫип, чĕкеҫ тăмĕнчен тунă шакă. Хĕрача хаклă мула хăй умне сарса хунăччĕ ҫеҫ — Арҫук таврăнчĕ.

— Марине, мĕшĕлтетсе ларнипе мар, кăнтăрлахи апат пĕҫерес пулать. Пыр, ҫĕр улми илсе тух. Эпĕ кăвайт татăп.

Марине симĕс кĕленче витĕр малтан хĕвел ҫине, унтан пиччĕшĕ ҫине пăхса илчĕ те кулса ячĕ.

— Халех ир-ха!

Арҫук тарӑхса кайрӗ, йӑмӑкӗн теттисене пуҫтара пуҫларӗ.
– Ан тив! Ан тив! Эп сана пӗлетӗп – эс ман теттесене вӑрласшӑн! – кӑшкӑрчӗ Марине (Ҫӑкӑр чӗлли. 1994. 155—156 с.).

«Художник тивӗҫӗ вӑл — ҫынна ачан таса куҫӗпе пӑхма вӗрентесси», — тенӗ Джон Рескин. Ева Лисина пултарӑвӗ ҫак шухӑш тӗрӗс пулнине чӑнласа ӗнентерет.

## БИОГРАФИ

Ева Николаевна Лисина 1939 çулхи утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Патăрьел районĕнчи Именкасси ялĕнче, учитель çемйинче. Ачалăхĕ Çĕньялта иртнĕ. Геннадий Айхин тăван йăмăкĕ, утмăлмĕш çулсен ачи (шестидесятник). Прозаик (7 кĕнеке авторĕ), сăвăç, куçаруçă. Мускаври Тимирязев ячĕпе хисепленекен ялхуçалăх академине пĕтернĕ. Ломоносов ячĕпе хисепленекен университетăн Ботаника садĕнче, Сеченов ячĕпе хисепленекен медицина институтĕнче бионика лабораторийĕнче ĕçленĕ. Ют çĕршыв литературин Пĕтĕм союзри библиотекинче аслă редактор, тĕп библиограф пулса 20 çул хушши вăй хунă, 1978–1983 тата 1989–1993 çулсенче Мускаври Щепкин ячĕпе хисепленекен театр училищинче пулас чăваш артисчĕсене чăваш чĕлхине тата чăвашла тĕрĕс калаçма вĕрентнĕ. Хăй вĕренекенне, Саша Яковлев артиста, вăрçă тамăкĕнчен хăтарас тесе 1995 çулта Чечняра пулнă. 1987 çулта ачасем валли кăларнă кĕнекесен Пĕтĕм Союзри конкурсĕнче «Хупах хăлха Илюк» повеçшĕн çыравçă иккĕмĕш премии илнĕ. 1991 çулта «Нимĕç хумĕ» радиостанци ирттернĕ конкурсра ун «Çăкăр чĕлли» калавĕ 1680 хайлав хушшинче çĕнтернĕ. Çав калав тăрăх çырнă радиопьесăна Германири темиçе радиокомпани эфира кăларнă. Çул çӳреме юрататъ. Турцинче, Польшăра, Германире, Швецире тата ытти çĕршывĕнче пулнă. 1995 çулччен Мускавра пурăннă, халĕ Шупашкарта пурăнатъ.

## ТУПМАЛЛИ

Çыравçă шăпи........................................................ 5
Шанчăк пуррисем — телейлĕ ............................ 5
Кам-ши вăл — тĕнче хуçи?................................ 7

Ева Лисинăн илемлĕ тĕнчин хăйне евĕрлĕхĕ........... 14

«Çĕньял ачисем» повесть поэтики.......................... 27

Тĕнче шайĕнчи Ева Лисина.................................. 42
Ĕне йĕрĕпе («Улăхпи» кĕнекери ĕне сăнарне тĕнче культура анлăшĕнче тата аваллăх тарăнăшĕнче курма пăхни)........................................................ 42
Мĕне пĕлтерет-ши шăп та шай вуникĕ сехетре куçа курăнакан ĕне? («Улăхпи» кĕнеке вăратнă шухăш-кăмăл)........................................................ 47

«Темшĕн çав тери йывăр» (Ыратăвăн тĕн-тĕшмĕш сĕмĕ)........................................................................ 55

Пурнăç хĕвĕшĕвĕ тата чун тăнăçлăхĕ....................... 58

Ачалла вылянчăк кăмăл («Пăркка мучи калавĕсенчи» шӳт пирки)............................................................ 62

«Чăваш ялĕнче çурт илесчĕ»................................... 65

Ева Лисина тата чăваш космизмĕ........................... 69

Хĕрача черченĕ (хыç сăмах вырăнне)........................ 73

Чувашский государственный институт гуманитарных наук

**ЯКОВЛЕВ Юрий Васильевич**

# ЕВА ЛИСИНА

## ПУЛТАРУ ТĔНЧИ

Художественный редактор **А.А. Трофимов**
Редактор **Т.Н. Таймасова**
Корректор **Г.И. Алимасова**
Компьютерная верстка **Н.И. Никифоровой**

Подписано в печать 24.04.2012. Гарнитура Times.
Формат 60х90 $^{1}/_{16}$. Бумага офсетная. Печать оперативная.
Усл. печ.л. __. Тираж ___ экз. Заказ №___.

Отпечатано в РИО Чувашского государственного
института гуманитарных наук
428015, г. Чебоксары, Московский пр., 29/I